


«Тăван Ен» хаçатăн калем ăстисем кĕнеке презентацийĕ хыççăн.
Автор Ф. Константинов – ĕçтешĕсен хушшинче. 2015 ç.



Редакци ĕçченĕсен çамрăк йышĕ 2016 ç,

К76.02
К65
85271-КР

Фадей Константинов

# Тăван Ен

## 85 çул халăхпа пĕрле



Хисепле Светлана
Владимировна Ивановăна автор-
тан ырă сунса асăнмалăх.
16.10-2017 Автор Ф.Константинов

К76.02 -85271-КР
К65 Константинов Ф.
„Тăван Ен"
2017г. 1=

-85271-КР

2017/67п.

К76.02
К65

Фадей Константинов

# «Тăван Ен» – 85 çул халăхпа пĕрле



КР Отдел краеведения Чебоксарского района ЧР
-85271-КР

Шупашкар - 2017

УДК 070
ББК 76.0
К 65

**Константинов Ф.** «Тăван Ен» – 85 çул халăхпа пĕрле.
Шупашкар, «Хамăн типографи» ТЯО – 2017

Паллă таврапĕлÿçĕ Ф.К.Константинов хатĕрленĕ кĕнекере - Шупашкар район хаçачĕн 85 çулхи кун-çулĕ. Кунта редакци коллективĕ пирки кăна мар, хаçатпа туслă çыравçăсем тата Кÿкеç типографийĕн ĕçченĕсем çинчен те ăшшăн çырса кăтартнă.

Кĕнеке аса илÿсемпе тата фотоÿкерчĕксемпе пуян.

© Ф.К. Константинов, 2017



# Истори пĕр йĕрсĕр иртмест...

**Шупашкар район хаçачĕ 85 çул халăхпа пĕрле пулса историн тĕрлĕ тапхăрĕ витĕр тухрĕ, кашнийĕнчех тивĕçлĕ вырăн йышăннă, район çыннисен юратнă хаçачĕ пулса тăнă.**

**Хаçат тĕрлĕ вăхăтра уйрăм ятсемпе тухнă. 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче район хаçачĕн пĕрремĕш номерĕ «Колхоçнĕк çулĕ» ятпа пичетленнĕ, 1938 çулта сентябрĕн 9-мĕшĕнчен «Ленин çулĕпе» ятпа халăх патне çитнĕ, 1963 çулхи февраль уйăхĕнчен пуçласа «Ленинец» ятпа вырăсла, чăвашла тухса тăма пуçланă. 1991 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен «Тăван Ен» ятпа пичетленнĕ.**

Район хаçатне 1932 çулта ВКП (б) Чăваш обкомĕн йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн кăларма пуçланă. Каярахпа вăл Шупашкар райкомĕпе райĕçтăвком тата райпрофсовет хаçачĕ пулса тăнă. Чи малтанах хаçат Шупашкарта пичетленнĕ, 1936 çулта Кÿкеçре ÿссе ларнă Культура çуртĕн пĕрремĕш хутĕнче типографи ĕçлесе кайсан унта кун çути курма пуçланă.

Хаçатăн пĕрремĕш номерне пичете Герман Васильевич Серебряков (Ошмань) хатĕрленĕ. Хăех материалсене пухнă. Ăна пулăшма вăл вăхăтра Шупашкар райкомĕнче культурăпа пропаганда пайĕн пуçлăхĕнче ĕçленĕ Порфирий Матвеевич Ростова янă. Çакна «Колхоçнĕк çулĕ» хаçатăн пĕрремĕш номерĕн иккĕмĕш страницинче «вăхăтлăх ответлă редактор П.М. Ростов» тесе алă пусни çирĕплетсе парать.



Порфирий Ростов

Порфирий Ростов вăхăтлăха редактор пулса пĕр-икĕ уйăх кăна вăй хурать. Кĕçех ăна район хаçачĕн тĕп редакторне çирĕплетеççĕ. Вăл çак ĕçре икĕ тапхăрпа тăрăшать: 1932-1937 тата 1941-1942 çулсенче. Хăй пултаруллă журналист пулнине кăтартать. Вăтăрмĕш çулсенче редакторта ĕçленĕ вăхăтра вăл çине тăнипе хаçат хальтерех ураланнă хуçалăхсен экономикине ÿстерсе аталантарма, социализмла ăмăртăва анлăн сарăлма пулăшать. Çавăн пекех хаçатра ял культури, вĕрентÿ, халăх сывлăхĕ, физкультурăпа спорт, оборона пирки çырнă материалсем тивĕçлĕ вырăн тупаççĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн вăтăрмĕш çулĕсем пирĕн çĕршывра пăтранчăклă пулнă, уйрăмах 1937 çула йывăррăн аса илеççĕ. Çав çул ахаль çынсене, уйрăмах пуçлăхсене, ним айăпсăр репрессиленĕ. Çакăн пек лару-тăрăва Порфирий Ростов та суя элеке пула лекет. Ăна хаçат ĕçĕнчен хăтараççĕ, каярахпа ВКП (б) Шупашкар райкомĕн бюро тата ытти явапла общество организацисен членĕн йышĕнчен кăлараççĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн П.М. Ростована ырă ятне таварăççĕ, тĕрĕслев унăн айăпĕ çуккине кăтартса парать. 1941 çулта каллех район хаçачĕн редакторне çирĕплетеççĕ. 1942 çулта фронта тухса каять, тепĕр çулталăкран хаяр çапăçура вилмеллех аманать.

1937-1940 çулсенче редактор ĕçне Н.Ф. Виноградов, П.И. Иванов, П.В. Шиманов, Ф.А. Александров, М.Т. Спиранский тапхăршар пурнăçланă.

Район хаçачĕ «Колхозник çулĕ» ятпа ултă çул икĕ страницăпа тухса тăнă. Вăл 1932 çулхи ноябрь уйăхĕччен пилĕк кунра пĕрре вулакан патне çитнĕ, унтан вара 1934 çулхи январĕн 8-мĕшĕччен ултă кунта пĕрре халăх хушшинче саланнă. Январĕн 8-мĕшĕнчен виçĕ кунра пĕрре тухма пуçланă.

Герман Васильевич Серебряков (Ошмань) çинчен 2014 çулта «Тăван Енĕн» штатра тăман корреспонденчĕ В.С. Синельников интереслĕ статья çырнă. Сире те, вулаканăмăрсем, паллаштарасшăн.

# Ентешĕн ырă ячĕ

***Кĕске те пархатарлă пурнăç пирки çырса кăтартас шухăш алла ручка тытма хистерĕ. Пĕр-пĕр çын 70-80 çул пурăнсан та ĕçĕпе хисеп çĕнсе илмест. Тепри вара кĕске пурнăçĕнчех палăрмаллах йĕр хăварма пултарать.***



**Герман Серебряков**

*Кăçал асăну кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Герман Васильевич Серебряков çуралнăранпа çĕр çул çитнине асăнса çырать автор унта. Унăн ывăлĕ Александр Германович паянхи кун Мускавра пурăнать. Çемйипе час-часах Чăваш Ене килсе каять.*

*Герман Васильевичăн ултă ывăл пулнă: Кима, Юра, Саша, Дима, Анатолий, Слава. Хăй вăхăтĕнче Герман Васильевич халăх поэчĕ, учитель, публицист, просветитель, çынсен йышĕнче хут пĕлменлĕхе пĕтерес тĕллевпе, пĕрремĕш редактор пулса «Колхозник çулĕ» ячĕпе тухакан хаçат кăларнă çĕрте вăй хунă.*

*Вăл 1914 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче çуралнăскер 1953 çулхи майăн 13-мĕшĕнче йывăр чире пула çут тĕнчерен уйрăлса каять. Мăшăрĕ Парасковия Осиповна ачисемпе пĕччен тăрса юлать.*

*Вăл Ишлей районне кĕнĕ Шуркасси ялĕнче çуралнă. Çемье чухăн пурăннă. Çĕр ĕçĕпе тăрмашнă. 1930 çулта колхоза кĕнĕ. 1929-1939 çулсенче комсомол ретĕнче пулнă. Профсоюз членĕ те шутланнă. 1941-1945 çулсенче «Победа»*

*колхоз счетоводĕнче ĕçленĕ. 1945-1948 çулсенче вăл «20 лет Чувашии» колхозра – ревизор, кăшт каярах счетовод пулса тăрăшнă. 1932-1933 çулсенче Кӳкеçри редакцире «Путь колхозника» хаçатăн секретарĕнче вăй хунă. Кун хыççăн вăл тĕрлĕ ялта, сăмахран, Чаканарта учитель ĕçĕсене туса пынă. 1938-1941 çулсенче Энтимĕркассипе Чăрăшкассинчи пуçламăш шкулсенче учительте ĕçленĕ. Хăй вăхăтĕнче хут пĕлменлĕхе пĕтерес енĕпе йĕркеленĕ курса вĕçленĕ хыççăн та каярах çак енĕпех вăй хурать...*

*Йывăрлăха пăхмасăр, ырă пуласлăха шанса сăвăсем те çырать вăл.*

*Çынсене пĕлсе тăма «Колхозник сулĕ» хаçатра чылай статья пичетлесе кăларать. 1932 çулхи декрет хресченсене йывăрлăха кĕртсе ӳкерет. Сăмахран, 2 кг тырăшăн е çăнăхшăн (вăрланăшăн) 10 çула хупнă, çав шутрах 10 пучах тырăшăн çичĕ е вунă çула ирĕклĕхсĕр хăварнă.*

*Герман Васильевич «20 лет Чувашии» колхозра счетовод ĕçне туса пынисĕр пуçне колхозниксене чылай пулăшнă. Вăл вăхăтри председательсем Корнил Алферов, Матвей Соловьев унăн ĕçĕне кăмăллă юлнă. Унăн «За доблестный труд в Отечественной войне 1941-1945 гг.» медаль те пур.*

*2014 çулхи сентябрĕн 13-мĕшĕнче Ишекри масарти унăн вил тăпри çине палăк вырнаçтарчĕç. Ывăлĕсем çемйисемпе, тăванĕсем, ял-йыш ăна хисеп турĕç. Унтан пурте Чаканар ялĕнче пухăнса унăн пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе çыхăннă конференцие ирттерчĕç. Унăн çутă сăнарĕ ял-йыш асĕнче яланах упранĕ.*

***ВАЛЕНТИН СИНЕЛЬНИКОВ, ЧĂРĂШКАССИ***

Г. Серебряков хаçатра активлă пичетленнĕ. Вăл хăйĕн пĕр статйинче çапларах çырса кăтартнă: «Хаçат манăн политикăлла пурнăçа нихăçан çухалмилле тарăн йĕр хăварчĕ. Хаçата çырма тытăнсан хамăн шухăшсене пĕтĕмлетме, сăмах запасне пуянлатма тата пуплев формине илемлетме вĕренсе пытăм. Хаçат мана ĕçре нумай пулăшрĕ. Вăл тухса тăнă малтанхи çулта ВКП (б) Шупашкар райкомĕн контроль комиссийĕнче, унтан райком комитетĕнче ĕçлерĕм. Вăл мана кулленхи пурнăçра ялан хавхалантарса пынă».

85 çул ĕлĕкрех тухнă хаçата тишкерер-ха. Хаçатăн пĕрремĕш страницинче тыр-пула пĕр тăкаксăр пухса кĕртме чĕнсе калакан висĕ пысăк статья вырнаçтарнă: «Районти пур колхоз правленисене ĕхи ушкăнĕсене», «Тыр-пула пухса кĕртес ĕçре ВКП (б) тĕпкомĕпе халăх контроль комиссийĕ йышăннине тĕп никĕсе», «Алĕн колхоз колхозникĕсем уйри тыр-пула ударлă пухса кĕртесси пирки, районти мĕн пур колхозниксемпе чухăнпа вăтам хресченсене социализмла ăмăртăва чĕнеççĕ». Çак страницăрах тата икĕ пĕчĕк материал вырнаçтарнă.

Иккĕмĕш страницăра 9 материал пичетленĕ. Чи пысăк материалсенчен пĕри – «Пилĕкçулăхăн – 4-мĕш çулăн заемĕ» ятлă статья. Çак статьяра районта çак заема сарас ĕç вырăнсенче мĕнле пулса пынине тишкернĕ. Заема сарассине хак панисене Хĕрлĕ хăма çине, заема сарассине хак паманнисене Хура хăма çине кĕртнĕ. Тĕлĕнмелле те, хаçатăн çак страницине критикăлла висĕ материал вырнаçтарнă: «Кӳкеç колхоз пасарĕ пирки пĕр-икĕ сăмах», «Утă пăхса кĕртесси срокĕ иртрĕ», «Сталин колхозăн Алин колхоз пек ĕçлемелле».



КОЛХОÇНЕК ÇУЛĔ

(ПУТЬ КОЛХОЗНИКА)

1 № 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕ, йункун. 1 №

Уйри тырпула пољшевикла хастарлăхпа хатĕрленсе, мĕнпур вăйа уйа куçарар.

Районри пур колхос правленисене тата колхоссенђи ĔХИ ушкăнĕсене

7 колхос уйра ĕçлет

Çилос кампанине хатĕрленне вăхăт

Хаçатăн чи пĕрремĕш номерĕ, июлĕн 27-мĕшĕ, 1932 ç

Районта заем сарасси мĕнле пулса пынине кăтартса паракан материалсене тăтăшах (заем тухма пăрахичченех) район хаçатĕнче пичетленĕ. Акă, тĕслĕхрен, 1939 çулхи августăн 9-мĕшĕнчи «Ленин çулĕпе» хаçатăн пĕрремĕш страницине «Çĕнĕ заема пурте çырăнса СССР вăй-хăватне вăйлатăр» девизпа пĕтĕмпех районта заем çырăнас ĕçсем мĕнле пулса пынине кăтартса паракан материалсемпе тултарнă.

Хаçат тухма пуçланă вăхăт пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем йĕркеленнĕ тапхăрпа тӳр килнĕ. Самана таппине çивĕч туйса хаçат çав пурнăçа тĕрĕс, уççăн çутатма тăрăшнă, пурнăç çĕнĕлле улшăннине витĕмлĕн сăнланă. Çав çулсенче чухăн тата вăтам хресченсене колхозсене кĕртесси çинчен уйрăмах анлăн çутатса тăнă. Тĕслĕхрен, район хаçачĕн 1933 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче пичетленнĕ номерĕнче съезд ĕçне сӳтсе явнă хыççăн «Кĕчĕç» статьяра çапларах çырнă: «Алькешри Чăваш тĕпĕçтавкомĕ ячĕпе хисепленекен колхозра республикăри колхозник-ударниксен съезчĕн решенийĕсене анлă сарса пыратпăр. Ăнлантару ĕçне вирлĕн туса пынине пула тӳрĕ ĕçлесе пыракан 12 хуçалăха колхоза илтĕмĕр. Тӳрĕ ĕçлесе пыман 3 хуçалăх та колхоза кĕме заявлени панă. Вĕсене те колхоза илтĕмĕр. Пирĕн Алькеш ялĕ 75 процент колхозланнă». Хаçат страницисенче ял хуçалăх культурисене вăхăтра акса хăварас, пулса çитсен пĕр тăкаксăр, вăхăтра пухса кĕртессипе çыхăннă, социализмла ăмăртăва кăтартса паракан материалсем пичетленнĕ. Хаçатăн 1934 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнчи номерĕнче утă çулас ĕçсем пирки тата уйри тыр-пула пĕр тăкаксăр пухса кĕртес ыйтусемпе çакăн пек агитациллĕ материалсем вырнаçтарнă. Анчах та хаçат ял хуçалăх темипе кăна çырлахман. Вĕрентӳ системинчи çĕнĕлĕхсем, культура, сывлăх сыхлавĕнчи лару-тăру, спорт аталанăвĕ, радио епле калаçни çинчен материалсем пичетленсех тăнă. Районти учрежденисен ĕçĕ-хĕлне çутатассине те манман. Çавăн пекех районти парторганизаци тасатăвăм комиссийĕн ĕçĕсем тата унăн решенийĕсем çинчен те хаçатра çутатсах тăнă. Çавăн пекех районти ырă пулăмсем çинчен çырнисĕр пуçне хаçатра критикăллă материалсем пичетленсех тăнă. Ун пек материалсем валли 1934 çулта «Шăйăрчăксемпе тумхахсем» ятпа ятарлă рубрика йĕркеленĕ.

«Ленин çулĕпе» хаçат 1940 çулхи январь уйăхĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа тăватă полосапа малтанхи пекех виçĕ кунта пĕрре тухса тăнă. Çав çулхине район аталанăвĕн тĕрлĕ енне çутатса панипе пĕрлех хаçатра Финн кампанийĕ, Балтика тăрăхĕнче тин çеç йĕркеленнĕ Литва, Латви, Эстони, Молдави социализмла республикăсем çинчен çырнă материалсене те пичетленĕ.



Августăн 9-мĕшĕ, 1938 ç

Районти ĕç çыннисен мирлĕ пурнăçне 1941 çулхи июнь уйăхĕнче пуçланнă вăрçă татнă. «Ленин çулĕпе» хаçатăн ĕçĕ-хĕлĕнче пысăк улшăнусем унăн малтанхи кунĕсенчех пулса иртнĕ. Хаçат редколлегийĕн унăн содержанине чылаях улăштарма тивнĕ. 1941-1945 çулсенче тухса тăнă номерсенче совет халăхĕн, район çыннисен фронтри тата тылри паттăрлăхне анлăн çутатнă. Статьясем «Пĕтĕмпех фронт валли, пĕтĕмпех çĕнтерӳ тума» рубрикăпа тухса тăнă: «Тăван çĕршыв çине тапăннă ылханлă фашизма вилĕм!», «Тăван çĕршыва паттăрăн хӳтĕлетĕп!», «Пĕтĕм вăя хурса фашизма хирĕç кĕрешер!». Çак чĕнӳсемпе пичетленнĕ материалсем Шупашкар район хаçачĕн страницисенче тĕп вырăн йышăннă.

Вăрçă çулĕсенче тылра та çăмăлах пулман. Вăрçă вăхăтĕнчи тылри пурнăçа сăнласа парас тĕлĕшпе «Ленин çулĕпе» хаçатра ятарласа «Тылра та фронтри пекех» рубрика йĕркеленĕ. Унта районта пурăнакан колхозниксемпе рабочисем, служащисем хаяр тăшмана çапса аркатас тĕлĕшпе туса ирттерекен ĕçсем çинчен çырса кăтартнă. Вăрçă çулĕсенче тылра та тĕп вăй хĕрарăмсемпе ватăсенче, ачасенче пулнă. Çĕнтерĕве çывхартас тесе вĕсем çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлени çинчен статьясем пичетленсех тăнă.

Вăрçă çулĕсенче акман, усă курман çĕрсем пулман. Вăрçă вăхăтĕнчи нушаллă, тертлĕ, йывăр пурнăçа çак йĕркесен авторне те пĕлме пӳрнĕ. Вăрçă пуçланнă çул вăл 12 çулта пулнă. Çавăнпа та вăл вăрçă вăхăтĕнчи пурнăç пирки илтнĕ тăрăх кăна мар аван пĕлет.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенченех ха-



Вăрçă тухас умĕнхи черетлĕ номер, июнĕн 15-мĕшĕ, 1941 ç

çатра «Хĕрлĕ çар боецĕсем валли ăшă тумтир» ятпа тепĕр рубрика йĕркеленет. Унта район çыннисем миçе мăшăр çăматă, нуски-чăлха, алсиш пуçтарса пани, фронт валли укçа-тенкĕ, тыр-пул хывни, «Комсомол Чувашии» бронепоезд, «Пионер Чувашии» танк колонни валли укçа пухни çинчен пĕлтернĕ.

Хаçат фронтпа та тачă çыхăну тытнă. Паттăр ентешсем çинчен материалсем тăтăшах пичетлесе кăларнă. Чăваш çыравçисен хайлавĕсем унта час-часах кун çути курнă. Вĕсенче хăйсен сăввисемпе урнă фашиста вирлĕн питленĕ, кĕрешĕве чĕннĕ. Хаçатра çавăн пекех кĕскен те пулин фронтри хыпарсене пĕлтерсех тăнă. «Ленин çулĕпе» хаçат пĕтĕм халăхпа пĕрле тăшманпа кĕрешнĕ, унра патриотизм туйăмне çуратнă.

Хаçатăн вăрçă тапхăрĕнчи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен татах та анлăрах çырса кăтартма май килмерĕ, мĕншĕн тесен хаçатăн 1941-1947 çулсенче пичетленĕ номерĕсене Кӳкеçри архива упранма хуман.

Вăрçă умĕн тата ун вăхăтĕнче редакторта 1940-1941 çулсенче Леонтий Семенович Семенов, 1942 çулта (нумай хушă мар) Павел Трифонович Трифонов, 1942-1944 çулсенче Яков Никитич Никитин, 1944-1947 çулсенче Григорий Петрович Петров ĕçленĕ. Вĕсем парти шанăçне тивĕçлипех пурнăçласа район пичечĕ самана утăмĕпе пытăр тесе хăйсен вăй-хăватне, ăс-тăнне парса вăй хунă.

Вăрçă чарăннине пĕлтерекен хыпар «Ленин çулĕпе» хаçатра 1945 çулхи май уйăхĕн 10-мĕшĕнче пичетленнĕ. Çак хыпара Шупашкар районĕнче пурăнакансем ăшшăн кĕтсе илнĕ. Çак вăхăтран хаçатри тематикăна тата унăн содержанине чылаях улăштарма тивет. Малтанлăха хаçат страницисенче вăрçă вăхăтĕнче япăхса кайнă хуçалăхсене юсаса çĕнетес тĕлĕшпе активлă ĕçлеме чĕнсе калакан статьясем пичетленнĕ. Каярахпа та çак темăна хуçалăхсене ура çине тăратассишĕн, ăна малалла аталантарассишĕн, пилĕкçулăх плансене пурнăçа кĕртессишĕн, номертен номĕре тăтăшах çутатса тăнă. Тĕш тырă, аш-какай, сĕт туса илессине вăрçă умĕнхи шая çитересси колхозсен тĕп тĕллевĕ пулни пирки аса илтерсе хаçат страницисенче статьясем пичетленнĕ.

Вăрçă чарăннă кунтан пуçласа арçынсем майĕпен тăван тăрăха таврăннă. Çакăн пек лайăх хыпарсене те хаçат урлă пĕлтерсех тăнă. Яланхиллех хаçат страницисенче район пурнăçĕн – ял хуçалăх, культурăпа спорт, сывлăх, районти партипе комсомол организацийĕсен, ял совет ĕçтăвкомĕн ĕçĕ-хĕлне çутатнă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче колхозсен хăйсен хуçалăхне çĕклес тата аталантарас енĕпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле пулнă, çапах вĕсем çĕнĕрен çул-йĕр тăвас, Сталинград хулине юсаса çĕнетме те строймАтериал хатĕрлес тĕлĕшпе те ĕçленĕ. Çав çулсенче Шупашкар районĕнчи колхозниксем «Шупашкар-Вăрнар» çула çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе вăй хунă. Хаçатăн кашни номе-


ЛЕНИНЕЦ

НИКАМ АРКАТАЙМИ ВĂЙЛĂ ÇАР



Февралĕн 23-мĕшĕ, 1964 ç



рĕнче тенĕ пекех (хĕл кунĕсенче) районти колхозсем вăрман касса хатĕрлес ĕçе, çу кунĕсенче çул сарас заданисене мĕнле пурнăçланине пĕлтернĕ. Тĕслĕхрен, 1948 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче тухнă номерти «Вăрман хатĕрлесси – парторганизацисен ответлă ĕçĕ» статьяра районти колхозсенчи парторганизацисем вăрман касса хатĕрлес ĕçе епле ертсе пынине тишкернĕ.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче тĕрлĕ шайри советсен тытăмĕнче суйлавсем иртнине «Ленин çулĕпе» хаçат районта пурăнакансене пĕлтерсех тăнă. Районта пулса иртекен пысăк мар пулăма та ятарласа йĕркеленĕ «Хамăр район тăрăх» рубрикăра çырса кăтартнă.


ЛЕНИНЕЦ

ÇĔНĔ ÇИТЕНӲÇЕМ ПАТНЕ

Февралĕн 24-мĕшĕ, 1963 ç

1950 çулта район хаçачĕн ĕçĕнче çĕнĕлĕх çуралать. Çав çулхи июнĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа районта ĕçлесе пурăнакансен сăн ӳкерчĕкĕсене хаçатра вырнаçтарма тытăнаççĕ. Унччен хаçат страницисенче ТАСС сăн ӳкерчĕкĕсене кăна вырнаçтарнă. Çав номерте «Шеф НКЗ» (Народный комиссариат земледелия) колхозăн аслă конюхĕн И. Осиповăн, июнĕн 15-мĕшĕнче Апашри «Урожай» колхозăн аслă конюхĕн Е. Степановăн, июнĕн 24-мĕшĕнче «Туçи» колхозри фермăсен заведующийĕн Н. Григорьевăн сăн ӳкерчĕкĕсене вырнаçтарнă.

1945-1950 çулсенче хаçатра вăрçă хыççăнхи халăх хуçалăхне ура çине тăратса малалла аталантарассине уйрăмах çивĕч тĕллев вырăнне лартнă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче те колхозсем, промышленноç предприятийĕсем малалла аталансах пынине çирĕплетекен материалсем хаçатра пичетленсех тăнă. Район машина-трактор, комбайн тата ытти ял хуçалăх техники тĕлĕшпе пуянлансах пыни пирки мăнаçлăх туйăмĕпе пĕлтернĕ, ку материалсем те хаçат страницисенче тивĕçлĕ вырăн тупнă. Ялсене радио кĕртес, электрификацилес ĕçсем мĕнле пурнăçланса пыни пирки халăха «Ленин çулĕпе» страницисем урлă пĕлтерсех тăнă. Акă, 1955 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти ялсен 22 проценчĕ радиовещанилле пулнă, 1957 çулта Шупашкар хулинчен район территорине газ пăрăхĕсем хурса çитерес ĕçсем пуçланнă, 1958 çул тĕлне электричество лампочкисем 13 колхозра çунма пуçланă. Паллах ĕнтĕ, вĕрентӳ, сывлăх, культура, спорт, суту-илӳ тата ытти экономика çитĕнĕвĕсем çинчен асăнмасăр пĕр номер те тухман.

1959 çул Шупашкар районĕшĕн паллă çул пулса юлнă. Çав çул Ишлей районне Шупашкар районĕпе пĕрлештернĕ. Ишлей районĕнче «Колхозник хаçачĕ» ятпа тухса тăнă хаçат ӳлĕмрен пичетленме пăрахать. Малтанхи Ишлей районĕн çыннисем «Ленин çу-



Атăл хумĕсем

Писатель-журналист



ЛЕНИНЕЦ

Ятман якурĕн ятлавĕ

Упăшка тракторист пулсан...

АРÇУ



Хисеп хами

Хаçатра çырнă хыççăн



Вĕрентекен тата вĕренекен

Чăваш чĕлхи—атте-анне чĕлхи

Унăн тасалăхĕшĕн

лĕпе» хаçата илсе тăма пуçлаççĕ. Çав вăхăтра райком бюровĕ район хаçачĕн редакторĕ пулма В.П. Петрова çирĕплетнĕ. Вăл унччен КПСС Шупашкар райкомĕн иккĕмĕш секретарĕнче вăй хунă.

Шупашкар тата Çĕрпӳ районĕсен «Путь Октября» пĕрлехи хаçачĕ тухма пуçласан 1962 çулхи май уйăхĕнче «Ленин çулĕпе» хаçат тухма пăрахать. Анчах та ку пичет кăларăмĕн ĕмĕрĕ вăраха пымасть. 1963 çулхи февраль уйăхĕнче Шупашкар, Муркаш, Сĕнтĕрвăрри районĕсене пĕрлештерсе колхоз-совхоз производство управленине туса хурсан «Ленинец» хаçат тăватă полосапа эрнере виçĕ кунта пĕрре вырăсла, чăвашла статьясемпе тухма пуçлать. Производство управленийĕ унăн учредителĕ пулса тăрать. Хаçат редакторĕ пулма çакăнта 1940 çулта ĕçленĕ Т.Л. Логинова çирĕплетеççĕ. Статьясемпе пĕрлех вăл фельетонсем те пичетленĕ. Тĕслĕхрен, 1940 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕнчи номерти литература страницинче унăн «Тумхахсем» ятлă фельетонĕ пичетленсе тухнă.

Çак çĕнĕ орган ял хуçалăхне аталантарма кирлĕ чухлĕ пулăшу кӳменнине шута илсе колхозпа совхоз производство управленийĕсене пĕтереççĕ. «Ленинец» КПСС Шупашкар райкомĕпе халăх депутачĕсен район совечĕн хаçачĕ пулса тăрать.

60-мĕш çулсенче Шупашкар районĕ пур енĕпе те республикăра ăнăçлă аталанакан районсен йышне кĕрет. Районта çĕнĕ предприятисем ĕçе кĕме тытăнаççĕ. Пур сферăра та ырă енлĕ улшăнусем палăраççĕ, ĕç самай лайăхланса пырать. Район центрĕнче, ялсенче çĕнĕ çуртсем çĕкленеççĕ. Ял хуçалăх аталанăвĕ те пĕр тикĕссĕн пырать. Колхозсемпе совхозсем уй-хиртен, выльăх-чĕрлĕхрен илекен продукци калăпăшĕ ӳсет. Хуçалăхсенче выльăх-чĕрлĕх фермисем, мастерскойсем, тырă склачĕсем, клубсен çĕнĕ çурчĕсем хута каяççĕ. Çав çулсем районта шăваракан çĕрсен лаптăкне ӳстернипе палăрса юлнă. Тĕслĕхрен, 1967 çулта колхозсемпе совхозсем шăвармалли 10 техника хатĕрĕ туяннă.

1960 çулсем пĕчĕк колхозсене пĕрлештерсе совхозсем туса хунипе те палăрнă. 1965 çулта «Большевик» (пĕрлештернĕ «Коммунизм», «Правда», «Большевик» колхозсем), Кадыков ячĕпе хисепленекен («Родина», Кадыков ячĕпе хисепленекен колхозсем), 1968 çулта «Ишлейский откормсовхоз» («Путь Ильича», Киров ячĕпе хисепленекен, Энгельс ячĕпе хисепленекен колхозсем), 1969 çулта 50 лет СССР («Ленинец», XI лет Чувашии», «Волга» колхозсем), «Слава»



(«Слава», «Урожай», Ульянов ячĕпе хисепленекен колхозсем) совхозсем йĕркеленнĕ. Çĕршыври, район историйĕнчи тĕрлĕ пулăмсем, унăн аталанăвĕ, çынсен пултарулăхĕ çинчен йăлтах ĕлĕкхи хаçат страницисенчен вуласа пĕлме пулать. Шел, паянхи кун вĕсем архивра кăна упранса юлнă.

Район 70-мĕш тата 80-мĕш çулсенче умри тăракан тĕллевсене, партипе правительство тăратнă пилĕкçуллăх планĕсемпе заданийĕсене, предприятисем хăйсем çине йышăннă обязательствăсене еплерех пурнăçланине район хаçачĕн страницисенчен пĕлме пулать. Çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тунипе район Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртăва хутшăнса 70-мĕш çулсенче виçĕ хутчен (1974, 1975, 1977 çç.), 80-мĕш çулсенче каллех çакăн чухлех (1982, 1984, 1985 çç.) ЦК КПССăн СССР министрсен Совечĕн, ВЦСПС-ăн, ЦК ВЛКСМăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсене тивĕçнине те архиври сарăхнă хаçат номерĕсенчен вуласа пĕлме май пур. Çав çулсенче тĕрлĕ тытăмри органсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне районти уйрăмах пысăк çитĕнӳ тунă ял хуçалăх предприятийĕсем те тивĕçнĕ. Вĕсен йышне «Прогресс», «За коммунизм», Ленин ячĕпе хисепленекен колхозсем, «Приволжское» учхоз, «Сад» фирма, «Чебоксарская» чăх-чĕп фабрики, «XXV съезд КПСС», «50 лет СССР» совхозсем кĕнĕ. Хаçат страницисенче çак истори пĕтĕмпех çырăнса юлнă.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн указĕпе килĕшӳллĕн, иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенчи çитĕнӳсемшĕн 200 орденпа медаль хуçисене тупнă. 268 ял хуçалăх ĕçченĕ «Ударник 9-ой пятилетки» палла тивĕçнĕ. 80-мĕш çулсенче çак паллă хуçисем 93 пулнă, 171 çĕнтерӳçе «Ударники 11-й пятилетки» паллăпа наградăланă. Хаçатра тăрăшуллă, ĕçчен çынсен чыславĕ çинчен, саманара пулса иртекен тĕрлĕ улшăну пирки çырнă материалсем кашни номертех тĕп вырăнта пулнă. Ку вăхăтра хаçат эрнере икĕ хут тăватшар полосапа 8500 тиражпа тухса тăнă.

1969 çулхи декабрь уйăхĕнче Т.Л. Логинов редактор тивĕçлĕ канăва тухать. Ун хыççăн 1970 çулхи апрель уйăхĕчен редактор лавне Г.С. Мальцев туртма пуçлать. Апрель уйăхĕнчен ун вырăнне А.И. Михайлова çирĕплетеççĕ. Вăл ĕçленĕ хушăра пурнăçра тĕл пулакан çитменлĕхсемпе, пăтăрмахсемпе, дисциплинăна пăсакансемпе çивĕч кĕрешме ятарласа «Ятман Якурĕ ятранах ятлать» сатирăллă рубрика йĕркеленет.

1991 çулта çĕршыври улшăнусем хыççăн хаçат ятне улăштарас сĕнӳсем пулаççĕ. Ята улăштарасси хаçат

страницисенчи дискуссирен пуçланать. Дискуссире тĕрлĕ сĕнӳ те пулать, анчах та ытларахăшĕ Тăрăнта пурăнакан А.З. Ефимова ялкор (вăл паянхи кун та хаçата статьясемпе тивĕçтерет) сĕннĕ «Тăванъен» ята ырлаççĕ. Ку ыйтăва ĕçтăвкомĕн анлă ларăвĕнче сӳтсе явнă хыççăн 1991 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа паянхи кунччен «Тăван Ен» ятпа тухса тăрать. Шел те, хаçат тиражĕ çĕршыври йывăр экономика лару-тăрăвне пула çак тапхăрта чаксах пырать.

2000 çулта хаçата электрон майпа калăплама пуçласан, тиражĕ пысăк мар пулсан та, эрнере икĕ хут - юн кун – 4 страницăпа, шăматкун – 8 страницăпа тухса тăрать. Шăматкунхи кăларăмра телекурав программи тата вырăсла страницăсем те вырăн тупаççĕ.

2010 çулта «Тăван Ен» хаçат историйĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Чи пĕрремĕш номертен пуçласа вăл «толстушка» пек тухма пуçлать, тепĕр майлă каласан – эрнере пĕрре, 12 страницăпа пичетленет. Унсăр пуçне малтан «Кугеси плюс», каярахпа «Причебоксарье» ятсемпе район хаçачĕ çумĕнче вырăсла вулакансене валли уйрăм хаçат тухма пуçлать.


ТĂВАНЪЕН
Шупашкар район хаçачĕ
«Ленинец» мар—«Тăванъен»
Пуласлăх пирки

Октябрĕн 1-мĕшĕ, 1991 ç

Çак пуçарусене вăл вăхăтра редакторта ĕçленĕ Б.Б. Чиндыков йĕркеленĕ. Анчах та икĕ хаçата туртса пыма редакцине йывăртарах пулнипе 2012 çулта икĕ хаçата пĕрлештереççĕ. «Тăван Ен» 16 страницăпа тухса тăма пуçлать. Паянхи кун та вĕсен шутне тытса тăма май шырать.





# Кӳкеç типографийĕ – район хаçачĕн тĕрекĕ

**«Тăван Ен» хаçатăн 85 çуллă историйĕнче хăй вăхăтĕнче Кӳкеçре вырнаçнă типографи пысăк вырăн йышăннă. Вăл район хаçачĕн тĕрекĕ пулнă.**

Шупашкар районĕ 1927 çулта йĕркеленнĕ, анчах унăн хаçачĕ тӳрех тухма пуçламан-ха. Район хаçачĕ 1932 çулта «Колхоçнĕк çулĕ» ятпа пичетленме тытăннă – анчах та Кӳкеçре мар. 1936 çулччен ăна Шупашкарти ОГПУ-н, каярахпа облаçри «Осоавиахим» комитечĕн типографийĕнче пичетленĕ. 1936 çулхи декабрь уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа тин район хаçатне Кӳкеçре пичетлеме пуçланă. Типографи вăл вăхăтра Кӳкеçри икĕ хутлă йывăç çуртра, культура çурчĕн пĕрремĕш хутĕнче вырнаçнă. Типографире ун чухне тăваттăн ĕçленĕ. Икĕ наборщик, наладчик тата линовар. Пĕтĕм ĕçе ал вĕççĕн пурнăçланă. Типографи ĕçне редактор ертсе пынă. Аслă наборщик унăн пулăшаканĕ тата заказсене йышăнаканĕ пулнă.

Çав вăхăтра района ертсе пыракан органсенче ĕçлекенсем енчен те хаçата пахалăхлă кăларас тесен хăватлăрах типографи кирлине лайăх ăнланнă. Çĕнĕ типографи çурчĕн проектне хатĕрлеме 1938 çулта йышăну тунă. Кивçурткассинче çуралса ӳснĕ ВЛКСМ членне, тин çеç çартан таврăннă И.В. Сидорова типографи директорне çирĕплетнĕ. Унăн тивĕçе заказчикрен пуçăнмалла пулнă.

Анчах та 1939 çулта та, ун хыççăнхи тепĕр çул та типографи çуртне тăвас ĕç вырăнтан хускалайман. 1941 çулта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансассăн çакăн пирки чылайлăха манма тивнĕ. Строительство ĕçĕсене вăрçă чарăннă хыççăн вунă çултан,1955 çулта тин пуçăннă. 1956 çул вĕçнелле типографин икĕ хутлă çуртне хăпартса


Кӳкеçри культура çурчĕ, Советская урам. Пĕрремĕш хутра – типографи

лартнă. Пĕрремĕш хута кивĕ станоксем вырнаçтарма тивнĕ, каярахпа вĕсене ерипен çĕннисемпе улăштарса пынă.

1936-1941 çулсенче типографи ĕçне мастер йĕркелесе пынă, 1941-1962 – çулсенче ку ĕçе редактор. Полиграфи производствине мастер ертсе пынă. 1962-1968 çулсенче çак тивĕçе ятарласа уйăрса лартнă директор пурнăçланă.

1956 çулта типографин икĕ хутлă çуртне хăпартса лартнипех ĕç вĕçленмен-ха. Унăн аялти хутне ĕçе кĕртнĕ, анчах та иккĕмĕш хутĕнче ăна пусăнман та пулнă. 1968 çулччен А.И. Краснов, А.Г. Иванов, П.В. Ермаков директорта вăй хунă. П.В. Ермаков иккĕмĕш хутри ĕçсене вĕçлесе унта типографи оборудованине вырнаçтарас тĕлĕшпе нумай çине тăнă

Типографи ĕçлемен вăхăтсем те пулнă: рабочисене административлă отпуска янă, хаçата (ун чухне вăл «Ленинец» ятпа тухса тăнă) Çĕрпӳри типографире пичетленĕ.

1968 çулхи майăн 1-мĕшĕнче типографи çĕнĕрен ĕçе кĕнĕ, «Ленинецăн» уява халалланă номерне Кӳкеçре пичетленĕ, заказсем те йышăнма пуçланă. Çакăн пек лару-тăрура директор пулма ку вăхăтра Л.А. Алексеева шаннă. Вăл ку тивĕçре 1997 çулччен ĕçленĕ. Çак хушăра вăл типографи ĕçĕнче чылай çĕнĕлĕх кĕртнĕ. Ĕçлеме пуçласанах, 1968 çулта, типографи вăйĕпе çĕнĕ котельнăй хута янă. Вăл йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комбината, юнашар вырнаçнăскере, тата ял хуçалăх управлени çуртне ăшăпа тивĕçтерме тытăннă. Çав çулах пичетпе полиграфи управленийĕн приказĕпе килĕшӳллĕн Кӳкеç типографийĕнче пичет-штамп хатĕрлекен цех йĕркеленет. Ун пекки республикипе те пĕрре кăна пулнă. Кивĕ оборудование çĕннипе улăштарасси



**Г. Пономаренко (Иванова) хаçат калăплать, 1988 ç.**

те тивĕçлĕ шайра пулса пыма тытăнать. Продукци туса кăларасси ӳсет, ăна вырнаçтарасси те лайăхланать. Производство калăпăшĕ анлăланать.

Типографи коллективĕ куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава пĕрре кăна мар тивĕçет. Ăнăçусем рабочисен коллективĕн тăрăшулăхне кура вăрах кĕттерменнине палăртмалла. Типографире ĕçе чунтан парăннă çынсем ĕçленĕ. Вĕсене ятранах асăнас килет: Н. Васильевăпа А. Порфирьева верстальщиксем, С. Пагеева, Е. Прокопьева, Г. Илларионова, З. Яштайкина наборщиксем; Л. Иванова, Р. Васильева, З. Гаврилова печатниксем; А. Свинцова хут касакан. Вĕсем пурте 30-40 çул ĕçлесе «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ. Полиграфист-ветерансенчен тĕслĕх илсе училище хыççăн типографие килнĕ Г. Иванова (Пономаренко), М. Константинова, Л. Андриянова, В. Шорникова наборщиксем, Г. Андрияновăпа В. Ко-



**Кӳкеç типографийĕн тата редакци коллективĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсем**

роткова линотипистсем, М. Ивановăпа А. Александрова аван ĕçленипе палăрнă. В. Волкова, А. Григорьева, Б. Васильев печатниксем, Л. Михайлова, Л. Николаева наборщицăсем, В. Миронова хут касакан, С. Егорова пичет-штамп тăвакан, Р. Андреева, Г. Герасимова, В. Владимирова переплетчиксем типографире нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе ертӳçĕ шанăçне тӳрре кăларнă.

30 çула яхăн типографи ертӳçинче ĕçленĕ Л.А. Алексеев район пичечĕн историйĕнче çав тери тарăн йĕр хăварнă. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн ăна «Чăваш АССР промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă. В.И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа кăларнă медале тивĕçнĕ. Директор ĕçĕнчен кайсан та вăл тата нумай çул тăван типографире мастер тивĕçне пурнăçланă.

1997 çулта Л.А. Алексеев хыççăн типографи ертӳçине Г.И. Ильина çирĕплетеççĕ. Ку тивĕç уншăн çĕнĕ пулман, ĕç вырăнне улăштарса Кӳкеçе киличчен вăл Шупашкарти пĕрремĕш типографире тĕп инженерта вăй хунă. Кӳкеç типографийĕн директорĕнче вăл пысăк çĕкленӳпе ĕçлеме тытăнать. Предприятие малалла аталантарас тĕлĕшпе сахал мар тăрăшать.

1999 çулта Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн Кабинечĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн Кӳкеç типографийĕн вырăнĕнче Кӳкеçри издательство çуртне туса хураççĕ. Редакципе типографи унччен уйрăм организацисем пулнă тăк, çакăн хыççăн вĕсене пĕрлештереççĕ. Директор пулма Г.И. Ильина çирĕплетеççĕ. Çав вăхăт тĕлне издательство çуртĕнче 50 çын яхăн ĕçленĕ. Геннадий Иванович та, Леонид Алексеевич пекех, хăйĕн ĕçĕнче рабочисемпе хаçатçăсен пулăшăвĕпе ӳсĕмсем туса пынă.

Редакцире те пултаруллă та ĕçе чунтан юратакансем вăй хунă. Юрий Листопад редактор, Леонид Белов, Петр Павлов, Геннадий Егоров, Гелий Семенов, Вера Иванова журналистсем. 1999 çулта йĕркеленĕ Кӳкеçри издательство çурчĕ полиграфи отраслĕнче ура çине тăнă предприяти йышне кĕрет, унта пĕтĕмпе 20 тĕрлĕ станок ĕçленĕ. Производство хăвачĕ





-85271-
КР



**Г. Андриянова линотипистка**

çулсерен ўссе пыни пичет ĕçне пурнаç ыйтнă пек йĕркелесе пыма май панă. Сăмахран, 2000 çулта компьютер участокне хута яраканĕ Андрей Изман, вăлах хаçата электронлă майпа калăпланă, çав вăхăтрах компьютерсене пăхса-сăнаса тăракан администратор та пулнă. Хаçата электронлă майпа калăплама пуçласан редакцире нумай çул вăй хуракансен те ĕçе çĕнĕлле хăнăхмалла пулнă: Мария Егорова машинистка тата Галина Львова корректор электронлă майпа текстсене наборлакан оператора кĕске-кĕске хушăрах вĕренсе тухăçлăн ĕçлеме тытăннă. Компьютер участокĕн ĕçне йĕркелесе ярсан унта брошюрăсемпе кĕнекесем те калăпланă. Издательство çуртĕнче кĕнеке-брошюра, бланк, афиша, район хаçачĕсĕр пуçне тата 5 хуçалăх хаçачĕ пичетленнĕ. Çак йĕркесен авторĕ те 2000-2003 çулта кăларнă «Ишек тăрăхĕнче» кĕнекене Кўкеçри издательство çуртĕнче пичетленине палăртни выранлă.

1997-2003 çулсенче «Кўкеçри издательство çурчĕн» директорĕнче вăй хунă Г.И. Ильин хăйĕн ĕçĕнче ăста полиграфист пулнине кăтартса панă. 2003 çулта издательство çуртне çĕнĕ пуçлăха М.Ф. Игнатьева çирĕплетеç-çĕ. 2005 çулта «Кўкеçри издательство çурчĕ» саланса каять. Редакципе типографи каллех уйрăм организацисем пек ĕçлеме пуçлаççĕ. Çав вăхăтрах М.Ф. Игнатьев директортан каять. Çĕнĕ директора А.А. Успангалиевăна çирĕплетеççĕ. 2008 çултанпа район хаçачĕ Кўкеçри типографире пичетленме пăрахать. Пĕр хушă çак ĕçе Çĕрпў типографийĕнче пурнăçлаççĕ. 2009 çултанпа хаçат Шупашкарти Пичет çуртĕнче пичетленме тытăнать. 2010 çултан Кўкеçри типографи ячĕ архиври хутсем çинче çеç сырăнса юлать.



**Кўкеçри типографи ĕçченĕсем, XX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсем. Сулахайран сылтăмалла: М. Степанова, Р. Васильева, Л. Иванова, К. Васильева, Г. Илларионова, З. Яштайкина**



**Л. Алексеев**



**Г. Ильин**



**А. Изман**



**Нумай çул линотиписткăра ĕçленĕ Г. Зиновьева**



**Кўкеç типографийĕ. Хаçата пичетленĕ цех.**

**1970-1999 çулсем.**

# Вĕсем – хаçат чысĕ, мухтавĕ

**Шупашкар район хаçачĕн пĕрремĕш номерĕ тухнăранпа 2017 çулта 85 çул çитрĕ. Чи малтанах вăл «Колхоçнĕк çулĕ» ятпа 1932 çулта июлĕн 27-мĕшĕнче Шупашкарти ОГПУ чăваш уйрăмĕн типографийĕнче 1000 экземплярпа пичетленсе тухнă. 85 çул хушшинче унта 26 редактор ĕçленĕ.**

Хаçатăн тематикипе содержанийĕ, паллах, унăн ертӳçинчен чылай килет. Çак çăмăл мар должноçре ĕçленисенчен пурте яваплăха туйса тăнă. 85 çулхи юбилей тĕлне вĕсене ятранах асăнса, ĕçĕ-хĕлĕ, пурнăçĕ тата хаçат ĕçĕнчи пултарулăхĕ çинчен кĕскен те пулин сăнласа пани вырăнлă пулĕ.

Хаçатăн пĕрремĕш редакторĕ пулма Порфирий Матвеевич Ростова çирĕплетнĕ. Çак ĕçре вăл 1932-1937, 1941-1942 çулсенче вăй хунă.

1937-1940 çулсенче кĕске вăхăт редакторта Н.Ф. Виноградов, П.И. Иванов, П.В. Шиманов тата Ф.А. Александров ĕçленĕ. Çакă пĕтĕмпех çав вăхăтри йывăр лару-тăрупа çыхăннă. 1940-1941 çулсенче редактор лавне Л.С. Семенов туртса пынă. 1942 çулта кĕске вăхăт кăна П.Т. Трифонов редактор ĕçне пурнăçланă. 1942-1944 çулсенче çак çăмăл мар ĕçре Граждан вăрçине хутшăннă Я.Н. Никитин тимленĕ. 1944-1947 çулсенче редакторта Г.П. Петров ĕçленĕ. 1947 çулта çур çул редактор тивĕçне А.С. Семенов пурнăçланă.

Патшалăх архивĕнче 1932-1959 çулсенче редакторта ĕçленисенчен чылайăшĕн çинчен çырса хăварнисем сыхлanса юлман. Çавăнпа та П.М. Ростовпа Я.Н. Никитин тата А.С. Семеновсăр пуçне ыттисен ĕçĕ-хĕлĕ, пурнăçĕ тата хаçат ĕçĕнчи пултарулăхĕ çинчен анлăн çырса кăтартма хĕн.

«Редакторсем – хаçат чысĕ, мухтавĕ» рубрикăна малалла тăснă май, редакторта ĕçленĕ 26 çынран 18-шĕ çинчен анлă çырса кăтартнă текстсемпе паллаштарам. Вĕсенчен 1959-2017 çулсенче район хаçачĕн редакторĕнче ĕçленĕ В.П. Петрова (1959-1962), Т.Л. Логинова (1963-1969), Г.С. Мальцева (1969-1970), А.Н. Михайлова (1970-1972), П.П. Матвеева (1972-1978), П.Е. Ефимова (1978-1983), Г.А. Егорова (1983- 1992), И.М. Михайлова (1992-1993), В.М. Савинкина (1993-1995), Ю.П. Степанова (1995-2002), В.Т. Сорокина (2002-2009), Б.Б. Чиндыкова (2009-2010), А.А. Сусметовăна (2010-2012), Т.Г. Вашуркинăна тата В.А. Вышинскаяна çывăх пĕлнине пула вĕсен кун-çулĕ, ĕçри пултарулăхĕпе хастарлăхĕ çинчен анлă тĕрленчĕксем çырма пултартăм.



**Леонтий Семенович Семенов 1917 çулта Шĕнерпуç ял тăрăхĕнчи Çырмапуç ялĕнче çуралнă. 1940-1941 çулсенче «Ленин çулĕпе» район хаçачĕн тĕп редакторĕ пулса тимленĕ. 1941 çулта Хĕрлĕ Çара тухса каять, 1945 çулта таврăнать. Ялта нумай çул «Герой» колхоз председателĕн çумĕнче, Иккасси вăрманĕнче лесникре ĕçлет. Тивĕçлĕ канăва тухсан 17 çул «Герой» колхозăн ревизи комиссийĕн председателĕ пулса ĕçлет. Мăшăрĕпе, Александра Григорьевнăпа, 4 ача пăхса çитĕнтерессĕ, пурне те ура çине тăратаççĕ. 1994 çулта Леонтий Семенович Семенов пирĕнтен уйрăлса каять.**



# Пĕрремĕш редакторăн паттăрла вилĕмĕ

**85 çул хушшинче хаçат редакторĕнче 26 çыравçă ĕçленĕ. Вĕсенчен пĕрремĕшĕ – П.М. Ростов.**



П. Ростов

Порфирий Ростов 1906 çулта, хальхи Шупашкар районне кĕрекен Йăршу ялĕнче çуралнă. Вырăнти шкула, Шупашкарти пĕрремĕш ступеньлĕ Совпартшкула (1926) пĕтернĕ, Мускаври редакторсене хатĕрлекен курсран вĕренсе тухнă.

Вырăнти шкул хыççăн ашшĕ хуçалăхĕнче хресчен ĕçĕсене пурнăçланă. Ялта яланах активлă пулнă, комсомола та чи пĕрремĕшĕсенчен кĕнĕ. 1924 çулта çамрăк комсомолеца пултарулăхĕпе хастарлăхне кура Ял Совет ĕçтавкомĕн секретарьне суйлаççĕ, каярахпа председатель пулма та шанаççĕ. Çав вăхăтрах комсомол ячейкине те ертсе пынă. Кулленхи ĕçе пурнăçланă хушăрах ăна Шупашкарти совпартшкула вĕренме янă.

Ăна вĕренсе пĕтерсен Порфирий Матвеевича ВКП (б) Шупашкар райкомĕн культурăпа пропаганда пайĕн заведующийне çирĕплетеççĕ. 1932 çулта унăн пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Çав çул ăна тин çеç тухма пуçланă район хаçачĕн редакторĕ пулма шаннă. Çак çĕнĕ ĕçе вăл яваплăха туйса кӳленнĕ. Шупашкар районĕ çыннисем «Колхоçнĕк çулĕ» ятпа тухма пуçланă хаçата хавхаланса кĕтсе илнĕ. Çакна кура П. Ростов редактор парти шаннине тӳрре кăларас тĕлĕшпе хăйĕн пĕлĕвне, пултарулăхне пĕтĕмпех хаçат кăларас ĕçе халалланă.

Порфирий Ростов çине тăнипе тин çеç йĕркеленнĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен аталанăвĕ çинчен хаçатра анлăн çырса кăтартнă. Ялти культура, ял хуçалăхĕ, вĕренӳ, сывлăх, физкультурăпа спорт тематикисем тивĕçлĕ вырăн тупнă. Порфирий Матвеевич тăрăшнипех 1936 çулта Кӳкеçри Культура çурчĕн пĕрремĕш хутĕнче типографи ĕçлеме тытăннă.

1937 çулта элеклĕ çырăва пула П. Ростова редактор тивĕçĕнчен хăтараççĕ. Анчах та тĕрĕслĕх çĕнтеретех. 1941 çулта ноябрь уйăхĕнче ВКП (б) райкомĕ ăна каллех хаçат ĕçне куçарать. 1942 çулта февраль уйăхĕнче Ростова Хĕрлĕ çар ретне тăма повестка параççĕ.

Порфирий Ростов лейтенант-политрук вăрçă хирĕнче чылай çапăçăва хутшăнать. 1943 çулхи февралĕн иккĕмĕшĕнче Орел хулине ирĕке кăларассишĕн пынă хĕрӳ тупăшура вăл вилмеллех аманать. Ăна Колпнянски районĕнчи Татариново ялĕ çывăхĕнче пытарнă.

Çапларах пулса тухнă пурнăç шăпи Шупашкар район хаçачĕн чи пĕрремĕш редакторĕн.

# Граждан вăрçинчен алăсăр таврăнсан та...

**Шупашкар район хаçатĕнче икĕ тапхăр редакторта ĕçленĕ (1942-1944, 1948-1959) Я.Н. Никитин 1900 çулхи декабрь уйăхĕн 19-мĕшĕнче Тăвай районĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Тăвайри икĕ класлă шкула, Шупашкарти совпартшкула (1926), Чулхулари ял хуçалăхĕн аслă шкулне (1933) вĕренсе пĕтернĕ.**

Тăвайри шкула вĕренсе пĕтерсен пĕр вăхăт ашшĕ хуçалăхĕнче хресчен ĕçĕсене пурнăçласа пынă. Ăна 1920 çулта Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ. 1920-1921 çулсенче Крымри Врангель çарне хирĕç çапăçнă. Пĕр çапăçура хытах аманнă. Мускаври госпитальте сипленнĕ чухне унăн пĕр аллине татаççĕ.

Çартан таврăннă красноармеец-инвалид пĕр хушă ашшĕ килĕнче пурăнать. Çав вăхăтра вырăнти Совет влаçне аталантарас тĕлĕшпе вăл хастарлăх кăтартнă. 1924 çулта ăна Шупашкарти партшкула вĕренме кĕме направлени параççĕ. Çак шкула вĕренсе пĕтерсен (1926) тин ĕçлеме пуçланă Енĕш Нăрвашри библиотека заведующийĕнче вăй хума тытăнать.

1930 çулта Яков Никитичăн пурнăçĕнче улшăну пулса иртет. Çав çул вăл Чулхулари ял хуçалăх аслă шкулне вĕренме кĕрет. 1933 çулта çак шкула вĕренсе пĕтерсен шăпа Етĕрне районне илсе çитерет. ВКП (б) Етĕрне райкомĕн агитмасса пайне вырнаçать. 1937 çулччен кунта инструктор-пропагандист пулса вăй хурать.

1937 çулта пурнăç кустăрми ăна Шупашкар районне илсе çитерет. Çав çул ăна ВКП (б) Шупашкар райкомĕн иккĕмĕш секретарьне суйлаççĕ. Çакăнтан пуçласа Я. Никитин коммунист хăйĕн малашнехи пурнăçне, ĕç-хĕлне пĕтĕмпех Шупашкар районĕпе çыхăнтарать. Малашнехи çулсенче райсоюз председателĕн çумĕнче, райком оргинструкторĕнче, агитаципе пропаганда пайĕн заведующинче тимлет.

1942 çулта Я. Никитинăн ĕçлĕ пур-



Я. Никитин

нăçĕнче палăрмаллах улшăну пулса иртет. Ăна Шупашкар районĕнче тухса тăракан «Ленин çулĕпе» хаçат редакторне çирĕплетеççĕ. Çак ĕçре вăл 1944 çулччен вăй хурать. Паллах, вăрçă çулĕсенче район хаçачĕн редакторĕнче ĕçлеме çăмăлах пулман. Яков Никитич парти шаннă ĕçе яваплăха туйса пурнăçласа пынă. Вăл вăрçă çулĕсенче хаçатра вырнаçтаракан статьясене «Пĕтĕмпех фронтшăн, çĕнтерӳшĕн!» девизпа хатĕрленĕ.

1948 çулта Яков Никитича район хаçачĕн редакторне çирĕплетеççĕ. Ку хутĕнче 1959 çулччен вăй хурса вăл район хаçачĕн историйĕнче çав тери тарăн йĕр хăварнă. Ăна «За трудовое отличие», «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941-1945 г.г.», «За доблестный труд в ознаменование 100-летия со дня рождения В.И. Ленина», «50 лет Вооруженным силам СССР» медальсемпе наградăланă.



# Вăрçăран таврăннă редактор

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, кĕске вăхăт район хаçачĕн редакторĕнче вăй хунă А.С. Семенова та аса илмесĕр хăвараймăн.**

Анатолий Семенов 1923 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Арккасси ялĕнче çуралнă. Вырăнти пуçламăш шкула, Шупашкарти педучилищĕн шкул уйрăмне (1940), Чулхулари парти шкулĕн журналистика уйрăмне вĕренсе пĕтернĕ. 1958 çулта СССР Журналистсен союзĕн членне кĕнĕ.

1940 çулта Шупашкар районĕнчи Ельниковăри тулли мар вăтам шкулта ачасене историпе географи предметне вĕрентме тытăннă. Вăрçа пула педагог ĕçĕпе сыв пуллашма тивнĕ. Хĕрлĕ çар ретне тăма ăна 1941 çул вĕçĕнче алла повестка тыттарнă. Вăл Волховский фронт тытăмĕнче Ленинграда хӳтĕленĕ. Каярахпа Кăнтăр-Хĕвеланăç тата Тăваттăмĕш Украина фронтĕнчи хаяр çапăçусене хутшăннă. Аслă Çĕнтерӳве Германире кĕтсе илнĕ.

Вăрçă хыççăн А. Семенов офицер 1947 çулхи июль-декабрь уйăхĕсенче Шупашкар районĕнче саланакан «Ленин çулĕпе» хаçат редакторĕнче тăрăшать. Пурнăç шăпи ăна Куславкка районне илсе çитерет. Кунта ăна 1948-1950 çулсенче район хаçачĕн коллективне ертсе пыма шанаççĕ. Çакăнта ĕçленĕ вăхăтрах Чулхулари парти шкулĕн журналистика уйрăмне вĕренме яраççĕ. Асăннă шкула вĕренсе пĕтерсен ăна парти обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн инструкторне çирĕплетеççĕ. Çак ĕçре вăл икĕ сăтаркка вăхăт вăй хурать (1952-1955, 1957-1961). 1955-1957 çулсенче парти обкомĕн агитаципе пропаганда пайĕнчех пичет, радио, телевидени секторĕн заве-



А. Семенов

дующийĕнче ĕçлет.

1961 çулта Анатолий Семенович пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Ятарласа вĕреннĕскер хăйĕн ĕçлĕ пурнăçне республикăра тухса тăракан чăваш халăх хаçачĕпе «Коммунизм ялавĕпе» çыхăнтарать. 1961-1963 çулсенче вăл республикăн тĕп хаçачĕн Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Вăрнар районĕсенчи ятарлă корреспондентĕнче ĕçлет. 1963 çулта каллех улшăну: республикăра тухса тăракан хаçатсен издательствин директорĕ пулма çирĕплетеççĕ. Çав ĕçре вăл 1969 çулччен тим-




**«Тăван Ен» хаçат ĕçченĕсем вăрçа хутшăннă, редакцире ĕçленĕ журналистсене халалласа 2015 çулта йĕркеленĕ «Вилĕмсĕр полк» стенд**



лет. 1969-1970 çулсенче А. Семенов – «Коммунизм ялавĕ» хаçатри пропагандăпа агитаци пайĕн литсотрудникĕ. 1970 çултан пуçласа мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччченех хăйĕн пурнăçне чăваш халăх хаçачĕпе çыхăнтарать. 16 çул çак хаçатăн çырусен пайĕн заведующийĕнче тăрăшса ĕçлет. Штатра тăман корреспондентсемпе хутшăнса ĕçлессине лайăхлатать, нумай çĕнĕлĕх кĕртет.

Республикăн пичет ĕçĕнче пултарулăх тата тăрăшулăх кăтартса вăй хунăшăн Анатолий Семенов çыравçа «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ» хисеплĕ ята панă. Ăна Хĕрлĕ çăлтăр, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин I степень орденĕсемпе, «30 лет Болгарской народной армии», «За защиту Ленинграда» юбилейлă медальсемпе наградăланă.

**А. Семенов мăнукĕпе, 2016 çул**



# Партипе комсомол ĕçĕнче пиçĕхнĕ ертӳçĕ

**Василий Петрович Петров 1924 çулхи çу уйăхĕнче хальхи Красноармейски районĕнчи Янмурçин ялĕнче çуралнă. Упи салинчи шкула, каярах Тракри (Красноармейски) вăтам шкула вĕренсе пĕтернĕ. Вăрçа пула унăн хăйĕн пĕлĕвне малалла ӳстерме май килмен.**

Хĕрлĕ çар ретне ăна 1942 çулта илсе кайнă. Малтанлăха вăл приборист пулса Мускав çывăхĕнче çапăçнă. Каярахпа «Степной», «Çурçĕр хĕвеланăç», «Воронежский», «Украинский» фронтсенче прибористсен отделени командирĕ пулса кĕрешнĕ. Вăл Чехословакие, Венгрие, Германие ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусене те хутшăннă. Çартан 1947 çулта командирсем хатĕрлекен курсран вĕренсе тухсан тин таврăннă.

В. Петров офицер тăван тăрăхри обществăлла ĕçе кӳлĕнет. Паттăр офицера малтан Красноармейскинчи ВЛКСМ райкомĕн иккĕмĕш секретарьне, каярахпа пĕрремĕш секретаре суйласа лартаççĕ. Çакăнта ĕçленĕ çĕртенех ăна Горький хулинчи парти шкулне вĕренме яраççĕ.

Горький хулинчи партин аслă шкулне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 1953 çулта Василий Петровича Шупашкар районне ĕçе вырнаçтараççĕ. Кунта вăл 1959 çулхи июль уйăхĕччен КПСС Шупашкар райкомĕн пропагандăпа агитаци уйрăмĕн пуçлăхĕнче, иккĕмĕш секретарĕнче вăй хурать.

Ишлей районне Шупашкар районĕ çумне пĕрлештерсен 1959 çулхи июль уйăхĕн 25-мĕшĕнче КПСС райкомĕн пленумĕнче район хаçачĕн редакторĕ пулма Василий Петрова çирĕплетеççĕ. Ун чухне Шупашкар район хаçачĕ «Ленин çулĕпе» ятпа тухса тăнă. В. Петров редактор пуканне йышăниччен комсомолпа парти ĕçĕнче ĕçлесе пиçĕхнĕ. Вăл Шупашкар районĕнче тухса тăракан хаçатăн редакторĕ пулса 1962 çулхи май уйăхĕччен вăй хурать. Çав çул хаçат районсем хушшинче пичетленме пуçланă май Шупашкар район хаçачĕ вăхăтлăха тухма пăрахать. Пĕр хушă Василий Петрович ял хуçалăхĕн инспектор-организаторĕ пулса вăй хурать. Каярахпа пĕр улшăнмасăр 1965-1980 çулсенче ял хуçалăх ĕçченĕсен райком-профсоюз комитечĕн председателĕнче ĕçлесе Шупашкар район историйĕнче тарăн йĕр хăварать. Питех те тĕлĕнмелле: Василий Петрович хушаматне Шупашкар районĕнче чылай çул ертӳçĕре тăрăшса ĕçленĕскерĕнне район энциклопедине кĕртмен.



**В. Петров**

Василий Петрович Шупашкар районне ĕçлеме вырнаçиччченех çемье çавăрнă. Вăл Красноармейски районĕнчи Анатри Кушар ялĕнче çуралнă Зоя Александровнăна качча илнĕ. Зоя хăйĕн упăшкипе Кӳкеçе куçса килнĕ. Кунта вăл çирĕм çул ытла Шупашкар район библиотекин вулав залĕн заведующийĕнче, каярахпа мĕн пенсие тухиччченех ачасен интернат çуртĕнче воспитатель пулса ĕçленĕ. Зоя Александровна Кӳкеçри ветерансен хорĕн чи активлă участникĕ пулнă, юрăсем те кĕвĕленĕ. Зоя Александровна Василий Петровичпа икĕ ывăл çуратса çитĕнтернĕ – Юрий тата Владимир.

Василий Петрович вăрçăра паттăрлăх кăтартса çапăçнăшăн, мирлĕ ĕçре тăрăшса ĕçленĕшĕн чылай наградăна, хисеп хучĕсене тивĕçнĕ. Вăл шутран Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин II степень, тата «Хисеп палли» орденсем», Жуков медалĕ тата çичĕ медаль, пилĕк тĕрлĕ паллă, çирĕм тĕрлĕ хисеп хучĕ.

Василий Петрович статьясем çырсах кайман, анчах та питĕ таса калаçнă, чаплă оратор пулнă.

# Хавхалантаракан редактор

**Тепĕр тĕрленчĕке 1963-1969 çулсенче «Ленинец» («Тăван Ен») ятпа тухса тăнă район хаçачĕн редакторĕнче вăй хунă Транквиллин Логинович Логинова халаллатăп.**

Транквиллин Логинов Шăмăш салинче 1914 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнче кун çути курнă. Çĕньялти 6 çул вĕренмелли шкула, Шупашкарти 2 сыпăклă шкулăн пĕрремĕш курсне, Чулхулари 2 çул вĕренмелли парти шкулне пĕтернĕ. Яваплă ĕçсенче вăй хума пуçличчен вăл хăй çуралнă тăрăхра тĕрлĕ ĕçре тимленĕ – «Коммуна» колхозра (1930-1931,1932-1933), ялти почтальонта (1931-1932), Шăмăшри почта агентствинче (1933-1934), Водопьянов ячĕпе хисепленекен колхозра (1934-1935), Шăмăш ял советĕнче (1935-1936).

Пурнăç урапи ăна 1936 çулта районта тухса тăракан «Колхозник çулĕпе» хаçата илсе çитерет. Малтанласа вăл хаçатра инструктор-массовикре ĕçлет, каярахпа яваплă секретарь, литература сотрудникĕ пулать. Паха опыт Транквиллин Логиновича 1963-1969 çулсенче хаçат редакторĕнче ĕçлеме пулăшать.

1939 çулта Транквиллин Логиновăн пурнăçĕнче тепĕр улшăну пулса иртет – ăна ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн агитаципе пропаганда пайĕн заведующине лартаççĕ, опытлăскере ВЛКСМ райкомĕн 2-мĕш секретарьне суйлаççĕ. Вăл комсомолта 1939-1944 çулсенче вăй хурать. 1950 çулта пурнăç кустăрми Транквиллин Логинова Муркаш районне илсе çитерет. Ăна çав çулах Муркаш райĕçтовкомĕн председателĕ пулма шанаççĕ. Пуçланаççĕ вара унăн канусăр ĕç кунĕсем. 1952 çулта ăна, ертӳçĕре пуян опыт пухнăскере, КПСС Муркаш райкомĕн 1-мĕш секретарьне суйлаççĕ. Унта вăл 1955 çулта КПСС Чурачăк райкомĕн секретарьне суйличчен вăй хурать.

1962 çулта Транквиллин Логинович тăван района таврăнать, КПСС Шупашкар райкомĕн 1-мĕш секретарĕн пулăшуçинче тимлеме тытăнать. Çулталăкран ăна «Ленинец» хаçат редакторĕ пулма шанаççĕ. Çак ĕçе вăл пысăк çĕкленӳпе пикенет. 1969 çулччен кунта ĕçлесе Транквиллин Логинов хаçат пĕлтерĕшне ӳстерес тĕлĕшпе самай тăрăшать, район хаçачĕн историйĕнче тарăн йĕр хăварать.





**Малти ретре (сулахайран): ял хуçалăх пайĕн заведующийĕ А. Алексеев, ответлă секретарь А. Павлов, тĕп редактор Т. Логинов, редактор заместителĕсем А. Михайлов, И. Кузнецов, А. Изоркин. Иккĕмĕш ретре: куçаруçă С. Ванюшкин, корректор З. Ванюшкина, Римма, Г. Орлова машинисткăсем, Э. Лаврова корректор, К. Иванова бухгалтер. Виççĕмĕш ретре: И. Орлов корректор, Х. Лисин корреспондент, Л. Николаев куçаруçă, П. Ефимов КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ, П. Васильев районти радиовещани пайĕн редакторĕ, Н. Борисов КПСС райкомĕн организациллĕ пай заведующийĕ, Ф. Иванов фотокорреспондент.**

Парти райкомĕ районти яваплă ĕçченсене уполномоченнăй туса тăтăшах хуçалăхсене янă, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕшĕн çирĕп ыйтнă. Редактора та çак яваплăхран хăтарман. Транквиллин Логинов редакторта тимленĕ вăхăтра ялкорсене çырма хавхалантарса тăнă. Эпĕ те çав вăхăтра чи хастар ялкорсенчен пĕри пулнă. Сăпайлă редакторччĕ, кăмăллă арçынччĕ вăл. Ун чухне эпĕ ял хуçалăх специалисчĕ пулнă май асăннă отрасльпе çыхăннă статьясем ытларах çыраттăм. Хаçатăн тĕп редакторĕ яланах хавхалантарса тăратчĕ, кирек ăçта тĕл пулсан та «çыр, Фадей, çыр» тетчĕ.

Тӳрĕ кăмăлпа нумай вăхăт вăй хунăшăн ăна «Хисеп палли» орденпа, медальсемпе, тав тата хисеп хучĕсемпе чысланă.

# Кенаш мучи

**Рубрикăна малалла тăсса районта тухса тăнă «Ленинец» хаçатра 6 çул ĕçлесе тарăн йĕр хăварнă, 1969-1970 çулсенче редактор пулнă Г.С. Мальцева аса илер-ха.**

Геннадий Мальцев Элĕк районĕнчи Чăрăшкасси ялĕнче 1929 çулхи февраль уйăхĕнче çуралнă. Ялти шкулта вĕренсе ăс пухнă. Колхоз председателĕсене хатĕрлекен чăваш ял хуçалăх шкулне (1956 ç.), партин Ленинградри аслă шкулĕн журналистика уйрăмне вĕренсе пĕтернĕ (1965).

Геннадий Степанович журналистика ĕçне 1949 çулта, çирĕмре, кӳлĕннĕ. 1949 çулхи апрель уйăхĕнче вăл Вăрнар районĕнчи радиоредакцин литература секретарĕ пулма кĕрешнĕ. Анчах та ăна кунта нумай ĕçлеме


Г. Мальцев

май килмен. Çав çулхи август уйăхĕнче Совет çарне илеççĕ.

1952 çулта çартан таврăнсан Г. Мальцев Чăваш радиокомитетне диктор пулма вĕренме ученик шучĕпе ĕçе вырнаçать. Кăшт вăхăт иртсен ăна радиокомитетăн секретарьне çирĕплетеççĕ. 1953 çулта пурнăçĕнче улшăну пулса иртет. Çав çулхи май уйăхĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн промышленноç пайĕн литсотрудникĕ пулса ĕçлеме вырнаçать, анчах та нумаях ĕçлеймест. Çав çулхи сентябрь уйăхĕнче колхоза ертсе пыракансене хатĕрлекен Чăваш ял хуçалăх шкулне вĕренме кĕрет.

Геннадий Степанович 1957 çулта çак шкула вĕренсе пĕтерсен ял хуçалăхĕнче ĕçе пикенмест. Чунĕ журналистикăна туртнине пула Çĕмĕрле районĕнчи «Социалистический труд» хаçат литсотрудникĕ пулса ĕçлеме вырнаçать. Кунта пĕр уйăх вăйхурсан 1957 çулхи февраль уйăхĕнче Комсомольски район хаçачĕн яваплă секретарьне çирĕплетеççĕ. 1960 çулхи декабрь уйăхĕнче хаçатăн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхне куçараççĕ.

1961 çулта Г. Мальцев çыравçă пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Çав çулхи сентябрь уйăхĕнче вăл партин Мускаври аслă шкулĕн журналистика уйрăмне вĕренме кĕрет. 1962 çулта ăна Ленинградри аслă шкула вĕренме куçараççĕ, 1965 çулта партин Ленинградри аслă шкулĕн журналистика уйрăмĕ хыççăн – Йĕпреç районĕнчи «Сĕнтерӳшĕн» хаçат редакторне. Пурнăç шăпи аслă пĕлӳ илнĕ, хаçат ĕçĕнче ĕçлесе опыт пухнă Геннадий Мальцев çыравçа Шупашкар районне илсе çитерет. 1966 çулхи ноябрь уйăхĕнче ăна «Ленинец» хаçатăн çырусен пайĕн пуçлăхне ĕçлеме илеççĕ. 1967 çулта редактор çумне куçараççĕ. Çакăнта вăл 1973 çулхи январь уйăхĕччен ĕçлесе район хаçачĕн историйĕнче тарăн йĕр хăварать. 1969-1970 çулсенче кĕске вăхăт хушши редактор ĕçĕсене пурнăçлать.

Г. Мальцева «Ленинец» хаçат редакцийĕнче виçĕ редактор çумĕнче ĕçлеме тӳр килет. Вăл хаçатра ĕçлекен ытти сотрудникрен чылай лайăх енĕпе уйрăлса тăнă. Тĕслĕхрен, вăл «Ленинец» хаçатра ĕçленĕ çулсенче пурнăçра тĕл пулакан çитменлĕхсемпе пăтăрмахсем тата дисциплинăна пăсакан йăх-ях çинчен сатирăллă, критикăллă материалсемпе хаçат ĕçĕнче пĕлтерĕшлĕ йĕр хăварать. Кӳкеçре ĕçленĕ çулсенче республикăри хаçат-журналсенче те сатирăллă-юморлă калав, очерк, повеç сахал мар пичетлет. Çак ĕçе вăл 1973 çулта «Капкăн» журналта литература пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлеме тытăнсан тата 1976-1985 çулсенче Чăваш Республикин писательсен союзĕнче художествăлла литературăна пропагандăлакан бюрора ĕçленĕ чухне тата анлăрах туса пынă.

Геннадий Степанович Мальцев хаçат-журнал ĕçĕнче кăна мар, литературăра та палăрнă. Вăл – виçĕ кĕнеке авторĕ. 1976 çулта «Уй куçлă, вăрман хăлхаллă», 1982 çулта «Олегпа Валерин тусĕсем», 1989 çулта «Кама кулă, кама хулă» ятсемпе кĕнекесем пичетлесе кăларнă. Вăл СССР писательсен союзне 1979 çулта кĕнĕ. Чылай çул чăваш Республикин журналистсен союзĕн членĕнче тăнă. Ăна чылай медальпе наградăланă, 1968 çулта Чăваш АССРĕн Аслă Канашĕн президиумĕн Хисеп грамотине тивĕçнĕ. «Отличник культурного шефства над селом» паллă хуçи хăйĕн чылай материалне «Кенаш мучи» псевдонимпа пичетлесе кăларнă.

# Çĕннине шыраса

**Халĕ сăмах Шупашкарта пурăнакан 86 çулти Андрей Михайлов пирки. Вăл хăйĕн вăйпитти ĕмĕрне пичет ĕçĕнче, совет органĕсенче, комсомол парти пĕрлешĕвĕсенче ĕçлесе ирттернĕ.**

Андрей Иванович 1930 çулхи февраль уйăхĕн 16-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Хачăк ялĕнче кун çути курнă. Ишлей вăтам шкулне (1948 çул), Чăваш патшалăх педагогика институтне, партин Чулхулари аслă шкулне (1959 çул), Ленинградри аслă шкулăн хаçат уйрăмне (1966) вĕренсе пĕтернĕ.

Ĕçе вăл 12 çултанах кӳлĕннĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи хăйĕн ытти тантăшĕ пекех çу кунĕсенче «Знамя коммунизма» колхозра тĕрлĕ ĕç пурнăçланă. 1948 çулта ВЛКСМ Ишлей райкомĕн организациллĕ пай пуçлăхĕ пулма уйăрса лартаççĕ. Çак ĕçре вăл 1952 çулччен вăй хурать. Çырас туртăм çак çулсенче пуçланать те Андрей Михайловăн. А. Ванин псевдонимпа район хаçатĕнче статья хыççăн статья пичетлесе кăларать. Пултаруллă та тăрăшуллă заворга 1952 çулта ВЛКСМ райкомĕн пĕрремĕш секретарьне суйлаççĕ.

1955 çулта Андрей Ивановичăн пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Ăна партин Чулхулари аслă шкулне вĕренме яраççĕ. 1959 çулта çак шкултан вĕренсе тухсан 1964 çулччен Çĕрпӳ тата Шупашкар районĕсенче «Октябрь çулĕпе» тата «Ленин çулĕпе» хаçатсен редакторĕн çумĕнче ĕçлет. Журналистикăна чунĕпе парăннă çыравçăна 1964 çулта партин Ленинградри аслă шкулĕн хаçат уйрăмне вĕренме кайма направлени параççĕ. 1966 çулта ку шкула вĕ-


А. Михайлов

ренсе пĕтерсен вăл КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн инструкторĕнче ĕçлет.

1970 çулта шăпа ентеше ĕçлеме Тăван районах илсе çитерет. Çак çул ăна кунта тухса тăракан «Ленинец» хаçат редакторне çирĕплетеççĕ. Ĕçлесе тата вĕренсе опыт пухнă журналист çак ĕçе пысăк çĕкленўпе кўлĕнет. Хăй вăй хунă çулсенче район хаçачĕн ĕçне чылай çĕнĕлĕх кĕртет. Пичет ĕçне вăхăт ыйтнă пек йĕркелес тĕллевпе çĕнĕлĕхсем шыраса вăл Лука (Ленинград облаçĕ), Подольск (Мускав облаçĕ) хулисен хаçат опычĕсемпе паллашать, «Ленинец хаçачĕн» ялкорĕсен посчĕсене туса хурать, малта пыракансен опытне сарма районти специалистсене явăçтарать, пурнăçри çитменлĕхсемпе тата пăтăрмахсемпе çивĕч кĕрешме район хаçатĕнче «Ятман Якур ятранах ятлать» кĕтес йĕркелет.

Ўркенмен редактор район пурнăçĕпе, район çыннисемпе тата вырăнти ялкорсемпе вулакана татах та çывăхрах паллаштарассишĕн тăрăшать. 1972 çулхи кĕркунне ăна КПСС Чăваш обкомĕн пичет, телевидени, радио секторĕн заведующине çирĕплетеççĕ. Вун икĕ çул вăл республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен ĕçĕсене тивĕçлĕ шайра тытса тăрассишĕн ырми-канми вăй хурать. Çакăн хыççăн ăна Чăваш АССР министрсен совечĕ çумĕнчи патшалăх вăрттăнлăхĕсене пичетре сыхлакан управлени пуçлăхне уйăрса лартаççĕ. 1984-1991 çулсенче çак должноçре те вăл пысăк тăрăшулăхпа палăрать. Тивĕçлĕ канăва тухсан та ахаль лармасть. 1992-2001 çулсенче Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕн консультантĕнче, каярахпа ответлă секретарьте вăй хурать.

«Журналисты Чувашии» (2005), «Воевали на всех фронтах» (2010) кĕнекесен авторĕ парти органĕсенче тăрăшса ĕçленĕшĕн чылай наградăна тивĕçнĕ. Хăйĕн тăван ялĕнчен II Тĕнче вăрçине хутшăннă çынсем çинчен те кĕнеке кăларчĕ. ЧР Культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ултă медаль, вăл – «Пичет ĕçĕн отличникĕ» паллă хуçи, Раççейри Журналистсен союзĕн тата республикăри союзăн Çемен Элькер ячĕллĕ премисен лауреачĕ. Халăх хушшинчи ĕçре çулĕсене кура мар хастар. 2007 çулта пичете тухнă «Городские и районные газеты Чувашии» кĕнекере вăл Шупашкар районĕн «Тăван Ен» хаçачĕ çинчен те анлă çырса кăтартнă.

**Архиври сăн ўкерчĕксем**







# Вĕрентекен те, çыравçă та

**Черетлĕ тĕрленчĕкре 1972-1978 çулсенче район хаçачĕн редакторĕнче ĕçленĕ П.П. Матвеев çинчен çырса кăтартас терĕм. Вăл хаçат историйĕнче тарăн йĕр хăварнă.**



П. Матвеев

Петр Матвеев 1937 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Çатракасси ялĕнче çуралнă. Кўкеçри вăтам шкула (1954), Чăваш патшалăх педагогика институчĕн историпе филологи уйрăмне (1959), çак институт çумĕнчи аспирантурăна (1975) вĕренсе пĕтернĕ. Учитель ĕçне вăл 1959 çулта Пушкăрт АССР-чи Бишкаринăри вăтам шкулта вырăс тата чăваш чĕлхисене вĕрентме тытăннинчен пуçланă. Ун чухне институт пĕтернĕ çамрăксен ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе çирĕп йĕрке пулнă. Аслă пĕлў илнĕ çамрăксене институт направленийĕпе кăна ĕçе илнĕ. Çапла майпа Петр Матвеев вĕрентекен те Пушкăрт АССР-че пулса курнă. Бишкаринăри шкулта ĕçленĕ çĕртенех П. Матвеева çара илеççĕ. 1962 çулта çартан таврăннă çамрăк Иккассинчи шкула ĕçлеме вырнаçать. Вăл ку шкулта вĕрентекен, вĕрентў пайĕн заведующийĕ (1962-1965), директор пулса ĕçлесе (1965-1970) тарăн йĕр хăварать. Вĕренекенсенчен, вĕсен ашшĕ-амăшĕнчен, ял çыннисенчен ырă ята тивĕçет. Ялта пулса иртекен мероприятисене активлă хутшăнать. Çырас туртăм та унăн Иккасси шкулĕнче ĕçленĕ çулсенче çуралать, «Çамак» псевдоним та çакăнтах тупăнать.

Пурнăç урапи Петр Петрович вĕрентекене Кўкеçе илсе çитерет. 1970 çулта ăна вĕрентекенре ĕçлесе опыт пухнăскере КПСС Шупашкар райкомĕн инструкторĕ пулма çирĕплетеççĕ. Кăшт вăхăт иртсен Шупашкар райĕçтăвкомĕн культура пайĕн пуçлăхне уйăрса лартаççĕ.

1972 çулта Петр Петровичăн пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Çак çул ăна Шупашкар район хаçачĕн редакторĕ пулма уйăрса лартаççĕ. Вăл вăхăтра пичет кăларăмĕ «Ленинец» ятпа тухса тăнă. Вĕрентекен пулса ĕçлесе тата район шайĕнче пĕр вăхăт вăй хурса опыт пухнă Петр Матвеев редактор ĕçне пысăк çĕкленўпе кўлĕнет. 1972-1978 çулсенче редактор район хаçатĕнче тăтăшах хăй çырса статьясем пичетлесе кăларать. Редакцири журналистсенчен ку енĕпе çирĕп ыйтать. Ялкорсен хаçата çырса хастарлăхне ўстерес тĕлĕшпе час-часах семинар-канашлу ирттерет. Республикăра тухса тăракан хаçат-журналсемпе çыхăну тытать. Чылай статьяна «Çамак» псевдонимпа пичетлесе кăларать.

Çав вăхăтсенче район хаçачĕсене

КПСС райкомĕсем йĕркелесе тĕрĕслесе тăнă. Çакна 1974 çулхи март уйăхĕнче КПСС Шупашкар райкомĕн II пленумĕнче «Ленинец» хаçатăн ĕçхĕлне тишкерсе тухни аванах çирĕплетсе парать. Унта хаçат редакторĕ П.П. Матвеев анлă доклад туса панă.

Петр Матвеев район хаçачĕн редакторĕнче ĕçленĕ çулĕсенче хăйĕн пĕлĕвне малалла аталантарас тĕллевпе тимлет. 1975 çулта Чăваш патшалăх педагогика институчĕ çумĕнчи аспирантурăна вĕренсе пĕтерет. Çакна пурнăçлама республикăра тухса тăракан хаçат-журналта педагогика, воспитани, вĕрентӳ тытăмĕ пирки чылай анлă материал пичетлесе кăларать. Тĕслĕхрен, 1974 çулта «Ушинский тата хальхи вăхăтри вĕрентӳ системинчи проблемăсем», 1973 çулта Н.В. Васильев (Шупоссинни) пирки, 1974 çулта – «Тăван çĕршывăн пулас хӳтĕлевçисем» тата ытти темăпа та.

Пурнăç кустăрми çыравçăна 1978 çулта Шупашкара илсе çитерет. Ăна Чăваш патшалăх педагогика институтне ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Вăл унта малтан вĕрентекен, каярахпа доцент пулса вăй хурать – 1978-1995 çç. Кунта тăрăшсах педагогика наукисен кандидачĕн ятне тивĕçет. Вăл çак институтра ĕçленĕ çулсенче педагогика наукисен историйĕ тата теорийĕ çинчен наука ĕçĕсем пичетлесе кăларать.

# Парти ĕçĕнчен – хаçат ертӳçине

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, 1978-1983 çулсенче «Ленинец» хаçатра редакторта вăй хунă П.Е. Ефимов çинчен çырса кăтартасшăн.**

Петр Ефимович Ефимов 1923 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнче хальхи Етĕрне районне кĕрекен Сехри ялĕнче çут тĕнчене килнĕ. Вăл малтан çичĕ çул вĕренмелли шкула, унтан вăтам шкула, каярахпа Чулхулари партин аслă шкулне вĕренсе пĕтернĕ (1958 ç.).

Вăрçа хутшăнса 1943-1944 çулсенче тĕрлĕ фронтра малти линире паттăррăн çапăçнă. П. Ефимов фронтовик яваплă ĕçе кӳлĕниччен тĕрлĕ çĕрте вăй хунă. 1947 çулта çав вăхăтри пултаруллă та тăрăшуллă ытти çамрăк пекех комсомол пĕрлешĕвĕнче ĕçлеме пикеннĕ. Малтанлăха ăна ВЛКСМ Советски райкомĕн учетпа сектор пайĕн пуçлăхне çирĕплетеççĕ, каярахпа организациллĕ пай пуçлăхне куçараççĕ. Ĕç картлашкипе хăпарса ВЛКСМ райкомĕн иккĕмĕш секретарьне çитет.

1954 çулта Петр Ефимовичăн пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет.



П. Ефимов

Ăна партин Чулхулари аслă шкулне вĕренме кĕме направлени параççĕ. 1958 çулта ăна КПСС Сĕнтĕр райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕн çумне çирĕплетеççĕ. Анчах та вăл кунта нумаях ĕçлемест. 1959 çулта хăйĕн малашнехи ĕçне хаçатпа çыхăнтарать. Çав çул ăна Сĕнтĕр районĕнче тухса тăракан «Ĕç ялавĕ» хаçата та ĕçе илеççĕ, çырусен пайĕн пуçлăхĕ пулма çирĕплетеççĕ. Каярахпа комсомолта, хаçатра ĕçлесе опыт пухнăскере редактор çумне çирĕплетеççĕ. Петр Ефимович «Ĕç ялавĕ» хаçатра 1959-1963 çулсенче ĕçлесе журналистика енĕпе чылай опыт пухать.

1963 çулта Сĕнтĕр районне пĕтерни-не пула район хаçачĕ те тухма пăрахать. Палăртса хăвармалла, çавна пула П. Ефимов тата унăн çемйи умне йывăр ыйту тухса тăрать. Унăн ĕç вырăнне те, пурăнмалли вырăнне те улăштарма тивет. Пурнăç шăпи ăна Шупашкар районне илсе çитерет. Малтанлăха вăл КПСС Шупашкар райкомне инструктор пулса ĕçе вырнаçать. Каярахпа ăна организациллĕ пай пуçлăхĕ пулма çирĕплетеççĕ. Унтан ăна агитаципе пропаганда пайĕн пуçлăхне куçараççĕ.

Петр Ефимович 15 çул КПСС Шупашкар райкомĕнче тимлесе тарăн йĕр хăварать. Çав çулсенче ответлă тата яваплă ĕçсенче тăрăшакансене КПСС райкомĕпе райĕçтăвкомĕн шаннă çыннисем туса (представительствăсем) лару-тăру çăмăл мар вырăнсене янă, райком ĕçченĕсене çак общеÇтвăлла ĕçрен хăтарман. Петр Ефимович шаннă ĕçе пысăк тимлĕхпе туса пынă. Вăл КПСС Шупашкар райкомĕнче 1963-1978 çулсенче ĕçленĕ.

1978 çулта унăн пурнăçĕнче каллех улшăну пулса иртет. Ăна партипе комсомол ĕçĕнче ĕçлесе пиçĕхнĕскере тата район хаçатĕнче опыт пухнăскере районта тухса тăракан «Ленинец» хаçат редакторĕ пулма çирĕплетеççĕ. Çак тивĕçе те вăл малтанхи пекех яваплăхпа йышăнать. Вăл 1978-1983 çулсенче район хаçачĕн редакторĕнче ĕçленĕ




Ĕç саманчĕ





-85271-
КР краеведения Чебоксарского района ЧР

чухне хаçат пĕлтерĕшне çулсеренех лайăхлатса пырать, çĕнĕлĕхсем кĕртет. Вырăнти штатра тăман корреспондентсемпе ĕçлессине малти вырăна хурса семинар-канашлу, тĕл пулусем час-часах ирттерет. 1959-1963 çулсенче Сĕнтĕр районĕнче тухса тăракан «Ĕç ялавĕ» хаçатра ĕçленĕ чухне статьясем пичетлесе кăларма хăнăхнăскер «Ленинец» хаçат редакторĕнче тăрăшнă çулсенче те статьясем çырсах тăрать. Ĕçтешĕсенчен çирĕп ыйтать. Петр Ефимович Шупашкар районĕнче яваплă ĕçсенче 20 çул (1963-1983) вăй хурса тарăн йĕр хăварнă. Ăна вăрçă хирĕнче паттăрлăх кăтартса çапăçнăшăн, мирлĕ пурнăçра тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçленĕшĕн «Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин» II степень орденĕпе, «За отвагу», «За трудовое отличие» медальсемпе наградăланă. Чăваш АССРĕн Аслă Канашĕн Президиумĕн тата КПСС Чăваш обкомĕн министрсен Канашĕн Хисеп грамотисене парса чысланă.

# Ята улăштарнă редактор

**«Тăван Ен» хаçат çак ятпа тухма пуçланăранпа, 1991 çулхи октябрьтеньпе, 15 çул иртрĕ. Çавна май паянхи тĕрленчĕкре хаçат ятне улăштарнă тапхăрта редакторта ĕçленĕ Г.А. Егорова аса илем-ха.**

Геннадий Егоров 1950 çулхи сентябрь уйăхĕн 9-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Мăн Чăкăр ялĕнче çуралнă. Толик Хураскинчи вăтам шкула, И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ-ра историпе филологи факультетне (1973), Мускаври Раççей социаллă политика институтне вĕренсе пĕтернĕ (1991).

Пичет ĕçĕнчи стаж унăн 1973 çулта университета вĕренсе пĕтерсен Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕнчен пуçланнă. Çакăнтанах Совет çарĕн ретне тăнă. 1974 çулта çартан таврăнсан каллех малтанхи ĕç вырăннех вырнаçнă, яваплă секретарьте вăй хунă.

Çĕр çинче пурăнакан çынна тăван кĕтес хăйĕн патнех туртать. 1978 çулта Геннадий Егоров çыравçă Шупашкар районĕнче тухса тăракан «Ленинец» хаçата ĕçлеме куçнă. Малтан ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ пулса вăй хунă, каярахпа – редактор çумĕнче. Яваплăха туйса тăрăшакан çыравçа района ертсе пыракансем асăрхаççĕ. Çапла майпа 1983 çулта Г. Егорова, вунă çул патнелле район хаçачĕсенче ĕçлесе опыт пухнăскере, «Ленинец» хаçат редакторне çирĕплетеççĕ. Çак ĕçре вăл 9 çул ĕçлесе район хаçачĕн историйĕнче сумлă йĕр хăварать. 1959 çултанпа паянхи кунччен хаçат редакторĕсен хушшинче ун пек нумай вăхăт ĕçлекен пулманха. Вăл редактор тивĕçне пурнăçласа пĕрремĕш страницăра умстатьясемпе пĕрлех хаçатăн ытти страницинче пысăк калăпăшлă, анлă содержаниллĕ материалсем час-часах пичетленĕ, республикăра тухса тăракан хаçатсемпе çыхăну тытнă. Редакторта ĕçленĕ çулсенче хăйне вăл сăпайлă ертӳçĕ пулнипе кăтартса панă.


Г. Егоров

Геннадий Андрияновича пирĕн çĕршывра 1991 çулта пулса иртнĕ улшăнусен вăхăтĕнче редактор пулса ĕçлеме тӳр килнĕ. Совет Союзĕ саланнă хыççăн тата коммунистсен партине ĕçлеме чарса лартнă май лару-тăру йывăрланнă. Раççейре рынок хутшăнăвĕсем аталанса пынă май пурлăхпа финанс тĕлĕшĕнчен район хаçачĕ панкрута тухма пултарнă. Çакă, паллах, редактора та, унта ĕçлекенсене те хумхантарнă. Çакăн пек лару-тăрура Г. Егоров редактор çухалса каймасть. Кирлĕ мерăсем йышăнас тĕлĕшпе майсем шырать.

1991 çулхи август уйăхĕн 31-мĕшĕнче халăх депутачĕсен район Совечĕн черетсĕр сессийĕ пулса иртет. Унта район хаçатне сыхласа хăварас ыйтăва пăхса тухаççĕ, халăх депутачĕсен район совечĕ хаçат учредителĕ пулмалли пирки йышăну кăларать, хаçат редакторне малтан ĕçленĕ Г.А. Егорова çирĕплетет. Çак сессинчех хаçат ятне улăштарасси пирки те сĕнӳсем пулаççĕ.

Г. Егоров редактор хаçат ятне улăштарас тенĕ тапхăрта яваплăха туйса тимлĕх кăтартать. Хаçат ятне улăштарас тĕлĕшпе пичет кăларăмĕ урлă хатĕрленӳ ĕçĕсем пулса пыраççĕ. Ку енĕпе район хаçатĕнче ятарлă дискусси уçăлать. Унта вулакан умне çакăн пек ыйтусем кăларса тăратаççĕ: хаçат ятне улăштармалла е çук, улăштарас пулсан мĕнле ят сĕннĕ пулăттăр?

Хаçат сотрудникĕсем кашни çырăва тĕплĕн тишкереççĕ, чылайăшне хаçатра пичетлеççĕ. Пĕр уйăх иртсен дискуссие пĕтĕмлетеççĕ. Шутласа пăхнă тăрăх пĕтĕм çыру авторĕсенчен çичĕ процентĕ хаçат ятне улăштарма килĕшмен. Ыттисем вара улăштарма сĕннĕ, хăйсен енчен çĕнĕ ятсен варианчĕсене асăннă. Тĕслĕхрен, А. Смирнова «Колхозник хаçачĕ», К. Верендеев «Çĕнĕ пурнăç», А. Егоров «Тĕрĕслĕх çулĕпе», В. Лаврентьев «Хăват», А. Ефимова «Тăванъен» тата ыттисем те.

Палăртмалла, çыру авторĕсенчен ытларахăшĕ Тăрăнта пурăнакан Антонина Ефимова сĕннĕ «Тăванъен» ята ырланă. Тепĕр хут анкетăсем çырсах тĕрĕслесен те ытларахăшĕ район хаçатне çак ята памаллине çирĕплетсе панă. Ку ыйтăва райсовет ĕçтăвкомĕн анлă ларăвĕнче пăхса тухнă хыççăн Шупашкар район хаçачĕ 1991 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен «Ленинецпа» мар, «Тăванъен» ятпа тухма пуçланă.

Çĕршывра пулса иртнĕ улшăнусем хыççăн район хаçачĕн тематикине урăхлатма тивнĕ. Çак ĕçе те Г. Егоров редактор яваплăха туйса асăрханулăн, тимлĕн пурнăçласа пынă. Ку енĕпе хаçат сотрудникĕсенчен çирĕп ыйтнă, асăрхаттарсах тăнă, общественăлла корреспондентсене те сĕнӳсем панă.

1992 çулта Геннадий Андрияновичăн пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Мартăн 20-мĕшĕнче халăх депутачĕсен 21-мĕш созывĕнчи район Совечĕн 9-мĕш сессийĕнче Г.А. Егорова, район хаçачĕн редакторĕ пулса ĕçленĕскере, депутата, халăх депутачĕсен район Совечĕн председательне суйлаççĕ. Çакăнта пĕр созыв ĕçленĕ хыççăн вăл Кӳкеçри ĕçпе тивĕçтерекен центра куçать. Кунта 1994-1997 çулсенче вăй хунă хыççăн тепĕр хут хăй юратнă ĕçе – жур-

налистикăна – таврăнать, «Тăван Ен» хаçатра яваплă секретарьте вăй хума пуçлать.

Г. Егоров сыравçă 1979 çулта Расçейри Журналистсен союзне кĕнĕ. Журналистикăра чылай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн ăна чылай хисеп хучĕпе, тĕрлĕ дипломпа наградăланă.



И. Никифоров тата Г. Семенов фотокорсем

# «Сассине нихăçан та хăпартмастчĕ...»

**Çирĕм çул патнелле «Тăван Ен» хаçатра ĕçленĕ, 1992-1993 çулсенче редакторта тимленĕ И.М. Михайлова аса илер-ха.**

Иван Михайлов 1934 çулхи мартăн 23-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Шăнакасси (халĕ Чăрăшкасси) ялĕнче колхозник çемйинче çуралнă. Выранти çичĕ çул вĕренмелли шкула, Çĕрпÿри педагогика училищине (1955), партин Чулхулари аслă шкулне (1970) вĕренсе пĕтернĕ. 1976 çулта СССР Журналистсен союзне кĕнĕ.



И. Михайлов

Вăл Çĕрпÿри педагогика училищине вĕренсе пĕтернĕ çулах ĕçе кÿлĕннĕ. Ăстакассинчи вăтам шкулта 5-7-мĕш класри ачасене вĕрентме пуçланă. Çулталăк патнелле ĕçлесен ăна шкулти аслă пионервожатăя уйăрса лартнă. Хаçатра вăй хурас туртăм та çак хушăрах çуралнă. Малтанлăха вăл районта тухса тăракан «Колхоз хаçачĕ» хаçат редакцийĕ ыйтнипе «шкул хыпарĕсем» рубрикăра кĕске заметкăсем пичетлесе кăларнă.

Вăхăт иртнĕçемĕн пионервожатăй-ялкора 1959 çулта район хаçатĕнче ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Малтанлăха вăл литсотрудник пулса вăй хурать, журналистикăра опыт пухса пынă май ăна яваплăрах ĕçе куçараççĕ. Редактор çумне çирĕплетеççĕ, парти пурнăçĕн пайне ертсе пыма шанаççĕ.

1962 çулта Иван Михайловичăн пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Элĕкпе Вăрнар районĕсене пĕрлештернине пула район хаçачĕ тухма пăрахать. Унăн çыравçă ĕçне пăрахма тивет. Сисмен хушăрах ăна ĕçе вырнаçма пулăшакан та тупăнать. Хăйĕнпе пĕрле Çĕрпÿри педагогика техникумĕнче вĕреннĕ юлташĕ Курган облаçне чĕнсе илет. Кунта вăл 1962-1965 çулсенче 8 çул вĕренмелли шкулта физкультура тата ĕç учителĕнче вăй хурать.

Чăваш çĕршывĕнче çуралса ÿснĕ чăваша тăван тавралăх хăйĕн патнеллех туртать. 1965 çулта Элĕк районĕ çĕнĕрен йĕркеленет, район хаçачĕ те тепĕр хут тухма тытăнать. И. Михайлов çыравçă тăван тăрăха таврăнсан район хаçатне ял хуçалăх пайĕн редакторĕ пулса ĕçе вырнаçать. 1966 çулта Иван Михайлович пурнăçĕнче каллех улшăну: КПСС Элĕк райкомĕн направленийĕпе партин Чулхулари аслă шкулне вĕренме кĕрет. Ку шкула вăл 25 предметран 21-шне чи лайăх паллăсемпе вĕренсе пĕтерет. Вăл КПСС Элĕк райкомĕн агитаципе пропаганда пайĕн пуçлăхĕн çумĕ пулса ĕçлеме вырнаçать.

1974 çулта Шупашкар районĕнче «Ленинец» ятпа тухса тăракан хаçат редакторĕ П. Матвеев чĕннипе вăл çак хаçата ĕçлеме куçать, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçе кÿленет. 1977 çулта парти пурнăçĕн пайне куçараççĕ, редактор çумне çирĕплетеççĕ. Иван Михайлович Шупашкар район хаçатĕнче икĕ теçетке çула яхăн, мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччене, ĕçлесе сумлă йĕр хăварнă. 1992-1993 çулсенче вăл хаçатăн тĕп редакторĕнче тăрăшнă. Çĕршывра пулса иртнĕ улшăнусем хыççăн вăл çулсенче хаçат редакторĕнче ĕçлеме çăмăлах пулманнине палăртас пулать. И. Михайлов район хаçатĕнче ĕçленĕ çулсенче эпĕ чи активлă ялкорсенчен пĕри пулнă. Редактор пирĕнпе сассине хăпартса калаçнине ас тумастăп. Вăл сăпайлă арçынччĕ, йăваш кăмăллă редакторччĕ. Пирĕн статьясене пичете хатĕрленипе пĕрлех хăй те анлă содержаниллĕ, аналитикăлла материалсем çыратчĕ.



# Çыравçă та, полиграфист та

**Рубрикăна малалла тăсса 1987-1991, 1993-1995, 1996-1999 çулсенче «Тăван Ен» хаçатра ĕçленĕ В.М. Савинкин пирки каласа парар-ха.**



В. Савинкин

Владимир Савинкин 1960 çулхи октябрĕн 5-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Серенкассинче кун çути курнă. Ялти тулли мар вăтам шкула, Мăн Этменти вăтам шкула (1978), Çĕмĕрлери автошкула (1979), И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУн историпе филологи факультетне (1987) вĕренсе пĕтернĕ. Вăтам шкул пĕтерсен пĕр вăхăт тăван колхозра вăй хунă.

Совет çарĕнче службăра тăнă вăхăчĕ 1979-1981 çулсемпе тĕл килет. Çартан таврăнсан Шупашкарти 1312-мĕш автоколоннăра водительте вăй хунă (1981-1987). Шаннă ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн ырă ята тивĕçнĕ. Ĕçленĕ хушăрах маларах асăннă аслă шкула пĕтернĕ.

Владимир Михайловичăн ĕçлĕ пурнăçĕнче 1987 çулта пысăк улшăну пулса иртет. Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн пурнăçне журналистикăпа çыхăнтарать. Çывăх юлташĕ чĕннипе тата хăйĕн çыравçă пулас ĕмĕтне пурнăçлас тĕллевпе Шупашкар районĕнчи «Ленинец» хаçата ĕçе вырнаçать. Кунта вăл малтан корреспондентра, каярахпа çырусен пайĕнче ĕçлет (1987-1989). 1989 çулта пурнăçĕнче каллех улшăну пулса иртет. Çак çул ăна республикăри «Хресчен сасси» хаçата ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Кунта вăл 1989-1993 çулсенче моральпе право пай заведующийĕнче вăй хурать, пичет ĕçĕнче чылай опыт пухать.

Пултарулăхне кура 1993 çулта В.М. Савинкин çыравçа Шупашкар районĕнче тухса тăракан «Тăван Ен» хаçат редакторне уйăрса лартаççĕ. «Ленинец» хаçат 1991 çулта «Тăван Ен» ятпа тухма пуçланă. 1993-1995 çулсенче вăл хаçатăн тĕп редакторĕнче вăй хурать. Паллах, вăл çулсенче райхаçатăн редакторĕ пулса ĕçлеме çăмăл пулман, 1991-1993 çулсенче арпашуллă улшăнусем пулса иртнĕ хыççăн çĕршыври чылай отрасль йывăрлăха кĕрсе ӳкет. Вăл шутра полиграфи те. Совет Союзне пĕтернĕ хыççăнхи çулсенче хаçатра пичетленекен материалсен тематикине чылай улăштарма тивнĕ. Çакна Владимир Савинкин редактор кирлĕ шайра тытса пыма тăрăшнă.

1995 çулта Владимир Михайлович ĕçне улăштарать. Вăл Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствинче пресс-служба ертӳçинче тăрăшма тытăнать. Унта 1996 çулччен вăй хурать. Пурнăç кустăрми ăна тепĕр хут Кӳкеçе çитерет. Виçĕ çул райхаçат редакторĕн çумĕнче вăй хурать.

Çав вăхăтри йывăр пурнăçа йĕркелесе пыма ăна çыравçă пулни кăна çителĕксĕр пек туйăнать. Малалли ĕмĕтне пурнăçлас тĕллевпе вăл 1999 çулта «Кугесьский издательский дом» типографие менеджер тата маркетинг пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçе вырнаçать. Унта 2005 çулччен вăй хурать, малашнехи ĕçе валли полиграфи тĕлĕшĕпе пысăк опыт пухать.

2005 çулта В. Савинкин уйрăм предприниматель пулса типографи уçать. Малтанлăха тĕрлĕ бланксем хатĕрленипех çырлахать. Çулран-çул типографи ĕçĕсем анлăлансах пыраççĕ. 2012 çулта «Своя типография» («Хамăн типографи») ООО хута ярать.

В.М. Савинкин – Раççей Журналисчĕсен союзĕн членĕ, Раççей Журналисчĕсен союзĕн Хисеп хутне илме тивĕç пулнă. Ăна çавăн пекех ВЛКСМ Тĕп комитечĕн «Пилĕкçуллăхăн çамрăк гвардеецĕ» (1983 ç.), РСФСР автомобиль транспорчĕн министерствин «За работу без аварий» III степеньлĕ знакĕсемпе наградăланă.

Владимир Савинкин – активлă общественик, Хĕрлĕ Чутайсен Шупашкарти «Чавал» ентешлĕхне йĕркелесе яраканĕсенчен пĕри, ентешлĕх канашĕн ертӳçин çумĕ. Чăваш наци конгресĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн председателĕн çумĕ, чăваш наци мероприятийĕсене ирттерме пулăшаканĕ, Чăваш Республикин патшалăх канашĕн, Культура министерствин Тав хучĕсен хуçи.

# Ăста журналист, профессиллĕ репортер

**Хаçатçăсем çинчен хайланă статьясен ярăмне малалла тăсса вулакана чылай вăхăт «Тăван Ен» хаçат редакторĕнче вăй хунă, халĕ Кӳкеçре пурăнакан Юрий Степанов-Листопадпа çывăхрах паллаштарар-ха.**

Юрий Петрович (Листопад – псевдоним) 1955 çулхи ноябрь уйăхĕн 9-мĕшĕнче Красноармейски районĕнчи Çирĕклĕ ялĕнче çуралнă.

Юрийĕн çырас туртăм ача чухнех çуралнă. Красноармейски шкулĕнче вĕреннĕ вăхăтра шкул хыпарĕсене районти «Ял пурнăçĕ» хаçатра пичетлеме тытăннă. Çар тивĕçне пурнăçласа вăл 1973-1975 çулсенче Казахстанри «Байконур» кос-



Ю. Листопад

модромра службӑра тӑнӑ. Запасри офицер. Ҫартан таврӑнсан 8 уйӑх «Ял пурнӑҫӗ» хаҫатра корреспондентра ӗҫленӗ. Аслӑрах юлташӗсем сӗннипе ӗҫлеме пӑрахсах И.Н. Ульянов ячӗллӗ ЧПУ историпе филологи факультетне вӗренме кӗрет, апла пулин те район хаҫачӗпе ҫыхӑну ҫирӗпленнӗ кӑна. Заметкӑсем ярсах тӑрать, вӗреннӗ вӑхӑтрах ҫыравҫӑ ӗҫне алла илес тӗлӗшпе тимлет. Архив справкинчен 1980 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнче университет ректорӗн приказӗпе Ю. Степанов студента «Ульяновец» хаҫат редакторне ҫирӗплетни паллӑ.

1981 ҫулта дипломлӑ специалиста «Коммунизм ялавӗ» республика хаҫатне направлени параҫҫӗ. Кунта вӑл пилӗк ҫул тӑрӑшса паха опыт пухать.

Шӑпа Юрий Степанов журналиста Чӗмпӗр облаҫне те илсе ҫитерет. Кунти Чӑнлӑ районӗнче тухса тӑракан «Заря коммунизма» хаҫатӑн яваплӑ секретарӗнче вӑй хурать, халӑхпа хутшӑнма ӳркенменскер, вырӑнти ҫыравҫӑсемпе туслашать. РФ Журналистсен союзӗн членӗ В. Данилов 2015 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнче, шӑп та шай Юрий Петрович 60 ҫул тултарнӑ тӗле, «Ӑсталӑху ҫӑлкуҫ пек вӑйлӑ таптӑр» ятпа «Ял пурнӑҫӗ» хаҫатра статья пичетлесе кӑларать.

1986 ҫулта ҫыравҫӑ шӑпи Ю. Листопада Шупашкар районне илсе ҫитерет. Кунта вӑл 1986-2004 ҫулсенче районти радиовещани редакторӗнче, «Тӑван Ен» хаҫатӑн яваплӑ секретарӗнче, редактор ҫумӗнче, ҫичӗ ҫул хаҫатӑн тӗп редакторӗнче ӗҫлесе сумлӑ йӗр хӑварать, ырӑ ята тивӗҫет. Вӑл район хаҫачӗн тӗп редакторӗнче ӗҫленӗ ҫулсенче «Тӑван Ен» хаҫатӑн тематики анлӑланать, содержанийӗ пуянланать, район хаҫачӗсен хушшинче пахалӑх енӗпе палӑрать, республикӑри тӗрлӗ конкурсра редакци пӗрре кӑна мар малти вырӑн йышӑнать. Кӳкеҫре ӗҫленӗ ҫулсенче Ю. Степанов тӗп редактор общество ӗҫне те хастар хутшӑннӑ, Чӑваш Республикин Журналистсен союзӗн правлени членӗнче тӑнӑ, 1990 ҫулта журналистсен пӗрлӗхне кӗнӗскер, журналистсен районти организацине ертсе пынӑ. Вӑл – республикӑри вӗсен союзӗн виҫӗ съезчӗн делегачӗ.

2004 ҫулта Ю. Степанов ҫыравҫӑ пурнӑҫӗнче пӗлтерӗшлӗ тепӗр улшӑну пулса иртет. «Хыпар» хаҫата ӗҫлеме чӗнсе илеҫҫӗ. Чӑваш халӑх хаҫатӗнче вӑл пенсие тухиччен политика тата общество пурнӑҫӗн пайӗн редакторӗнче вӑй хурать. Хӑй профессиллӗ репортер, яваплӑ ҫыравҫӑ пулнине тепӗр хут кӑтартса парать.

Ю. Степанов пичет ӗҫӗнче кӑна мар, литературӑра та палӑрнӑ. Унӑн хайлавӗсене шкул программисемпе вӗрентӳ пособийӗсене те кӗртнӗ. 1993 ҫулта чӑваш журналисчӗсемпе писателӗсен псевдонимӗсене тӗпчесе «Алга, Ахах… Камсем эсир?» словарь-справочник пичетлесе кӑларнӑ. «Хушма хушамат», «Халӑхран тухнӑ ӑсчах», «Тӑван кӗтес пилӗпе» тата ытти кӗнекисем халӑх хушшинче анлӑ сарӑлнӑ. Пултарулӑх ӗҫӗ-хӗлӗшӗн пилӗк медальпе чысланӑ. Вӗсен шутӗнче – Раҫҫей космонавтика федерацийӗн «СССР летчик-космонавчӗ А.Г. Николаев», «Хӗҫ-пӑшаллӑ вӑйсене – 90 ҫул» медальсем. Унӑн тӗрлӗ шайри хисеп хучӗсем тата диплом нумай: РФ Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин Чулхулари департаменчӗн, Раҫҫей олимп комитечӗн, тӗрлӗ министерствӑпа ведомствӑн тата ыт. те.



# «Хыпартан» – «Тӑван Ен» редакторне

**Рубрикӑна малалла тӑсса 2002-2009 ҫулсенче Шупашкар район хаҫачӗн тӗп редакторӗнче вӑй хунӑ Валерий Сорокин пурнӑҫӗпе, ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарар-ха.**



В. Сорокин

Валерий Сорокин 1954 ҫулхи январӗн 23-мӗшӗнче Патӑрьел районӗнчи Вӑтаел ялӗнче ҫуралнӑ. Туҫири вӑтам шкула пӗтерсен виҫӗ ҫул Челябинскри политехника институтӗнче вӗреннӗ. Шупашкарти электромеханика техникумне, И.Н. Ульянов ячӗллӗ ЧПУ экономика факультетне пӗтернӗ (1994 ҫ).

Журналист ӗҫне кӳлӗниччен Валерий Трофимович тӗрлӗ хулара тӗрлӗ должноҫре вӑй хунӑ. Шупашкарти электротехникума вӗренсе пӗтерсен Чулхулари автозавода ӗҫе вырнаҫнӑ. Каярах тӑван пиччӗшӗн йыхравӗпе Харьков хулине ӗҫе куҫнӑ, электромеханикре вӑй хунӑ.

Ҫуралса ӳснӗ вырӑн, тӑван кӗтес хӑйӗн патнеллех туртать. Валерий Сорокинпа та ҫаплах пулса тухнӑ. Вӑл 1980 ҫулта тӑван Шупашкара куҫса килсе ӗҫе вырнаҫать. 1994 ҫулччен тӗп хулари «Чӑвашкабельте», электроаппаратура заводӗнче, «Промтракторта» ӗҫлет. Ҫакӑнтан унӑн пурнӑҫӗнче пысӑк улшӑну пулса иртет. Ҫав ҫул И.Н. Ульянов ячӗллӗ ЧПУн экономика факультетне вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн чӑваш халӑхӗн «Хыпар» хаҫатне обозревателе, патшалӑх право пайӗн редакторне ӗҫлеме вырнаҫать. Унӑн ӗҫ тивӗҫне пурнӑҫлас тӗлӗшпе чылай вырӑна тухса ҫӳреме тивет – ҫитмен район та юлман. Унӑн журналист ӗҫӗнчи тӗп тӗллевӗ вырӑна тухса ял хуҫалӑхӗпе промышленноҫ предприятийӗсен объекчӗсен ӗҫне тишкерсе хак парасси пулнӑ. Ҫавна май унӑн чылай материалӗ критикӑлла та пулса тухнӑ. Пирӗн Ишекри «Слава» колхозӑн Хураҫырмари сысна ферминчи лару-тӑру пирки тиркевлӗ материал ҫырса кӑларнине лайӑх ас тӑватӑп. Республика хаҫатӗнче сакӑр ҫул вӑй хурса хӑйӗн тавракурӑмне чылай анлӑлатать, пултаруллӑ та тӑрӑшуллӑ обозреватель-репортер пулнине ҫирӗплетсе парать.

Пурнӑҫ шӑпи В. Сорокин ҫыравҫа ҫакӑн хыҫҫӑн Шупашкар районне илсе ҫитерет. 2002 ҫулта ӑна «Тӑван Ен» хаҫатӑн тӗп редакторне ҫирӗплетеҫҫӗ. Редактор ӗҫне пысӑк ҫӗкленӳпе пуҫӑнать вӑл, хаҫат историйӗнче пӗлтерӗшлӗ йӗр хӑварать. Тӗп редактор пулнӑ хушӑрах вӑл умстатьясем ҫырнипе кӑна ҫырлахмасть, пахалӑхлӑ, анлӑ содержаниллӗ статьясем те

пичетлесе кăларать. 2009 çултан район хаçачĕн редакторĕсене ĕçе конкурс витĕр илес йĕрке вăя кĕрет. Çак çул унăн урăх ĕçе куçма тивет.

## Çыравçă та, драматург та...

**Тепĕр тĕрленчĕкĕмре 2009-2010 çулсенче хаçатăн тĕп редакторĕнче тимленĕ Б.Б. Чиндыков çинчен аса илтерем-ха.**

Борис Чиндыков Етĕрне районĕнчи Палатай ялĕнче 1960 çулхи август уйăхĕнче çуралнă. 1977 çулта вырăнти вăтам шкула, 1984 çулта Мускаври А.М. Горький ячĕпе хисепленекен литература институтне вĕренсе пĕтернĕ. 1990 çулта Чăваш писателĕсен союзĕн членĕсен ретне тăнă. Борис Борисович драматурги, проза, литература критикин жанрĕсемпе ĕçленĕ, ĕçлет те. 1985 çулта вăл Чăваш АССР-ĕн писательсен союзĕнче литература консультанчĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Виçĕ çул çак ĕçре вăй хурать, 1988 çулта ăна республикăра тухса тăракан «Тăван Атăл» журналта литература критикипе публицистика пайĕн редакторĕ пулма шанаççĕ.


Б. Чиндыков

Борис Борисович хăйĕн пултарулăхне çĕнĕ хаçат кăларас енĕпе тĕрĕслесе пăхать. 1990 çулта «Аван-и» хаçат кăларма тытăнса редактор ĕçне туса пырать. Çав вăхăтрах 1992-1993 çулсенче рекламăпа пĕлтерÿсем кăларас тĕлĕшпе те тăрăшулăх кăтартать. Вăл 1994-1997 çулсенче Чăваш Республикин культура министерстви çумĕнчи «Лик Чувашии – литература, искусство, культура» журналăн тĕп редакторĕнче тимлет. Ун хыççăн вунă çул ытла Мускавра пурăнать, Раççейри Турци фирмисенче куçаруçă, реклама директорĕ пулса вăй хурать.

2009 çул шăпа Борис Чиндыкова Шупашкар районне илсе çитерет. Шăпах çав вăхăтра «Тăван Ен» хаçатăн тĕп редактор вырăнĕ пушă пулнă. Конкурсра çĕнтерсе вăл тĕп редакторăн пуканне йышăнать. Ĕçе пысăк çĕкленÿпе кÿлĕнет вăл. 2009-2010 çулсенче «Тăван Ен» хаçатăн тĕп редакторĕн тивĕçĕсене пурнăçласа вăл хаçат историне палăрмаллах тарăн йĕр хăварать, хаçат ĕçне чылай пысăк çĕнĕлĕх кĕртет. 2010 çулхи январьтен тытăнса район хаçачĕ эрнере пĕр кун 16 страницăпа тухма тытăнать. Çав вăхăтрах «Кугеси плюс» («Причебоксарье») ятпа вырăсла хаçат та кун çути курать. Борис Чиндыков редактор çак çĕнĕлĕхсене ĕçе кĕртес тĕлĕшпе пуçарулăх кăтартса тăрăшать. Анчах районта «Тăван Ен» хаçат пирки шăв-шав пуçланать. Çакна шута илсе Борис Борисович хăйĕн ирĕкĕпех редактор ĕçне пăрахать. Апла пулин те журналистикăран уйрăлмасть вăл. 2011-2014 çулсенче И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен университетăн журналистика факультетĕнче студентсене тĕрлĕ дисциплинăна вĕрентет.

2014 çулта журналистика факультечĕ хупăнать. Преподаватель ĕçне пăрахма тивет. 2015 çултанпа «ЛИК – литература, искусство, культура» журналăн редактор-составителĕ пулса вăй хума тытăнать.

Борис Борисович ку таранччен журналистикăра кăна мар, литературăра та ăнăçлă ĕçлесе палăрчĕ. Вăл «Çатан карта çинчи хура хăмла çырли» (1982), «Çур çĕр хыççăнхи апатлану» (1983), «Алăсем умĕнче» (1985), «Чÿк уйăхĕ» (1987), «Hotel Chuvashia», «Урасмет» (1989), «Хура чĕкеç» (2002), «Тухса кайиччен» (2009) кĕнекенсен авторĕ. Унăн «Çатан карта çинчи хура хăмла çырли» пьесине артистсем Чăваш академи театрĕн сцени çинче выляса панине эпĕ паян та манмастăп-ха. Унăн сăввисемпе чăваш композиторĕсем чылай юрă шăрçаланă. 2008 çулта Чăваш патшалăх филармонийĕнче Б. Чиндыков либреттипе концерт лартнă. «Нарспи» мюзикл вара (композиторĕ – Н. Казаков) паян кун та сцена çинче пырать, ăна çамрăксем уйрăмах килĕштереççĕ.

«Çатан карта çинчи хура хăмла çырли» пьесăшăн çыравçă 1993 çулта Чăваш республикин патшалăх премине тивĕçнĕ.

## Пĕрремĕш хĕрарăм-редактор

**Рубрикăна тăсса 2010 çулта ĕçе кÿлĕннĕ, район хаçачĕн историйĕнче пĕрремĕш хĕрарăм-редактор пулса вăй хунă А.А. Сусметова çинчен каласа парам-ха.**

Алина Сусметова 1980 çулхи январь уйăхĕн 23-мĕшĕнче Елчĕк районĕнчи Кивĕ Эйпеç ялĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкула, 2002 çулта И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен ЧПУ-н журналистика факультетне вĕренсе пĕтернĕ. 2005 çултанпа – РФ Журналисчĕсен союзĕн членĕ.


А. Сусметова

Çырас туртăм Алинăн 10-мĕш класра вĕреннĕ чухне район хаçатĕнче «Кивĕ эйпеçсем ăмăртаççĕ» ятпа заметка пичетлесе кăларнă хыççăн вăраннă. Вăтам шкула вĕренсе пĕтерсен амăшĕ кăмăлсăррине пăхмасăрах ЧПУ-ри журналистика факультетне вĕренме кĕнĕ. Студент чухнех Елчĕк район хаçачĕпе çыхăну тытнă, вăхăтранвăхăта статьясем пичетлесе кăларнă.

Алина Ардалионовна журналист ĕçне 5 курсра ăс пухнă чухнех кÿлĕннĕ, 2001 çулхи сентябрь уйăхĕнче Шупашкар районĕнчи «Тăван Ен» хаçата ĕçе вырнаçнă. Вĕренсе пĕтерсен кунтах экономика тата ял хуçалăх пайĕн корреспондентĕнче ĕçлеме тытăннă. Тĕрлĕ

çулсенче пай редакторĕ, яваплă секретарь, редактор çумĕ пулса ĕçленĕ. Материалсем пухас тĕлĕшпе хаçатăн ытти сотрудникĕ пекех тĕрлĕ вырăна тухса çÿренĕ, район пурнăçĕпе тата аталанăвĕпе тĕплĕнрех паллашнă. Çакă ăна журналист ĕçĕнче çав тери пулăшнă.

2010 çулта Алина Сусметова пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. «Тăван Ен» хаçатăн тĕп редакторĕнче вăй хунă Б. Чиндыков тĕрлĕ сăлтава пула хăй ирĕкĕпе ĕçрен тухать, çавна май тĕп редактор ĕçĕсене пурнăçлама пултаракана шырама тивет. Конкурсри ыйтусене тивĕçлĕ хурав парса Алина Ардалионовна «Тăван Ен» хаçатăн тĕп редакторĕ пулса тăрать. Шупашкар районĕн историне, унăн аталанăвне тата çыннисене лайăх пĕлни çак ĕçре пысăк пулăшу кÿрет.

Çакна палăртмалла: Алина Сусметова «Тăван Ен» хаçатăн редакторĕ пулса ĕçлеме тытăниччен район историйĕнче хаçат редакторĕнче хĕрарăм ĕçленĕ тĕслĕх пулман. Çĕнĕ ĕçе пысăк хавхаланупах тытăнать çамрăк. Хаçат ĕçне йĕркелесе пырас тĕлĕшпе арçын редакторсенчен пĕртте кая юлмасть. Ĕçтешĕсемпе, обществăлла корреспондентсемпе пĕр чĕлхе тупать, хаçат ĕçне лайăхлатма меслетсем шырать. Вăл «Тăван Ен» тата «Причебоксарье» ятпа тухакан икĕ хаçата пĕрлештерсе пĕр хаçат туса хурать.

2012 çулта Алина Сусметова редактор пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Унăн декрет отпускне кайма тивет. 2014 çулта вăл пĕр хушă ĕçе тухать, унтан каллех декрета каять. «Тăван Ен» хаçатăн пĕрремĕш хĕрарăм-редакторĕ халĕ 2 ывăл çитĕнтерет. Тĕлĕнмелле те, унăн кĕçĕн ывăлĕ шăп та шай июлĕн 27-мĕшĕнче, район хаçачĕ тухма пуçланă уйăхра, числара çут тĕнчене килнĕ.

Алина Ардалионовнăна журналистика ĕçĕнче тата район хаçатне ертсе пынă тапхăрта тимлĕхпе пултарулăх кăтартнăшăн 2007 çулта ЧР Физкультурăпа спорт министерствин, 2010 çулта ЧР Культура министерствин, РФ Журналистсен союзĕн Хисеп хучĕсене парса чысланă. 2002, 2007, 2009 çулсенче вăл ЧР Президенчĕн пултаруллă çамрăксене уйрăм ăнтăлулăхшăн паракан стипендине илсе тăнă.



**Ĕç саманчĕ. Редакци çамрăк коллективĕ, 2006 ç. А. Изман, Е. Макарова, А. Сусметова, В. Иванова**



# Ертÿçи мĕнле – коллективĕ те çапла

**Асăннă рубрикăна вĕçлесе халĕ тĕп редакторта вăй хунă Татьяна Геннадиевна Вашуркина çинчен пырĕ сăмах.**

Татьяна Вашуркина 1982 çулхи май уйăхĕн 14-мĕшĕнче Шăмăршă районĕнче Шăмăршă салинче çуралнă. 1999 çулта Шăмăршăри вăтам шкула вĕренсе пĕтерсе И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетне ăс пухма кĕнĕ.

Çырас туртăм унăн шкулта вĕреннĕ чухне пуçланнă, 8 çултах пĕчĕк хĕр сăвăсем калăпланă, Шупашкарта тухса тăракан «Школьники» кăларăмпа тачă çыхăну тытнă, районти «Шăмăршă хыпарĕ» хаçатра заметкăсем пичетленĕ. Районта иртекен сăвăçсен конкурсĕсенче яланах çĕнтерÿçĕсен йышне кĕнĕ, шкул хыççăн диктор пулма ĕмĕтленнĕ.



**Т. Вашуркина**

Татьяна Вашуркина журналистикăна пурнăçĕнчи тĕп ĕç тăвас тĕллевпе 1999 çулта И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетне вĕренме кĕрет. Кунта ăс пухнă вăхăтра хастарлăх кăтартать: наукăпа практика конференцийĕсене хутшăнса пĕрре мар çĕнтерÿçĕ пулса тăрать. Университетра вĕреннĕ çулсенче вăл çырнă очерк «Их подвиг бессмертен» (редакторĕ И.Я. Тенюшев) сборникре пичетленсе тухать. Виççĕмĕш курсра вĕреннĕ чухне республикăра тухса тăракан «Кладовая природы» хаçатра корректор пулса вăй хурать. Çав вăхăтрах республикăри «Чувашия» радиопа телевидени компанине штатра тăман корреспондент пулса вырнаçать. Çак ĕçре пултаруллă репортер пулнине çирĕплетсе парать, пĕр кунра икĕ чĕлхепе тăвată репортаж таран хатĕрлеме ăсталăх çитерет.

2005 çулта Татьяна Геннадиевна пурнăçĕнче улшăну пулса иртет. Çак çулхи август уйăхĕнче «Чувашская энергосбытовая компания» ОАО пресс-службине общественноçпа, МИХсемпе çыхăну тытакан специалиста вырнаçать. Çак ĕçре вăл пĕр улшăнмасăр 2012 çулччен ĕçлесе пултаруллă та тăрăшуллă специалист пулнине кăтартса парать. Палăртса хăвармалла, вăл вăй хуракан пресс-служба Раççей шайĕнче малтисен ретĕнче тăнă, тĕрлĕ конкурсра призер вырăнĕсене йышăннă.

2012 çулта пурнăç кустăрми ăна Шупашкар районне илсе çитерет. Журналистика енĕпе аслă пĕлÿ илнĕскере, опыт пухнăскере «Тăван Ен» хаçатăн пуçласа йĕркеленнĕ сайт редакторне, виçĕ уйăхран тĕп редакторĕн ĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлама çирĕплетеççĕ, каярахпа тĕп редактор тивĕçне шанаççĕ.

Хальхи саманара рынок системи хуçаланнă тапхăрта район хаçачĕн тĕп редакторĕ пулса ĕçлеме çăмăлах мар. Апла пулин те Шупашкар район хаçачĕн иккĕмĕш хĕрарăм-редакторĕ Т. Вашуркина çухалса каймасть. Мал-

танхи кунранах яваплăха туйса ĕçлеме тытăнать. Çакă ăна çитĕнӳсем тума май парать те. Вăл редакторта ĕçленĕ çулсенче «Тăван Ен» хаçат ĕç-хĕлĕнче чылай лайăххи пулса иртет. Кĕске вăхăтра хаçат сайчĕ йĕркеленет. Хальхи вăхăтра сайт массăллă информаци хатĕрĕсен сайчĕсенчен чи оперативли шутланать. Хаçат тиражĕ çулсерен ӳссе пырать. Çакна тума хаçат тавра тĕрлĕ мероприятие ĕçе кĕртни чылай пулăшнă. Тĕслĕхрен, редакци хаçат çырăнтарас тĕлĕшпе Ишлей райповĕпе килĕшӳ туни, почтальонсен хушшинче ытларах хаçат çырăнтарас тĕлĕшпе конкурс, вулакансен хушшинче лотерея вылявне йĕркелени. Çитĕнӳсем, паллах, хаçатăн тĕп редакторĕ яваплăха туйса ĕçлениччен нумай килнĕ.

2013 çулта «Тăван Ен» хаçат «Золотой фонд прессы» конкурса хутшăнса çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. Çак ята 2014-2016 çулсенче те сыхласа хăварнă. Юлашки виçĕ çулта хаçат ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин грантне тивĕçнĕ – пурĕ 550 пин тенкĕ. РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерствин республикăри тĕп управленийĕн, ЧР Çут çанталăк, ЧР Шалти ĕçсен министерствисен дипломĕсене тивĕçнĕ. Кăçал наци ĕçĕсемпе ĕçлекен федераци агентстви «Тăван Ен» хаçата Раççейре наци чĕлхисемпе тухса тăракан паллă МИХсем шутне кĕртнĕ. Кунсăр пуçне район хаçатне çĕршыври журналистсем те пĕлме пуçланă, редакцире подписчиксемпе ирттерекен ĕçсем пирки Раççейри «Журналистика и медиарынок» журналта тăтăшах статьясем пичетленеççĕ. Çаксене пурне те Татьяна Геннадиевна коллективăн çитĕнĕвĕ тесе йышăнать. «Редакцири кашни сотрудник питĕ хаклă, пĕр шухăшлă пулса ĕçлени кăна лайăх кăтартусемпе палăрма пулăшать», – тет вăл редакци ушкăнĕпе мăнаçланса. Редакторĕ мĕнле, коллективĕ те çапла ĕнтĕ. Пултарулăхпа тăрăшулăх кăтартса ĕçленĕшĕн Татьяна Вашуркинăна тав хучĕсемпе, 2015 çулта ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп грамотипе чысланă.

2017 çулхи февраль уйăхĕнче ăна «Хыпар» издательство çуртне ертсе пыма шанаççĕ.




**2016 çулта «Тăван Ен» çĕршывра тухса тăракан «Журналистика и медиарынок» журнал страницисене лекрĕ**



# Ĕнерхи чи çамрăк ялкор, лауреат – паян редактор

**«Тăван Ен» хаçат редакцийĕнче хальхи вăхăтра вăй хуракансем пирки çырнă очерксен ярăмне тăсса Виктория Анатольевна Вышинская-па паллаштарар.**



**В. Вышинская**

Черетлĕ очерк геройĕ 1982 çулхи июнь уйăхĕн 8-мĕшĕнче Йĕпреç районĕнчи Çăкалăх ялĕнче çуралнă. Пурнăçне журналист, хаçатçă ĕçĕпе çыхăнтарас тĕллеве вăл шкулта вĕреннĕ вăхăтрах хăйĕн умне лартать: «Хунав» литпĕрлешĕвĕн чи хастар членĕсенчен пĕри, кружок старости пулса тăрать... Сăвăсем çырнă хушăрах тăваттăмĕш класран районти «Çĕнтерӳшĕн» хаçата заметкăсем шăрçалама пуçлать, тăрăхри паллă çынсемпе интервьюсем хатĕрлет. Улттăмĕш класра вĕреннĕ чухне, хаçат юбилейне халалланă уявра, ун чухне ентешĕсем „Тумаланова" хушаматпа пĕлнĕ вырăнти корреспондента Йĕпреç районĕн Хисеп грамотипе те чыслаççĕ, тепĕр çулах вăл ача-пăча валли çырнă чи лайăх хайлавшăн «Çилçунат» журналăн Трубина Марфи ячĕллĕ премийĕн чи çамрăк лауреачĕ пулса тăрать – автор республикăри пичет кăларăмĕсемпе те тачă çыхăну тытнă, çамрăк çыравçăсен, калем ăстисен тĕп хулара ирттерекен тĕл пулăвĕсен кĕтнĕ хăни пулнă. Çĕнĕ çитĕнӳсем тума ăна çакă хавхалантарать те. Аслăрах классенче чăваш халăх историйĕпе тарăн кăсăкланма тытăнать, çак темăпа çыхăннă истори очеркĕсене çырса пăхать. Тăххăрмĕш класра вăл «Атăлçи Пăлхар патшалăхне – 1100 çул» республика конкурсĕнче çĕнтерсе Хура тинĕс хĕрринчи «Артек» кану лагерĕнче канма путевка хуçи пулса тăрать.

Журналист пулас тĕллевпех шкулта вĕреннĕ хушăрах И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУн «кĕçĕн журфак» хатĕрлев курсне çӳрет, университетăн «Ульяновец» хаçачĕпе çыхăну тытать. Экзаменсене ăнăçлă тытса вĕренме кĕрет. Студент статйисем «Ульяновецра» пичетленсе тăраççĕ, очеркĕсем – И.Я. Тенюшев доцент редакциленĕ «Их подвиг бессмертен» кĕнекере. Ĕçпе вĕренĕве тĕрĕс йĕркелени ăна аслă шкулта ирттерекен ăслăлăхпа практика конференцийĕнче те çĕнтерме май парать: хăйĕн отраслĕсенче вăл икĕ хут диплома тивĕçет.

Пĕрремĕш курс хыççăнах производство практикине «Хыпар» хаçатра ирттерме шут тытса пĕрре те йăнăшмасть калем ăсти. Хăйне лайăх кăтартнине кура икĕ çултанах ăна республикăн тĕп издательство çурчĕн унченхи гендиректорĕ А. Леонтьев «Çамрăксен хаçатне» çур став-

кăпа ĕçлеме йышăнать. Издательство çурчĕн общество пурнăçне те хастар хутшăнать çĕнĕ ĕçчен. Раççей журналисчĕсен Чĕмпĕрте иртнĕ спартакиадинчен вĕсен команди виççĕмĕш вырăнпа таврăнать. Очко пухма пулăшнă корреспондент вара 300 метрлă дистанцире финиша чи малтан чупса çитет. Университет сĕннипе Тумаланова ЧР Президенчĕн уйрăмах пултаруллă çамрăксене паракан стипендине тивĕçнĕ пин çамрăк йышне кĕрет. Пурĕ çак хавхаланăва вăл виçĕ хутчен те тивĕçет. Иккĕмĕш хутĕнче унăн кандидатурине «Хыпар» редакцийĕ сĕнет, кунтанах пултаруллă корреспондента – «хĕрлĕ дипломлă» специалиста – ЧР Журналистсен союзне илеççĕ. Çак тапхăрта çемье çавăрса Вышинская пулса тăнăскере стипендиатсен йышне виççĕмĕш хут «Тăван Ен» хаçат редакцийĕнчен илеççĕ. Шăп çак çул, 2011 çулхи çуркунне, ăна «Тăван Ен» хаçатăн редакторĕн – тĕп редакторĕн çумĕн должноçне сĕнеççĕ.

МИХ тытăмĕнче нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленине тата тăрăшулăха кура 2015 çулта ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви ăна Тав хучĕпе хавхалантарать. Хаçат ĕçĕнче Вышинская таврапĕлӳ, несĕлсен тĕпчевĕн тематики, чăваш халăхĕ пулса кайнин историйĕ патне таврăнсах тăрать. Çакăншăн ăна Чăваш Республикинчи таврапĕлӳçĕсен пĕрлĕхĕ 2016 çулта Никита Бичурин востоковед ячĕллĕ орденпа чысларĕ. 2017 çул та Виктория Вышинскаяшăн ăнăçлă пуçланчĕ. Раççей тата чăваш пичечĕсен кунне халалланă уявра ăна ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ А.С. Иванов коррупципе кĕрешес ыйтусене анлă çутатас тĕлĕшпе иртнĕ республика конкурсĕнче çĕнтернĕшĕн дипломпа тата хаклă парнепе чысланă. Февраль уйăхĕнче ведомство ертӳçин хушăвĕпе Виктория Анатольевна Вышинскаяна «Тăван Ен» хаçатăн тĕп редакторĕн тивĕçĕсене пурнăçлама çирĕплетрĕç.



Чыслав саманчĕ, 2016 ç.




П. Павлов


Л. Белов


А. Павлов

# Хаçат ĕçтешĕсем – район летописçне тăсакансем

**Журналистсем пурте район историйĕн летописçне малалла аталантарас тĕлĕшпе чылай ĕç туса ирттернĕ, хаçат ĕçне чунтан парăннă çыравçăсем пулса тăнă – район хаçачĕн историйĕнче таран йĕр хăварнă. Хаçатăн çакăн пек ĕçтешĕсен йышне иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче вăй хунă А. Алексеев, А. Павлов, А. Михайлов, И. Кузнецов, А. Изоркин, Х. Лисин, П. Васильев, З. Митрофанова, Л. Белов, А. Тимофеев, В. Савельева тата ыттисем те кĕнĕ.**

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче те район хаçатĕнче пултаруллă та тăрăшуллă журналистсем йышлă вăй хунă. Вĕсен йышĕнче Г. Чаржов, Л. Белов, А. Павлов, Г. Мальцев, З. Митрофанова, П. Васильев, Ф. Комаров т.ыт.те.

80-90 çулсенче редакцире И. Михайлов, В. Савинкин, Л. Белов, П. Павлов, Ю. Степанов, Н. Миронов, Г. Львова, М. Егорова, В. Иванова, В. Петров


Кӳкеç типографийĕн тата редакци коллективĕ, 1983 ç.



**Редакци коллективĕ, 2007 ç. Çӳлти ретре сулахайран: А. Изман корреспондент, М. Иванова калаплавçă, А. Сусметова корреспондент, Е. Макарова бухгалтер, М. Тинеспи корректор; аялти ретре: Ю. Михайлов корреспондент, В. Иванова корреспондент, В. Сорокин тĕп редактор, М. Егорова электронлă майпа текстсене наборлакан оператор**

пултарулла хаçатçăсем ĕçленĕ.

2000 çулсенче те район хаçатĕнче тивĕçлĕ пĕлӳллĕ, пысăк опыт пухнă ăста специалистсем М. Егорова, П. Павлов, В. Иванова, А. Изман, А. Сусметова, М. Иванова, И. Петрова, Ю. Михайлов, Л. Сачкова, Л. Лукина вăй хунă. Çĕнелӳ тапхăрĕнче нумай вăхăт ĕçлемен, анчах та кĕске хушăрах, 2010 çулта, ун чухне тĕп редакторта ĕçленĕ Б. Чиндыковпа пĕр шухăшлă пулса хаçат сăнне тĕпрен улăштарнă В. Бычков дизайнер ятне те асăнмалла.

2010 çулсенче хаçат редакцийĕнче туслă коллектив йĕркеленнĕ, хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕсен йышĕ те çамрăк çыравçăсемпе тулнă. Паянхи «Тăван Ен» хаçатăн ĕçтешĕсен вăтам çулĕ – 36. Паянхи кун тĕлне кунта хаçата пичете хатĕрлес тапхăрта ятарлă журналистика пĕлĕвĕллĕ специалистсем тăрăшаççĕ.



Л. Сачкова



Г. Львова



В. Бычков



# «Тăван Енпе» – çур ĕмĕр ытла

**Çулсеренех Чăваш Енре январь уйăхĕн 3-мĕш вырсарни кунĕнче Чăваш пичетĕн кунне паллă тăваççĕ. «Тăван Ен» хаçат Шупашкар районĕнче пурăнакансемшĕн информаци илмелли тĕп çăл куçсенчен пĕри пулса тăрать. Çитес июль уйăхĕн вĕçĕнче вăл 82 çул тултарĕ. Информаци технологийĕ вăйлă аталаннă ĕмĕрте район хаçачĕсем тиражĕсене сыхласа хăварни тем пекех паха. Пĕр ĕмĕре яхăн вăхăтра редакцире чылай журналист вăй хунă, пултарулăхне туптанă. Вĕсенчен пĕри – Толик Хураскинче пурăнакан, хаçатра 32 çул яваплă секретарьте ĕçленĕ Павел Васильевич Васильев.**




П. Васильев

***– Павел Васильевич, район хаçачĕпе мĕнле туслашса кайнă эсир?***

– Пĕчĕк чухнех çырас туртăм пурччĕ манăн, анчах тĕллеве пурнăçа кĕртме çăмăл пулман, мĕншĕн тесен эпĕ – вăрçă ачи. Çемье пысăкчĕ: 5 хĕрпе 3 ывăл. 1942 çулта 5-мĕш класс пĕтернĕ хыççăн малалла вĕренеймерĕм. Атте вилчĕ, йăмăк 8 уйăхра юлчĕ, шăллăм та пĕчĕккĕччĕ, пĕтĕм йывăрлăх анне çине тиенчĕ. Вăл фермăна ĕçлеме каятчĕ, эпĕ вара шăллăмпа йăмăка пăхаттăм...

1951 çулта 20 çул тултарсан салтака кайма ят тухрĕ. 3 çул та 8 уйăх Украинăра хĕсметре тăнă хыççăн яла таврăнса 1-2 çул колхозра вăй хутăм. Унтан вара Шупашкарти çамрăк рабочисен каçхи вăтам шкулĕнче вĕрентĕм. 1958 çулта район хаçатне чĕнсе илчĕç. Паллах, ăнсăртран туман çак йышăнăва, пичет кăларăмне çыркаласа тăнипе йыхравланă. Пĕрремĕш сăвва эпĕ 14 çулта çырнă, анчах тӳрех пичетлемен, 1948 çулта тин район хаçатĕнче кун çути курнă вăл.

***– Ĕнерхи тата паянхи хаçат. Уйрăмлăх пур-çке...***

– Вăрăм ĕмĕрлĕ хаçатăн пурнăçĕнче чылай улшăну пулнă. Пĕр вăхăт эрнере 2 хутчен тухатчĕ вăл, кăшт каярах 3 хутчен те пичетленнĕ... Хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ 32 çулта 7 редактор улшăнчĕ.

***– Информаци технологийĕ хăвăрт аталанни хаçат-журнал ĕçне те палăрăмлă витĕм кӳчĕ. Ал çырăвĕсене алăпа çырасси, машинкăпа наборласси историе кĕрсе юлчĕç..***

– Алăпа наборлаттăмăр, полоса-



ри йӗркесене строкомерпа виçеттӗмӗр. Почеркесене вулаймасӑр «аптӑранӑ» самантсем те пулнӑ. Хаçат кӑларнӑ кун киле каçхине 10 сехетре, çур çӗрте те кайкаланӑ.

***– Пуринчен ытла мӗнле темӑпа çырма килӗштернӗ?***

– Эпӗ ялта çуралнӑ, унтах тӗпленнӗ, çавӑнпа та ял пурнӑçӗ маншӑн паянхи кунччен те çывӑх. Çак темӑпа тӗрленчӗксем, очерксем, калавсем шӑрçаланӑ.

***– Хаçат ӗçӗнче чи кӑткӑсси мӗн?***

– Хамӑн сӑвӑ йӗркисемпе хуравлас килет:

*Хаçатра ӗçлесе хаçатлантӑм,*
*Сӑввӑма хӑварса ырана.*
*Пусӑм çўççӗр юлсан тин ӑнлантӑм –*
*Икӗ ӗç çӑмӑл мар пӗр çынна.*

Çапах та манӑн çакӑн пек шӑпа пулнӑшӑн нимӗн чухлӗ те ўкӗнместӗп. Пичет кӑларӑмӗнче ӗçлесси манӑн ӗмӗт пулнӑ. Çакӑн пирки çамрӑк чухне пӗлӗшӗме каланӑччӗ.

***– Ӗçре савӑнмалли те, пӑшӑрханмалли те пулать...***

– Хаçатра пичетленнӗ материалсене вулакансем ырласан хӗпӗртенӗ эпӗ. Вӗсен хаклавӗ – маншӑн чи пахи.

***– Пӗрле тӑрӑшнӑ ӗçтешсенчен камсене асӑннӑ пулӑттӑр?***

– Эпир практиксем пулнӑ, ун чухне журналиста ятарласа вӗрентмен. Петр Матвеев, Геннадий Егоров редакторсене, Артем Алексеев, Иван Михайлов ӗçтешсене асӑнма пултаратӑп.

***– Эсир журналистика анине вун-вун çул «сухаланӑ» калем ӑсти. Паянхи хаçата хакланине илтес килет...***

– 1991 çулта пенсие тухнӑранпа пӗр çул та «Тӑван Ен» çырӑнмасӑр юлман, вӑл шанчӑклӑ тус пекех. Хаçат калӑпӑшлӑ, икӗ тӗспе тухни килӗшет. Ӗмӗре ялта иртternӗрен ял пурнӑçӗ çинчен çырнине вулама кӑмӑллатӑп. Уйрӑмах штатра тӑман корреспондентсен статйисене, паллӑ çынсемпе интервью хатӗрленине килӗштеретӗп.

***– Пичет кунӗ умӗн журналистсене мӗн сӗннӗ пулӑттӑр?***

– Лайӑх та интереслӗ материалсем çырмалла пултӑр, хӑш-пӗр чухне критика статйисем те вырӑнлӑ, мӗншӗн тесен вӑл çитменлӗхсене пӗтерме пулӑшать.

**ЛЮБОВЬ СЕМЕНОВА КАЛАÇНӐ**

*(«Тӑван Ен», январӗн 17-мӗшӗ, 2014 ç.)*



# Уншӑн пур тема та шӑл çемми

**«Тӑван Ен» хаçатра тӗрлӗ псевдонимпа – Любовь Ман, Любовь Городищенская, Анфиса Манякова – пичетленекен хыпарсен тата общество пурнӑçӗн пай редакторӗ Любовь Петровна Семеновӑн журналистикӑри ӗç стажӗ пӗр теçетке çул урлӑ каçнӑ ӗнтӗ.**

Пӗтӗмпех мӗнрен пуçланнӑ-ха? Лаша пуласси тихаран паллӑ тенӗ евӗр шкулта вӗреннӗ чухнех хӗр пӗрчи кам пуласси паллӑ пулнӑ: тӗрлӗ статья-очерк шӑрçалас туртӑм палӑрнӑ, вӑл вӑйланса пынӑ май унӑн статйисем Тутар Республикинчи «Тӑван ен», Чӑваш Енри «Тантӑш» хаçатсенче пичетленнӗ. Çавӑнпа та кӗмӗл медальпе вӑтам шкул пӗтерсен ӑста вӗренме каяссипирки пуç çӗмӗрттерме лекмен, çул тўрех Шупашкарти И.Н. Ульянов ячӗллӗ ЧПУн журналистика факультетне выртнӑ. Пилӗк çулта пултарулӑхне аталантарса, республика кӑларӑмӗсенче тӑтӑшах пичетленсе – «Чӑваш хӗрарӑмӗ», «Хыпар», «Ульяновец», «Тантӑш» хаçатсенче – диплом илсенех, 2006 çулта, «Хыпар» издательство çурчӗн хроника пайӗн корреспондентне вырнаçнӑ. Унта ӗçленӗ çулсенче республикӑн тӗрлӗ кӗтесне командировкӑпа çитнӗ, такам та вырӑн тупнӑ унӑн статйисенче – артистсем, паллӑ спортсменсем...



Л. Семенова

2012 çулхи çулла Любовь Петровна «Тӑван Ен» хаçат редакцине тӗп редактор çумне вырнаçать, вӑхӑтлӑха – сотрудник декрет отпускӗнчен тухиччен. Корреспондент должноçӗнчен тўрех темиçе картлашка хӑпарса редактор çумне йышӑнса хӑйӗн тивӗçне пысӑк яваплӑхпа, тўрӗ кӑмӑлпа пикенет. Ун чухне, хаçатра корреспондентсем пӗрин хыççӑн тепри улшӑнса тӑнӑ вӑхӑтра, редактор çумне çӑмӑл пулман – ӗнерхи студентсене, пичет кӑларӑмӗнче пачах та ӗçлемен сотрудниксене хаçат-журнал ӑсталӑхне сахал мар вӗрентме тивнӗ унӑн. Любовь Петровна пысӑк калӑпӑшлӑ ӗçе парӑнтарма пултарасса кӗске вӑхӑтрах ӗнентерсе панӑ.

Любовь Семенова нимӗнле темӑран та «хӑраса» тӑман: пурӑнмалли çурт-йӗрпе коммуналлӑ хуçалӑх сферине çутатмалла-и, вӗрентў темипе пӗр-пӗр темӑна усса памалла-и, право ыйтӑвӗсемпе çынсене ӑнлантармалла-и – уншӑн пурте шӑл çемми. Район хаçатӗнче çивӗч ыйтусене хускатса журналист тишкерӗвӗсем тӑтӑшах пичетленет, унӑн вирлӗ статйисене вулакансем юратсах вулаççӗ. Çавӑнпа та редакцие тӗрлӗ ыйтупа шӑнкӑравлаççӗ, çыру çитереççӗ. Кунашкал хыпарсем çитсенех вӑхӑта вӑраха тӑсмасӑр Любовь Петровна вырӑна çитет, темӑна тарӑннӑн тишкерет, материалсен-

че çынсене кăна мар, экспертсене те сăмах парать. Район хаçатĕнче ĕçленĕ çулсенче вулакансен ыйтăвĕсемпе миçе статья хатĕрлемен-ши вăл? Миçе çынна пулăшман-ши? Редакцие унăн ячĕпе çитекен тав сăмахĕ чăннипех те сахал мар.

«Тăван Ен» хаçат право, йĕрке хурал, пушар темисене çутатнипе темиçе çул хушши республикăра чи лайăххисен йышне кĕнĕ. Ку çитĕнÿре Любовь Семенован тÿпи те пысăк, мĕншĕн тесен вăл асăннă ыйтусемпе номертен-номере статья пичетленĕ. Тăрăшуллă журналиста 2015 çулта ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин Тав хучĕпе наградăланă.

Иртсе кайнă çул та Любовь Петровнăшăн ăнăçлă вĕçленчĕ. Вăл «Чувашия против террора» республика конкурсĕнче çĕнтерчĕ, кунсăр пусне «2016 год – Год человека труда в Чувашии» конкурсра унăн просфор пĕçерекен пирки çырнă «Сăваплă çимĕç ăсти» очеркне ятарлă номинацире палăртнă.

# Çырас туртăм çĕнтернĕ

**Елена Дадюкова (хĕр чухнехи хушамачĕ Дмитриева) 1980 çулта майăн 12-мĕшĕнче Шупашкар хулинче кун çути курнă. Дмитриевсен çемйи малтанах Чăваш Енĕн тĕп хулинче, кайран пĕр хушă Ярославльте пурăннă, унтан тăван тăрăхах – Хĕрлĕ Чутай салине – таврăннă.**

Вырăнти вăтам шкула пĕтернĕ хыççăн Елена Шупашкарти экономикăпа технологи колледжĕн тыр-пула тирпейлесе упрас технологи факультетĕнче ăс пухнă. Шкулта вĕреннĕ вăхăтрах аталаннă çырас туртăм çамрăка 1999 çулта И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ-н журналистика факультетне илсе çитернĕ. Унччен Хĕрлĕ Чутай районĕн «Пирĕн пурнăç» хаçатĕнче стажер-корреспондентра ĕçлени, республикăри ача-пăча изданийĕсемпе тачă çыхăну тытни те пурнăçри тĕп çула суйласа илес ĕçре витĕм кÿнĕ-тĕр. Елена шкулта вĕреннĕ чухнех сăвăсемпе калавсем шăрçаланă, олимпиадăсенче, сăвăçсен конкурсĕсенче яланах çĕнтерÿçĕсен йышне кĕнĕ. Университетра ăс пухнă вăхăтра хăйне тĕрлĕ сферăра тĕрĕслесе пăхма тăрăшнă – хаçатсенче статьясем пичетленĕ, радиопа телевиденире репортажсем хатĕрленĕ, конкурссемпе конференцисене хутшăннă.


Е. Дадюкова

«Тăван Ен» хаçатра Елена Дадюкова 2013 çулхи мартăн 10-мĕшĕнчен вăй хурать. Корреспондентран тăнкăскере, тăрăшулăхĕпе палăрнăшăн часах пай редакторĕ пулма шанаççĕ. Журналист хăйĕн статйисене Константин Камилин, Яна Майская, Елена Дмитриева псевдонимсемпе пичетлесе тăрать. Калем ăстисен хăйсен професси шайне ÿстерсех тăмалла – малашне те аталанса пырас тесен ятарлă литературăпа, ытти регионти изданисемпе, Интернет уçлăхĕнчи тĕрлĕ çăлкуçпа паллашмалла. Елена та тавракурăма ÿстерсе пырса редакцин тата районăн обществăлла пурнăçĕнче хастарлăх кăтартать.

Командировкăсене те тухса çÿреме тивет журналистсен, 2 çул каялла Елена чăваш халăх поэчĕ К. Иванов çуралнă Пушкăрт çĕрĕ çинче пулса курнă, чылай усăллă информаципе таврăннă. Спорт ăмăртăвĕсенче те хастар вăл, çакна 2015 çулта Совет Союзĕн 2 хут Геройне Андриян Николаев летчик-космонавта халалласа ирттернĕ «Советская Чувашия» хаçатăн 77-мĕш эстафетинче «Тăван Ен» хаçат редакцийĕн команди массăллă информаци хатĕрĕсен командисен хушшинче 1-мĕш пулни те çирĕплетсе парать. Елена Дадюкова ун чухне палăртнă дистанцие пуринчен малтан чупса тухас тесе пур вăйран тăрăшнă.

Калем ăсти йĕрке хуралĕн органĕсемпе те тачă çыхăнса ĕçлет, хаçат страницисенче юридици сĕмĕллĕ информацие ăнлантарса парать. Çавăншăнах 2015 çулта «Чăваш Республикинчи чи лайăх тÿлевсĕр юридици практики» премин «Халăха право пĕлĕвне парас ĕçе тÿпе хывнăшăн» номинаци лауреачĕн дипломне тивĕçнĕ. Елена Дадюкова хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлет, унăн пулăшăвĕпех хаçат страницисенче тĕрлĕ тематикăллă материалсем кун çути кураççĕ. 2015 çулта вăл


**Çумăр витĕр чупнă пулин те, пьедесталăн çÿлти картлашки çинче. «СЧ» хаçат эстафети, 2015 ç.**

федерацин Атăлçи округĕн «Çĕнтерÿ» проектне хутшăнса «Чи лайăх публикаци» номинацинче палăрса ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин тав çырăвне тивĕçнĕ. Ĕçе тÿрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн, пуçарулăхпа тата лайăх кăтартусемпе палăрнăшăн 2015 çулта ăна Министерство Тав хучĕпе чысланă. 2016 çулта прокуратура ĕçченĕсен ĕç-хĕлне халалланă Раççей конкурсĕн регионти тапхăрĕнче унăн статйине пысăк хак панă.

Елена ырă кăмăллă журналист, килекенсене валли яланах ырă сăмах тупать. Вăл журналистра тимленĕ вăхăтра хăйне ĕçе яваплăха туйса пурнăçлакан, çĕнĕлĕхсемпе хапăл туса усă куракан, пуçарулăх кăтартакан лайăх специалист пек кăтартса пачĕ, ĕçтешĕсен хисепне çĕнсе илчĕ.

# Ĕмĕтне пурнăçланă

**«Тăван Ен» хаçатра вăй хуракан тепĕр калем ăсти – Вера Шумилова (хĕр чухнехи хушамачĕ Магенцова). Вăл 1981 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче Шупашкар районне кĕрекен Энтимĕркасси ялĕнче çуралнă. Тăранти пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкултан вĕренсе тухсан ăс пухма Красноармейски районĕнчи Пикшикри вăтам шкула çул тытнă.**

Çырас туртăм унăн шкулта вĕреннĕ чухнех вăраннă, анчах ун чухне журналист профессийĕ уншăн пурнăçланма пултарайман ĕмĕт пек туйăннă. Сăвăсене илемлĕ вулассипе тата вĕренÿре маттур пулнипе палăрнă çамрăк. Кĕнекесем шĕкĕлчеме юратни те пуласлăхра професси суйласа илес ĕçре витĕм кÿнĕ-тĕр. Шкултан вĕренсе тухсан Вера Шумилова И.Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика университечĕн чăваш филологи факультетне вĕренме кĕнĕ. Вĕренÿ ĕçне пусĕпех парăннă çамрăк кун та та лайăх паллăсемпе кăна вĕренме тăрăшать. «Пĕр занятие те сăлтавсăр сиктерни пулман», – аса илет вăл студент çулĕсене. Пĕлÿ илнĕ вăхăтрах çамрăк «Çăлкуç» литература кружокĕнче çырас ăсталăха туптать, унăн хайлавĕсем çав ятлă кĕнекере те кун çути кураççĕ.


В. Шумилова


«Тăван Ен» хаçат эстафетине Шумиловсем çемьепех хутшăннă. 2014 ç.

«Тăван Ен» хаçатпа пурнăçа çыхăнтариччен тĕрлĕ çĕрте – ача садĕнче воспитательте, шкулта чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕнче – вăй хурать Вера. Шăпа ăна 2013 çулхи ноябрь уйăхĕнче Кÿкеçе илсе çитерет. Шăпах çав вăхăтрах хаçатра корреспондент кирли пирки пĕлтерÿ куç умне пулать те. Тинех ĕмĕт пурнăçа кĕрес шанăç çуралать – шкул çулĕсенченех илĕртекен журналист профессийĕ патне алă тăсмалла кăна! Тăхтаса тăмасăр редакцие çул тытать Вера. Паянхи кунччченех Шупашкар район хаçатĕнче корреспондентра тимлет вăл. Çак вăхăтра хăйне ĕçе яваплăха туйса пурнăçлакан специалист пек кăтартса пачĕ. Хаçат страницисенче статйисене тĕрлĕ псевдонимпа пичетлесе тăрать журналист, Деомид Васильев, Анна Филиппова, Вера Шумилова тесе алă пусать. Штатра тăман корреспондентсемпе те тачă çыхăнура ĕçлет вăл. «Ял хуçалăх темине çутатас енĕпе вара тепĕр специалистран та иртерет», – хак параççĕ унăн тăрăшулăхне ĕçтешĕсем. Ял хуçалăх темине хаçат страницисенче хастар çутатса тăнăшăн юлашки икĕ çулта (2015-2016 ç.ç) тăршшĕпех райадминистраци пуçлăхĕн дипломне тивĕç пулчĕ. Ăна 2016 çулта Раççей шайĕнчи «Моя земля – Россия» конкурса хутшăннăшăн РФ ял хуçалăх министерствин Тав çырăвĕпе те чысланă.

Вера Шумиловăшăн ял хуçалăх темисĕр пуçне спорт теми те чунне çывăх, вăл хăйĕн статйисем валли ялана пултаруллă çынсене шырать.

# Çамрăк журналист

**Анжелика Тихонова (хĕр чухнехи хушамачĕ Фадеева) 1988 çулта август уйăхĕн 4-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Лапракасси ялĕнче нумай ачаллă çемьере çуралнă. «Тăван Ен» хаçат страницисенче Анжелика Фадеева, Милена Сергеева, Виталий Фадеев, Мария Витальева псевдонимсемпе пичетленсе тăрать.**


А. Тихонова

Анжелика çемьере тăваттăмĕш ача пулнă. Аслисем килте пĕчĕккисемпе кашни кун тенĕ пекех «шкулла» вылянă. Çапла Анжелика та шкул çулне çитмесĕрех «парта» хушшине ларнă, 1-мĕш класа кайиччченех вулама, çырма, шутлама вĕреннĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕнче амăшĕпе пĕррремĕш хут шкула кайнине паянхи кун та ас тăвать вăл. «Ай-уй, хăв пĕчĕк пукане пекех, ăçта каятăн?», – тенĕ кĕрен кĕпе тăхăннă, çÿçĕсене бантик çыхнă, алла астра чечеккисем тытнă хĕр пĕрчине хирĕç килекен хĕрарăм.

Шкулта вĕреннĕ чухнех Анжелика кĕнеке вулама юратнă. Уроксем хыççăн киле кайнă чухне библиотекăна кĕмесĕр иртсе кайман. Çуллахи каникулта та хур-кăвакала симĕс курăк çинче çÿретнĕ чухне те алăран кĕнеке яман. Вĕренÿ уншăн çăмăллăнах пулса пынă. «Килти ĕçсене перемена вăхăтĕнчех пурнăçлаттăм», – тет вăл. Уйрăмах сочиненисем çырма ăста пулнă Анжелика. Кунсăр пуçне ÿкерчĕксем ÿкересси те унăн чун киленĕвĕ пулнă, шкулта стена хаçачĕсене сăрăпа илемлетнĕ вăл. 11-мĕш класа «4», «5» паллăпа пĕтерсен И.Я. Яковлев ячĕл-



Шашка-шахмат выляма ăста

лĕ чăваш патшалăх университетне çул тытнă. Чăваш филологи факультетĕнче «Практика журналистики» специальнăçа алла илнĕ. Студент вăхăтĕнчĕ Анжелика тĕрлĕ конференцие хутшăннă, «Педвузовец» хаçатра çырас ăсталăхне туптанă, республика хаçачĕсене те хăйĕн статйисене пичетлеме ярса панă.

«Тăван Ен» хаçатра Анжелика 2012 çулхи август уйăхĕнчен вăй хурать. Корреспондентра çулталăка яхăн тăрăшнă хыççăн ăна пай редакторĕ пулма шанаççĕ. Журналиста çамрăксем, сывă пурнăç йĕркипе спорт, йĕрке хурал органĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, районти пултаруллă çынсем çинчен çырма кăмăллать, хăрушсăрлăх теми те ăна сывăх. Обществăна кăсăклантаракан ытти ыйтăва та çутатса парать вăл.

# Кашни номер «пепке» евĕр...

**Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне малтан Кӳкеç типографийĕпе, кайрантарах «Тăван Ен» хаçат редакцийĕпе тачă çыхăнтарнă Марина Ивановасăр редакци историне, аталанăвне куç умне кăларма та йывăр.**



М. Иванова

Вăл 1970 çулхи мартăн 8-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Мăн Тутаркасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Вырăнти тата Мăн Сĕнтĕрти шкулсенчен вĕренсе тухнă хыççăн печатник профессине алла илнĕ, 1988 çулта Кӳкеçри типографире 4-мĕш разрядлă печатникре вăй хума тытăннă. Çĕнĕ технологисене алла илес тĕллев, çĕнĕлĕх патне туртăнни ăна компьютер пĕлӳлĕхĕн курсĕсене кайма хистенĕ. Опытлă ĕçтешсем вĕрентнипе дизайн пĕлĕвне хăнăхать, пичет кăларăмĕсене калăпламалли тата сăн ӳкерчĕксен пахалăхне лайăхлатмалли ятарлă компьютер программисем пулăшу кӳнĕ çеç, вăл çак ĕçре хăйне тупать.

2004 çултанпа Марина Аввакумовна – «Тăван Ен» хаçатăн калăплавçи. Паянхи дизайнер-калăплавçă ĕçĕ тĕрлĕ енлĕ: материалсенчи йăнăшсене тӳрлетнинчен, схемăсем, графика, таблицăсемпе диаграммăсем тăвассинчен пуçласа кăларăм полосисене калăпласа пичете электрон мелпе типографие ярасси таранах. Ăста специалист хăйĕн ĕçне тӳрĕ кăмăлпа, яваплăха туйса пурнăçлать. Хаçатăн кашни номерĕ хăйне евĕрлĕ – калăплавçă ĕçе юратса, чунтан парăнса пурнăçлани сисĕнет. 2010 çулта «Тăван Ен» хаçат республикăра чи пирвайхисенчен пĕри Adobe InDesign программăпа калăпланма тытăнсан пичет кăларăмĕн сăн-сăпачĕ лайăх енне улшăннине вулакан тӳрех асăрхарĕ: икĕ тĕспе тухма тытăнчĕ, инфографикăсемпе коллажсем те ăна çĕнĕ сĕм кĕртрĕç. Çак улшăнусем вулакансен йышне те ӳстерме пулăшнине палăртмалла.

Хаçатăн кашни номерĕ – Марина Аввакумовна дизайнерăн «пепки» тесен те йăнăш пулмĕ, кашни номер, вăл кăна-и, кашни страница хăйне евĕрлĕхпе уйрăлса тăрать. «Тăван Ен» хаçат 2013-2016 çулсенче «Прессăн ылтăн фондне» кĕчĕ. Çак çитĕнӳре паллах, Марина Аввакумовна тӳпи те пур. Унăн ăсталăхĕпе паллашма республикăри пичет кăларăмĕсен ĕçченĕсем те редакцире тăтăшах пулаççĕ. Вĕсене валли опытлă специалист мастер-классем ирттерме нихăçан та хирĕç мар.



Шкул ачисем хаваспах хаçат ĕçĕпе интересленеççĕ

Ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пынăшăн тата «Тăван Ен» хаçатăн 70 çулхи юбилейне халалласа 2002 çулта Марина Ивановăна ЧР Социаллă пулăшу министерствин Хисеп хучĕпе чысланă. Çулталăкран вăл ЧР пичетпе информаци политикин министерствин Хисеп хутне, 2007 çулта хаçатăн 75 çулхи юбилейĕнче Шупашкар район пуçлăхĕн Тав хутне тивĕçнĕ. 2012 çулта пичет ĕçне чун-чĕререн парăнса нумай çул вăй хунăшăн чыслав хучĕсен шутне Шупашкар район администраци Хисеп хучĕ хушăннă. Чи пĕлтерĕшлĕ награда – РФ Çыхăну тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп хучĕ ăна 2015 çулта шыраса тупнă.

Марина Иванова чăн-чăн профессионал кăна мар, яваплă та ĕçчен, ырă кăмăллă çын, ĕçтешĕсене сĕнӳсемпе те, ĕçпе те яланах пулăшма хатĕр.

# Сайт – хаçат пепки

«Тăван Ен» сайт редакторĕ Елена Губанова Çĕмĕрле хулинче 1985 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче çуралнă. И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультетĕнчен хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнă, унтан Шупашкар коопераци институтĕнче юриспруденци енĕпе пĕлĕвне малалла тăснă. Журналистикăри ĕçĕ-хĕлне студент çулĕсенчех «Московский комсомолец» хаçат редакцийĕнче пуçланă. 2005 çулта кунта обозревательте ĕçлеме тытăннă, 2013 çулччен «Аргументы и факты» хаçатăн Чăваш Енри кăларăмĕн тĕп редакторĕнче вăй хунă. «Тăван Ен» хаçат редакцийĕнче 2014 çулта сайт редакторĕ пулса ĕçлеме тытăннă. Социаллă сферăри çивĕч ыйтусене çутатнăшăн республика, регион шайĕнчи конкурссенче пĕр хутчен мар дипломсене, ытти наградăна тивĕçнĕ.



Е. Губанова

Елена Алексеевна – «Раççей пуласлăхĕ» Çамрăксен наци премийĕн лауреачĕ. «Тăван Ен» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме тытăннăранпа пушшех хăйĕн пултарулăхне кăтартма май тупсах тăрать. Ăна Шупашкар районĕнче кăна мар, республикăра та тăрăшуллă, информацие вулакан патне васкаса çитерме яланах хатĕр хыпарçă пек пĕлеççĕ. Раççей МЧСĕн Республикăри Тĕп управленийĕ çулсерен ирттерекен «Огонь и люди» конкурсра 2-мĕш вырăн йышăнчĕ, 2015 çулта «Пушар хăрушсăрлăхĕн чи лайăх пропагандисчĕ» регион конкурсĕнче I степень диплома çĕнсе илчĕ. Ял хуçалăх çыравне çутатакансен хушшинче ирттернĕ конкурсра 2017 çулта ăна Чăвашстат объективлăхпа хăйнеевĕрлĕхшĕн ятарлă номинацире сувенирлă парнепе хавхалантарчĕ.



Тăрăшулăхшăн – награда

Елена Губанова «Тăван Ен» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме пуçланăранпа сайт тĕпрен улшăнса çĕнелчĕ, вăл хăйĕн вулаканне тупрĕ. 2017 çулăн июнь уйăхĕ тĕлне унта регистрациленнĕ çынсен йышĕ 12 000-рен иртрĕ. Çакă сайт редакторĕ информацие халăх патне вăхăтра çитерме вĕренсе çитнине çирĕплетет. Вăл тăрăшнипех редакци хăйĕн 85 çулхи юбилейне çĕнĕ сайтпа кĕтсе илет.



# Ялкорсем – хаçата пуянлатакансем

**«Тăван Ен» хаçат редакцийĕ халăхран çырса тăракан корреспондентсене пĕрремĕш номертенех пичет ĕçне явăçтарнă. Вĕсене «ялкорсем» тенĕ. Халĕ – штатра тăман корреспондентсем.**

Ялкорсен юхăмĕ хаçатăн кашни тапхăрĕнчех вăйлă аталаннă. Вĕсем хăйсен статйисемпе хаçат содержанине чылаях пуянлатнă. Вырăнти хыпарсене район хаçачĕ урлă çутатса район çыннисемшĕн паха ĕç тунă. Район хаçачĕн историйĕ ялкорсен материалĕсемпе пуян. Вĕсем хаçат корреспонденчĕсем çитме ĕлкĕреймен çĕре çитеççĕ, урăх куçпа сăнласа ялти пурнăç çинчен пĕлтерсе тăраççĕ. Истори страницисене, пурнăç улшăнăвĕсене, интереслĕ самантсене асăрхаса хаçата татах та интереслĕрех тума пулăшаççĕ.

Хаçат ĕçĕн кашни тапхăрĕнчех ялкорсем район хаçачĕн ĕçне хастар тата харсăр хутшăннă. Вĕсем кулленхи пурнăçра тĕл пулакан паха ĕçсем çинче кăна мар – халăха йĕркеллĕ пурăнма, ĕçлеме чăрмантаракансем çинчен киревсĕрлĕхпе чунсăрлăха тиркесе хаçата сахал мар критикăлла статья çырнă. Район вăйлă аталаннă 60-80 çулсенче те вĕсем вырăн тупсах тăнă. Шăпах вĕсем йĕрке тума пулăшнă теççĕ сăнакансем.

Кĕнекен çак пайне хатĕрленĕ май тата ялкорсен ĕçĕсемпе интересленсе Шупашкар район хаçачĕн чылай номерĕн страницисене уçа-уça пăхма тӳр килчĕ. 1991 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕнче пичетленнĕ «Тăван Ен» хаçатăн номерĕ те алла лекрĕ. Унта «Хаçат – пирĕн пурнăç тĕкĕрĕ» статьяра тĕп редактор Г.А. Егоров хаçат ĕçне тишкернĕ май ялкорсем пирки çаплах çырса кăтартнă: «Район хаçачĕ – хăйне евĕрлĕ универсаллă издани. Унта хамăр тăрăхри, тăван енри пурнăçпа ĕç коллективĕсемпе, хамăр ентешсемпе çыхăннă материалсем тĕп вырăнта тăраççĕ. Эпир халăх хуçалăхĕн мĕн пур отраслĕсен ĕç-хĕлне çутататпăр. Ку ĕçре пире хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕсем ытти авторсем пекех куллен пулăшса пыраççĕ. Михаил Константинов, Владислав Лаврентьев, Андрей Николаев, Фадей Константинов, Антонина Ефимова, Геннадий Коннов, Михаил Васильев, Ювеналий Иванов, Николай Петров, Иван Михайлов, Раиса Егорова, Валерий Чигаркин, Вениамин Терентьев, Анна Смирнова, Юрий Казанков тата ытти вун-вун ялкор район хаçачĕпе тачă çыхăну тытаççĕ. Кунсăр пуçне çак корреспондентсем те тăтăшах çĕнĕ хыпарсем пĕлтереççĕ. Паллах, çак авторсем çырса тăмасан, хаçат ытла та кичем, ăшăх пулĕччĕ».

Палăртас пулать, маларах асăннă ялкорсенчен хăшĕ-пĕри район хаçачĕпе 50-60-мĕш çулсенчех çыхăну тытма пуçланă. Пурнăç кустăрми малалла шунă май ялкорсен йышĕ çĕнелсех тăнă. 1991-1993 çулсенчи çĕршыври улшăнусем хыçа юлсан чылайăшĕ район хаçачĕпе пачах çыхăну тытма пăрахнă. 1990-мĕш çулсен иккĕмĕш çур çулĕнче тата 2000 çулсенче хаçата Н. Платонов, Ю. Кириллов, П. Васильев, Л. Павлов, Ф. Константинов, Н. Миронов, Паçпак Мишши, К. Михайлова, А. Хундимиров, В. Платонов, Г. Николаев, Р. Чепунов, А. Миронов, Г. Соловьева, А. Ефимова, Т. Верендеева, М. Карпов тата ыттисем те хастар çырса тăнă.

Тĕрлĕ сăлтава пула иртнĕ ĕмĕрĕн



Тĕл пулу, 2010 ç

2000 çулĕсенче хаçатпа çыхăну тытакансенчен хăшĕ-пĕри редакци почтине çырма пăрахать. Çав хушăрах штатра тăман корреспондентсен йышĕнче çĕнĕ ятсем çуралаççĕ: Е. Григорьева, В. Синельников, А. Лепин, Н. Антонова, Н. Смирнов. Вĕсем те хăйсен ĕçтешĕсенчен кая юлмасăр хаçат редакцине анлă содержаниллĕ интереслĕ материалсем тăратаççĕ.

«Тăван Ен» хаçатăн 85 çулхи юбилейне хаçата хастар çырса тăрса кĕтсе илекенсен йышне Т. Верендеева, Е. Григорьева, А. Ефимова, Ф. Константинов, Л. Павлов, В. Синельников, Н. Смирнов кĕреççĕ. Г. Коннов, Р. Чернова, Ю. Кириллов, К. Михайлова, Н. Антонова та вăхăт-вăхăтран материалсемпе редакцие тивĕçтереççĕ.

Хаçат коллективĕ юлашки çулсенче хăйсен йышне çамрăксене те явăçтарас тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕç туса ирттерет. Номертен номере «Шкул корреспонденчĕ» рубрикăпа пичетленекен статьясем те аван çирĕплетеççĕ çакна. Çак ĕçе пурнăçлама район шкулĕнче ĕçлекен вĕрентекенсем те пысăк тӳпе хываççĕ.

Кĕнекен малаллахи страницисенче «Ялкорсем – хаçата пуянлатакансем» рубрикăна тăснă май кĕнеке авторĕ хальхи вăхăтра çырса тăракан штатра тăман корреспондентсен кун-çулĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе тата пултарулăхĕпе паллаштарать.



# Унăн ачалăхĕ тертлĕ те нушаллă пулнă

**Сăмахăм Вăрман-Çĕктер ял тăрăхне кĕрекен Кипечкассинче пурăнакан Нина Степановна Антонова пирки. Вăл 1933 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче колхозник çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ – Степан Емельянович тата амăшĕ Анна Филипповна Дороговсем вăл вăхăтра вырăнти колхозра вăй хунă.**



Н. Антонова

Нина çул çитсен ялтах вырнаçнă çичĕ çул вĕренмелли шкулăн пĕрремĕш класне çӳреме тытăнать. Ăна вĕренсе пĕтерсен çемьери йывăр условисене пула пĕлĕве малалла тăсма май килмест. Нинăн пурнăçĕ тертлĕ те нушаллă пулнă. Ача чухне те, хĕр чухне те, çемье çавăрсан та самаях хуйхă-суйхă тӳссе ирттернĕ.

Нина ашшĕн, 1904 çулта çуралнăскерĕн, вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фронта кайма тивнĕ. Вăл 1944 çулта вăрçă хирĕнче пуçне хунă. Ашшĕ кайнă чухне Нина сакăр çулта, йăмăкĕ Ольга пиллĕкре кăна пулнă. Мăшăрĕ вăрçă хирĕнче вилсен амăшĕ – Анна Филипповна – çак хĕр пĕрчисемпе тăлăха юлать. 1949 çулта хуйхăрнипе тата йывăр ĕçе пула Нина амăшĕ ĕмĕрлĕхех çут тĕнчерен уйрăлать.

Паллах, тăлăх ачасене тăванĕсем манмаççĕ. Иккĕмĕш сыпăкри тăванĕсем Татьяна Алексеевна Смирнова тата Вера Даниловна Русанова тата ыттисем те, тăлăхсене пулăшсах тăраççĕ, вĕсен хуйхи-суйхине пĕрле пайлаççĕ. Вăл вăхăтра вырăнти «Слава» колхоз председателĕнче вăй хунă Семен Савельевич Макаров та пулăшсах тăрать.

1952 çулта Нина ĕçе кӳлĕнет, Кипечкассинче ял совет ĕçтавкомĕнче тирпейлӳçĕре ĕçлеме тытăнать. Çакăн хыççăн тăлăх хĕрачасем лăштах сывласа яраççĕ. 1955 çулта Нинăн пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. Ялти Парамон Антонов яш каччăпа çемье çавăраççĕ, вĕсем виçĕ ывăлпа хĕре кун çути параççĕ. 1962 çулта Нина Кипечкассинчи 8 çул вĕренмелли шкула техничкăна вырнаçать. Çак ĕçре 1988 çулччен вăй хурать. Çав çул Кипечкасси шкулĕ Анат-Кĕнер (Çӳлтикасси) шкулĕпе пĕрлешет. Кĕçĕн класра вĕренекен ачасем вырăнта юлаççĕ. 1995 çулччен Нина Антонова ачасене вĕри апат пĕçерес тĕлĕшпе ĕçлет.

Нина Степановнăран хуйхă пăрănса иртмест. 1978 çулхи мартăн 21-мĕшĕнче мăшăрĕ йывăр чире пула вăхăтсăр çĕре кĕрет. 2008-мĕш çулта ăна каллех пысăк хуйхă пырса тивет. Белградра пурăнакан ывăлĕ – Игорь – пурнăçран вăхăтсăр уйрăлать.

Нина Антоновнăн ĕç стажĕ 40 çултан иртет. Вăл Ĕç ветеранĕн ятне тивĕçнĕ. 2009 çултанпа «Тăван Ен» хаçатпа çыхăну тытать. Çав çулхи майăн 20-мĕшĕнче «Юрласа ĕçленĕ совхоз

хирӗнче» ятпа унӑн пӗрремӗш статйи пичетленсе тухать. Унӑн район хаҫатне ҫырса тӑрас тематики «кивӗ сӑн ӳкерчӗксемпе» сыхӑннӑ. Ҫавӑн пекех тахҫан авалхи иртнӗ вӑхӑт ҫинчен ҫырма кӑмӑллать. Юлашки тӑватӑ ҫул хушшинче вӑл 50 яхӑн материал пичетлесе кӑларнӑ.

# Чӑвашла та, вырӑсла та хастар ҫыракан маҫтӑр

**Хальхи вӑхӑтра «Тӑван Ен» хаҫата чӑвашла та, вырӑсла та паха материалсем ҫырса тӑракансенчен пӗри – Тамара Кронидовна Верендеева. Вӑл Шупашкарта пурӑнать пулин те темиҫе ҫул хушши Шупашкар район хаҫачӗпе тачӑ ҫыхӑну тытать.**

Тамара 1941 ҫулхи сентябрӗн 3-мӗшӗнче Ишлей районне кӗрекен Анат-Кӗнер (Ҫӳлтикасси) ялӗнче учитель ҫемйинче ҫуралнӑ. Ашшӗпе амӑшӗ Анат-Кӗнер шкулӗнче ӗҫленӗ. Ашшӗ – Кронид Петрович Верендеев – ачасене ботаника, зоологи, хими предмечӗсене вӗрентнӗ. Амӑшӗ – Ольга Васильевна Суркова – чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентнӗ.

Кронид Верендеев 1910 ҫулта хальхи Муркаш районне кӗрекен Кашмаш ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Вӑл Карӑшлӑхри хресчен ҫамрӑкӗсен шкулӗнче тата Саратов хули ҫывӑхӗнчи Вольск хулинчи ял хуҫалӑх техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн Мӑн Сӗнтӗрти колхоз ҫамрӑкӗсен шкулӗнче биологи вӗрентнӗ. Шупашкарти педагогика институтне пӗтерсен ӑна Анат-Кӗнер шкулне ӗҫлеме янӑ.

Ольга Суркова 1918 ҫулта Ҫӗньял-Покровски ялӗнче ҫуралнӑ, Ишекри вӑтам шкулта пӗлӳ илнӗ. Шкул вӗренсе пӗтернӗ ҫулах ӑна Ишлей райӗҫтовкомӗн вӗрентӳ пайӗн пуҫлӑхӗн приказӗпе килӗшӳллӗн Явӑш шкулӗнчи пуҫламӑш класри ачасене вӗрентме ҫирӗплетнӗ. Каярахпа вӑл пӗр вӑхӑт Хыркасси шкулӗнче ӗҫленӗ, ҫав хушӑрах учительсен институтне вӗренсе пӗтернӗ.


Т. Верендеева

1942 ҫулта учительсене те вӑрҫа илме пуҫлаҫҫӗ. Шкул директорӗнче тимлекен Кронид Петровича та 1942 ҫулхи мартӑн 18-мӗшӗнче вӑрҫа кайма повестка параҫҫӗ. Вӑл вӑрҫӑра связист-телефонист пулса ҫапӑҫнӑ, Великие Луки, Калуга, Смоленск, Псков хулисем патӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусене хутшӑннӑ. 1944 ҫулхи май уйӑхӗнче пӗр ҫапӑҫура хытах аманать. Чылай вӑхӑт сипленнӗ хыҫҫӑн ӑна киле яраҫҫӗ.

Мӑшӑрӗ вӑрҫӑран аманса таврӑннӑ тӗле Ольга Васильевна икӗ пӗчӗк ачипе Ҫӗньял-Покровски ялне тӑван килне куҫса каять. Кунта ачасемпе пулӑшакансем пулнӑ. 1945 ҫулта вӑрҫӑран таврӑннӑ Кронид Петрович кунти шкулта ӗҫлеме тытӑнать. Ҫак шкулта вӑл 26 ҫул ӗҫлесе хӑйӗн хыҫҫӑн тарӑн йӗр хӑварать. Вӑл 18 ҫул шкул директорӗнче тимлет.

Тамара Кронидовнӑн ҫырас туртӑм ашшӗ-амӑшӗнченех сыхланса юлнӑ. Унӑн ашшӗпе амӑшӗ таврапӗлӳҫӗсем пулнӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче Тамара ашшӗ Ҫӗньял-Покровски шкулӗн историне каласа паракан кӗнеке пичетлесе кӑларнӑ. Амӑшӗ вӑхӑтран-вӑхӑта район хаҫатӗнче статьясем пичетлесе кӑларнӑ.

Тамара Верендеева Ҫӗньял-Покровски тата Ишлей шкулӗсенче вӗреннӗ чухнех класра стена хаҫатне кӑларас ӗҫе хастар хутшӑнать. ЧППИ-н ют ҫӗршыв чӗлхисен уйрӑмӗнче вӗреннӗ чухне те стена хаҫатне статьясем ҫырсах тӑрать. Институтран вӗренсе тухсан Улатӑр районӗнчи шкулсенче ӗҫленӗ чухне те стена хаҫачӗсем кӑларассине йӗркелесе пырать. Пӗр ҫулхине вӑл ертсе пынипе тухнӑ стена хаҫачӗ районти смотрта иккӗмӗш вырӑн йышӑнать.

Тамара Кронидовнӑна пурнӑҫ урапи И.Н. Ульянов ячӗллӗ ЧППУна илсе ҫитерет. Кунта вӑл 1968-1994 ҫулсенче вӑй хурать, 1994-2001 ҫулсенче ЧР Президенчӗн администрацийӗнче пӗтӗмӗшле пай редакторӗнче ӗҫлет.

Тамара Верендеева статйисем иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче республикӑра тухса тӑракан хаҫат-журналсенче пичетленсе тӑнӑ. 2003 ҫулта вара вӑл район хаҫачӗпе те туслашать. Паянхи куна ҫитиччен унӑн 400 ытла статья, тӗрленчӗк, очерк кун ҫути курнӑ. Вӑл чӑвашла та, вырӑсла та ҫырма ӳркенмест. Унӑн статйисен тематики те нумай енлӗ. Вӑл ятлӑ-сумлӑ, паллӑ ентешсем, ӗҫпе вӑрҫӑ ветеранӗсем, искусство, ҫут ҫанталӑкри пулӑмсем, чӗр чунсен тӗнчи, иртнӗ вӑхӑт ҫинчен ҫырма кӑмӑллать. Ҫӗршыв, республика, район историйӗсене аса илсе ҫырса кӑтартма тӑрӑшать. Чӑваш чӗлхин аталанӑвӗ ҫинчен ҫырса кӑтартассине те манӑҫа хӑвармасть. Унӑн юратнӑ теми – иртнӗ вӑхӑт ҫинчен каласа парса хальхи вӑхӑта хак парасси. Вӑхӑтран-вӑхӑта Анфиса Варкӑш, Марта Амека псевдонимсемпе сӑвӑсем пичетлет.

Тамара Кронидовна хӑй ӳснӗ Ҫӗньял-Покровскинче те час-часах пулать, кунти мероприятисене хастар хутшӑнать. Ашшӗпе амӑшӗ ҫуралса ӳснӗ, пурӑннӑ, ӗҫленӗ ялсене те хисеплет. Вӑл – «ЧР хисеплӗ таврапӗлӳҫи», Ӗҫ ветеранӗ, «Тӑван Ен» хаҫатӑн штатра тӑман корреспонденчӗ, «Край родной Синьял-Покровский» кӗнеке соавторӗ.

# Сӑн ӳкерекен те, ҫыравҫӑ та

**Ҫакӑн пек хак парас килет халӗ Ишекри вӑтам шкулта кӗҫӗн класри ачасене вӗрентекен Екатерина Ивановна Григорьевӑна. Вӑл – «Тӑван Ен» хаҫатӑн штатра тӑман корреспонденчӗсенчен хастаррисенчен пӗри.**

Екатерина Григорьева (хӗр чухнехи хушамачӗ Данилова) Чӑваш Республикинчи Тӑвай районне кӗрекен Сӑхӑтпуҫ ялӗнче 1966 ҫулта нумай ачаллӑ ҫемьере ҫуралнӑ. Екатерина – 9-мӗш ача. Амӑшӗ, Ольга Васильевна, вунӑ ача ҫуратса «Ача амӑшӗ-героиня» чыса тивӗҫнӗ, мӗн тивӗҫлӗ канӑва тухиччен колхозра вӑй хунӑ. Ашшӗ, Иван Данилович, ӑстаҫӑ пулнӑ. Вӑл алӑ вӑйӗпе хулӑн пралукран ача сӑпки валли пружина авмалли аппа-

рат шутласа кăларнă, лаша урапинчен ачасене харăсах тăваттăн ярăнмалли карусель-катаччи ăсталанă. Таврара ун пек тир тăвакан та пулман.

Даниловсем ҫуратса пăхса ӳстернĕ вунă ачи те пултарулăхпа палăрнă. Акă, тĕслĕхрен, Зинаида аппăшĕ ачасене шкулта вырăс чĕлхи вĕрентнĕ, гитарăпа, баянпа, купăспа, балалайкăпа ăста калать. Лаврентий пиччĕшĕ милицире вăй хунă, халĕ тивĕҫлĕ канура. Вăл 1997 ҫулта Чĕмпĕр хулинче пичетленсе тухнă «Чтобы помнили» кĕнеке авторĕ, сăвăҫ, таврапĕлӳҫĕ, Чăваш Республикинчи писательсен союзĕн членĕ, республикăри чылай хаҫат-журналпа тачă ҫыхăну тытать.

Екатерина Ивановна Сăхăтпуҫĕнчи 8 ҫул вĕренмелли шкула ăнăҫлă пĕтернĕ хыҫҫăн Канашри педагогика училищине вĕренме кĕрет. 1985 ҫулта Шупашкар районĕнчи Мăн Маркари шкулта ĕҫлеме пуҫлать. Тепĕр ҫултан вара педагогика институтĕнче куҫăмсăр майпа вĕренсе аслă пĕлӳллĕ специалист пулса тăрать. Унăн пĕтĕм ĕҫ стажĕ – 29 ҫул, вăл – аслă категориллĕ учитель. Районта иртекен «Ҫулталăк учителĕ» конкурса хутшăнса «Учитель-лидер» тата «Учитель-предметник» номинацисенче 3-мĕш вырăн йышăнать. 2014 ҫулта ăна Чăваш Республикин вĕрентӳ министерствин Хисеп грамотипе чыслаҫҫĕ. Ишекри таврапĕлӳ, Кӳкеҫри «Бичурин тата хальхи самана» музейсенче тĕрлĕ фотокурав йĕркелет. Культура ҫулталăкне халалланă конкурсра лауреат пулать.

Сергей мăшăрĕпе пĕр хĕр ҫуратса ҫитĕнтерсе ура ҫине тăратаҫҫĕ. Мăн Марка шкулĕнче ĕҫленĕ вăхăтра Екатерина Ивановнăн икĕ пысăк хуйхă тӳссе ирттерме тивет. 1998 ҫулта мăшăрĕ сарăмсăр ҫĕре кĕрет, 2005 ҫулта вара аварире пĕртен-пĕр 20 ҫулти хĕрĕ Евгения пурнăҫран уйрăлать.


Е. Григорьева

Ҫак икĕ пысăк хуйха вăл тӳсĕмлĕн чăтса ирттерет, пĕтĕм вăйне ачасене ăс панă ҫĕре ярать.

Екатерина Ивановна район хаҫатне хастар ҫырса тăнипе пĕрлех хăйĕн вĕрентекенĕсене те ҫак ĕҫе явăҫтарать. «2014 ҫулхи ҫу уйăхĕнче Екатерина Петрова тата Софья Григорьева Чăваш Республикинче иртнĕ ҫамрăк корреспондентсен слетне хутшăнма тивĕҫ пулнă, Катя Петрова 2013 ҫулта Шупашкар район хаҫачĕ ирттернĕ «Шкул корреспонденчĕ» конкурсра ҫĕнтерӳҫĕ пулса тăнă», – хаваспах каласа парать вăл хăйĕн вĕренекенĕсем ҫинчен.



# Педагог та, общественник та

**Хальхи тĕрленчĕк Ҫĕньял ял тăрăхĕнче пурăнакан ҫыравҫă, общество ĕҫĕсене хастар хутшăнакан Ксения Петровна Михайлова пирки.**

Ксения 1944 ҫулта Шупашкар районĕнчи Эсеккасси ялĕнче учитель ҫемйинче кун ҫути курнă. Унăн ашшĕ, Петр Макарович Макаров, вăрçă умĕнхи тата хыҫҫăнхи ҫулсенче 40 ҫула яхăн, тивĕҫлĕ канăва тухичченех, пуҫламăш шкулти ачасене вĕрентнĕ. Вăрҫа та хутшăннă, Сталинград хулишĕн ҫапăҫнă чухне йывăр амансан унăн пĕр урине татаҫҫĕ. Каярахпа 9 уйăх Оренбург, Ташкент хулисенче сипленет, сусăрланнăскере вара килне яраҫҫĕ.

П. Макарова вăрçă хирĕнче ҫапăҫнă чухне паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Ҫăлтăр, Тăван ҫĕршывăн Аслă вăрçин 1-мĕш степеньлĕ орденĕсемпе тата «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн» медальпе наградăланă. Мирлĕ ĕҫре ҫамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас енĕпе тунă ҫитĕнӳсемшĕн тата общество ĕҫĕнче хастарлăх кăтартнăшăн унăн ĕҫне пысăк хак панă, «Ĕҫре палăрнăшăн» медальпе, «Хисеп палли» орденпа наградăланă. Вăл «Ĕҫ ветеранĕ», «Халăха вĕрентес ĕҫ отличникĕ» ятсене тивĕҫнĕ.

Ксения 1951 ҫулта Паҫпакри пуҫламăш шкула ҫӳреме пуҫланă. 1955-1961 ҫулсенче Апашри вăтам шкулта ăс пухнă. Вунă ҫул вĕреннĕ хыҫҫăн Кӳкеҫри педагогика класне вĕренме кĕнĕ. Ҫапла майпа вăл ашшĕ ҫулĕпе кайса кăткăс та пархатарлă вĕрентекенĕн ĕҫне суйласа илнĕ. 1962 ҫулта ăна Арккассинчи пуҫламăш шкула ĕҫлеме янă. Ун чухне ку шкула Арккасси, Опукасси, Чумкасси ялĕсенчен 128-130 ача таранах вĕренме ҫӳренĕ, тăвантă учитель ĕҫленĕ. Ксения Петровна ҫак шкулта 38 ҫул ачасене хушма-


К. Михайлова

кăларма, чăвашпа вырăс чĕлхисене хисеплеме вĕрентнĕ. Ҫак шутран 27 ҫул шкул заведующийĕнче вăй хунă. Паллах, унăн вĕрентӳ ĕҫне кирлĕ пек туса пынипе пĕрлех хуҫалăх ĕҫĕсене те пурнăҫлама тивнĕ. Ҫав вăхăта Ксения Петровна ҫаплараx аса илет:

– Ас тăватăп, пĕррехинче вутă патне кайрăмăр та каялла килнĕ чухне трактор прицепĕ ҫĕмĕрĕлсе ларчĕ. Тракторист Типҫырма ялне кайса тепĕр прицеп кăкарса килчĕ. Вутă пӳленкисене пĕр прицепран теприн ҫине куҫарса киле каҫ еннелле тин ҫитрĕмĕр. Кун пек тĕслĕхсем пĕрре мар пулнă унпала.

Ксения Петровна шкулта ĕҫлеме пуҫласанах ялта пулса иртекен общество мероприятийĕсене хастар хутшăнать. Пенсие тухиччен вырăнти суйлав комиссийĕн секретарĕ

пулса вӑй хурать. Ял старости пулнӑ чухне унӑн нумай ӗҫ туса ирттерме тивет. Тӗслӗхрен, фельдшер пункчӗ патне ҫитиччен ҫул ҫине асфальт тӗпренчӗкӗсем сарнӑ чухне, ял кӗперне ҫӗнетнӗ вӑхӑтра, газ пӑрӑхӗсем хывнӑ тапхӑрта... Вӑл ялти халӑхӑн канӑвне йӗркелес енӗпе те сахал мар тӑрӑшнӑ. Уявсене аякран артистсене илсе килес енӗпе тимленӗ.

К. Михайлова вӗрентекен виҫӗ ача пӑхса ҫитӗнтернӗ вӑхӑтра 1978 ҫулта куҫӑмсӑр майпа И.Я. Яковлев ячӗллӗ педагогика институтне вӗренме кӗрсе 1983 ҫулта ӑна пӗтерет. Нумай ҫул ачасене вӗрентсе воспитани парас ӗҫре ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн «Ӗҫ ветеранӗ» ята тивӗҫнӗ. Хисеп хучӗсемпе тав ҫырӑвӗсем те чылай унӑн. Пенсие тухсан та хастар ахаль лармасть. Ӑна Ҫӗньял ял тӑрӑхӗнчи, Шӑмӑш енчи 7 ялпа, ветерансен канашӗн ертӳҫине, районти ветерансен канашӗн президиумӗн членне суйланӑ. Ҫак ӗҫсене вӑл чун хавалӗпе туса пырать. Вӑрҫӑ участникӗсемпе, тыл ӗҫченӗсемпе, вӑрҫӑ ачисемпе тачӑ ҫыхӑну тытать. Чылай ҫул «Тӑван Ен» хаҫатра статьясем пичетлет, тематики тӗрлӗ енлӗ. Шӑмӑшри ӗҫпе вӑрҫӑ ветеранӗсен канашӗн ертӳҫи пулнӑ май чылай материалӗнче ватӑсем ҫинчен ҫырать. Юлашки вӑхӑтра вӑл Аслӑ Ҫӗнтерӳ 70 ҫул тултарнине халалланӑ материалсене кун ҫути кӑтартрӗ.

Ксения Петровна – пултарулӑх ҫынни. 2006 ҫулта республика шайӗнче пичетленсе тухнӑ «Память» (авторӗ Н.В. Пыркин) кӗнеке валли хӑйсен тӑрӑхӗнчи Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫин участникӗсем ҫинчен материал пухса панӑ. 2009 ҫулта пичетленсе тухнӑ «Долгожители республики» (авторӗ Г.Н. Ксенофонтов) кӗнеке валли те 100 ҫула ҫитнӗ 5 ҫын ҫинчен тӗрленчӗксем хатӗрленӗ. Юлашкинчен ҫакна палӑртса хӑварас килет: Ксения Михайлова – Шупашкар районӗнчи хастар общественниксенчен пӗри.

## Чӑрӑшкассинчи хастар общественник

**Валентин Синельников – Чӑрӑшкасси ял тӑрӑхӗнчен «Тӑван Ен» хаҫата статьясем ҫырса тӑракан штатра тӑман хастар корреспондентсенчен пӗри. Сӑмахӑм паян ун пирки.**



В. Синельников

Ҫӗр ҫинче пурӑнаканӑн шӑпи кашнин хӑйне евӗр. Чӑрӑшкассинчи Валентин Степанович Синельниковӑн та ҫавӑн пекех. Вӑл 1942 ҫулхи январӗн 19-мӗшӗнче Ишлей районне кӗрекен Суранкасси ялӗнче колхозникӗн йышлӑ ҫемйинче кун ҫути курнӑ. Килӗнче кӗҫӗнни пулнӑ, унран аслӑраххисем – икӗ ывӑлпа икӗ хӗр.

Ашшӗ Степан Макарович Синельников, 1901 ҫулта ҫуралнӑскер, граждан вӑрҫине хутшӑннӑ. Пулеметчик пулса ҫапӑҫнӑ, пӗрре мар аманнӑ, госпитальсенче сипленнӗ. 1923 ҫулта ӑна саппаса янӑ. Ялта колхоз йӗркеленсен Синельниковсен ҫемйи унӑн членӗ пулса тӑнӑ. Колхоз пӗр ялтан тӑнӑ, «20 лет Чувашии» ятлӑ пулнӑ. Степан Макаровичӑн иккӗмӗш Тӗнче вӑрҫине те хутшӑнма тӳр килет. 1942 ҫулхи январьтен пуҫласа 1945 ҫулхи июль уйӑхӗччен Тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫать вӑл. Ҫав ҫулсенче амӑшӗ Анастасия Ильинична пилӗк ачана, мӑшӑрӗ вӑрҫӑран таврӑниччен, тӗрӗс-тӗкел пӑхса ҫитӗнтерет.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсем кашни ҫемьешӗнех йывӑр пулнӑ. Колхозра ӗҫленипе пӗрлех Степан Макарович ҫемйин пурнӑҫне ҫӑмӑллатас тесе ҫӑм атӑ йӑвалама, карҫинкка ҫыхма вӗренет. Икӗ ӗҫӗн маҫтӑрӗ пулса тӑрать. Валентин малтанах Суранкасси пуҫламӑш шкулне, тӑватӑ класс хыҫҫӑн Ишекри вӑтам шкула ӑс пухма ҫӳрет. Колхоз ӗҫне 12 ҫултах хутшӑнать. Арҫын ачасене лашасем шанса панӑ. Вӗсене ҫитерме ҫӳренӗ, тул ҫутӑлсан колхоз ӗҫне хутшӑннӑ: кӗлте, утӑ-улӑм турттарнӑ, фермӑран уй-хире тислӗк кӑларнӑ. Палӑртса хӑвармалла, Валентин арҫын тивӗҫне пур енӗпе те пурнӑҫланӑ. Ҫемье ҫавӑрнӑ, ачаллӑ-пӑчаллӑ пулнӑ, ҫӗнӗрен кил-ҫурт туса лартнӑ, ҫар ретӗнче тӑнӑ. 1980 ҫулта салтак ячӗ тухсан ӑна военкомат ДОСААФ шкулне водителе вӗренме ярать. Машинӑпа ӗҫлемешкӗн документ илнӗ хыҫҫӑн кӗске вӑхӑт хушши маларах асӑннӑ колхозра ӗҫлет. 1961 ҫулхи кӗркунне ӑна Совет ҫарне илеҫҫӗ. Ҫар ретӗнче 1961-1964 ҫулсенче тӑрать. 1963-1964 ҫулсенче ҫурҫӗр Казахстан ҫӗрӗсем ҫинче ҫапса пуҫтарнӑ тыр-пула турттарма хутшӑнать. Ҫерем уҫнӑ ҫӗрте аван ӗҫленӗшӗн ӑна командовани медальпе чыслать.

Вӑл вӑхӑта Валентин Степанович халӗ ҫаплах аса илет: «1963 ҫулта пирӗн ҫар чаҫӗ Челнар хули патӗнче тӑратчӗ. Ҫак хулари 150-200 сухрӑмра ҫеҫен хирте сурӑх кӗтӗвӗ пулнӑ. Юр ҫуса лартнипе выльӑхсем вилме пуҫланӑ. Ун чухне эпир, салтак-водительсем, пӗр майлӑ утӑ-улӑм, комбикорм вӗсене ҫитереттӗмӗр, каялла сурӑх тушкисене, тирӗсене илсе тухаттӑмӑр».

1964 ҫулта Валентин салтак тивӗҫне пурнӑҫласа тӑван килне таврӑнать. Ӑна «Искра» колхозра машина шанса параҫҫӗ. Пенсие тухиччченех вӑл ҫав колхозра вӑй хурать. Нумай ҫул пушар машинипе ӗҫлет. 1980-1989 ҫулсенче колхозри техникӑпа юсав мастерскойӗн заведующийӗнче тимлет. Унӑн пӗтӗм стажӗ – 50 ҫул патнелле, ҫав шутран 48 ҫул водитель пулса ӗҫленӗ. Вӑл Ӗҫ ветеранӗ ята тивӗҫнӗ.

Валентин Степанович малтан та, пенсие тухсан та общество ӗҫне туса пыма хутшӑнать. 2005-2010 ҫулсенче вӑл – Чӑрӑшкасси ял тӑрӑхӗн депутачӗ. Ҫирӗм ҫул патнелле ял старостинче тӑрӑшать. Ку тивӗҫ, паллах, ҫӑмӑл мар. Тавралӑха ҫуп-ҫапран тасатмалла-и, карта-хуралтӑ юсамалла-и, выльӑхсене кӗтӗве кӑлармалла-и, ҫак ыйтусене пурне те йӗркелесе пымалла. Ҫак ӗҫсене туса пыма ялти хастарсем пулӑшаҫҫӗ. Вӗсен шутӗнче Н. Саперов, Н. Фадеев, Н. Карпов, М. Соловьев, Н. Краснов, А. Серебряков тата ыттисем те.

Валентин Степанович ял тӑрӑхӗнчи ветерансен канашӗн ертӳҫин ӗҫне те туса пырать. Ку ӗҫ те ҫӑмӑллисенчен мар. Ватӑсен ыйтӑвӗсене татса парас тесе сахал мар вӑй хумалла. Унӑн юратнӑ ӗҫӗсенчен пӗри – «Тӑван Ен» хаҫата статьясем ҫырса пичетлесе кӑларасси те. 2010 ҫултанпа вӑл – район хаҫачӗн штатра тӑман корреспонденчӗ. Унӑн материалӗсен тематики тӗрлӗ енлӗ. Вӑл хӑйӗн тӑрӑхӗн-

чи ятлă-сумлă çынсем çинчен, «Искра» колхоз историйĕ пирки çырма кăмăл тăвать. Вăхăтран-вăхăта критика статйисем те пичетлесе кăларать. Вун-вун çул каялла ӳкернĕ сăн ӳкерчĕксемпе те усă курать.

В. Синельников – Чăрăшкасси ял тăрăхĕнчи хисеплĕ çынсенчен пĕри. Вăл çичĕ медале тивĕçнĕ, çав шутран «60 лет освоение целинных земель», «Дети войны», «Ветеран труда», хисеп хучĕ, тав хучĕ те чылай.

Мăшăрĕпе, Екатерина Никифоровнăпа, вĕсем тăватă ача пăхса ӳстернĕ. Вĕсен вунă мăнук тата пĕр кĕçĕн мăнук. 2015 çулта вĕсем çемье çавăрнăранпа 50 çул çитнĕ. Çав çулхине Шупашкар хулинче Шупашкар районĕнчи ял старостисен пухăвĕнче Валентин Степановича Хисеп грамоти парса чысланă.

# Пĕрремĕш хут олимпиада ирттернĕ

**«Хаçатăн калем ăстисем» ярăма малалла тăсса паян Çырмапуç ял тăрăхĕнчи Чăрăшкасси ялĕнче пурăнакан Леонид Павлов пирки çырса пĕлтерĕпĕр.**



Л. Павлов

Леонид Павлов 1936 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Апаш ял советне кĕнĕ Чăрăшкасси ялĕнче колхозниксен çемйинче çуралнă. 1943 çулта ялти шкула çӳреме пуçланă, каярахпа Апашра, Кӳкеçре вĕреннĕ. 1954 çулхи сентябрьтен пуçласа çулталăк тăван колхозра вăй хунă. Салтак тумне тăхăнсан виçĕ çул Иваново хулинчи авиаци чаçĕнче службăра тăнă. Ултă уйăх кĕçĕн командирсем хатĕрлекен шкулта вĕреннĕ, радио-электромеханик тата телеграфист специальноçĕсене алла илнĕ. Виçĕ çулта командовани ячĕпе 17 хутчен Тав хучĕ килнĕ, икĕ хутчен 10-шар кунлăха тăван яла отпуска кайма тивĕçлĕ пулнă. 1958 çулхи августра Леонид Павлов килне таврăнать. Шупашкар районĕн çар комиссариачĕ ăна Апаш шкулне çар ĕçĕпе физвоспитани урокĕсене ирттерме ярать. 6 çул вăл хăйĕн тивĕçне тăрăшса пурнăçлать. Районта иртекен пур ăмăртура та Апаш шкул спортсменĕсем малтисен ретĕнче. Районта куçса çӳрекен 7 кубокран 5-шĕ – вĕсен аллинче. Çав вăхăтрах вăл Мускаври тренерсем хатĕрлекен тĕп шкула пĕтерет. 1963-1964 çулсенче тĕп хулари педагогика институтĕнче преподаватель-тренерте вăй хурать. 1964 çулхи февраль уйăхĕнче Ленинград çывăхĕнчи Кавголово хулинче пĕтĕм Раççейри пединститутсен студенчĕсен хушшинче иртнĕ ăмăртура аслă шкулти хĕрсен команди 3-мĕш вырăна тухать.

1964-1966 çулсенче Леонид Павлов Шупашкарти медицина училищинче ĕçлет. Çакăнти хĕрачасем йĕлтĕрпе чупса, пăшал персе, çăмăл атлетикăн нумай енĕпе республикăри ятарлă вăтам пĕлӳ паракан командăсен хушшинче çĕнтерӳçĕсен ретĕнче пулнă.

1964-1969 çулсенче Л. Павлов И.Н. Ульянов ячĕллĕ университетра вĕренсе историпе обществоведени учителĕ пулса тăрать. Республикăра иртекен нумай спорт ăмăртăвĕсене хутшăнать, йĕлтĕрпе чупса 1-мĕш разряд нормативне пурнăçлать, сăртран (слалом) ярăнас енĕпе икĕ хутчен 3-мĕш вырăн йышăнать.

1967 çултан пуçласа пенсие тухиччен Кӳкеçри 1-мĕш шкулта физвоспитани, çар ĕçĕ, истори, обществоведени урокĕсене ирттерет. Унăн шкулти ĕç пӳлĕмĕ темиçе хутчен те районти чи лайăх истори кабинечĕн ятне тивĕçнĕ. Унта ЧПУ-ра аслă курссенче вĕренекен студентсем яланах практикăра пулнă. Ăста вĕрентекен районти шкул директорĕсем, истори учителĕсем тата ытти педагог валли темиçе хутчен те усă уроксем ирттернĕ.

1984-1985 вĕренӳ çулĕсенче Леонид Павлович пуçарнипех районта истори предмечĕпе пĕрремĕш хут олимпиада ирттернĕ. Каярах çак пуçарăва Çутĕç министерстви пур çĕрте те сарма йышăннă. Ку тупăшусенче çĕнтерӳçĕ ятне Кӳкеç шкулĕнче вĕренекен ачасем те тивĕçнĕ. Вăл вĕрентнĕ 8 ача республикăри олимпиадăсенче çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. 20-е яхăн çамрăк паянхи куна истори учителĕн профессине суйласа унăн паха ĕçне малалла тăсаççĕ. Кӳкеçри шкулта Леонид Павлов класс ертӳçи пулса пĕрремĕш класран пуçласа тăватă ăрăва пурнăçăн анлă çулĕ çине кăларнă. Унăн класĕсенче вĕреннĕ пĕр ача та милици уйрăмĕнче учетра тăман.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-90-мĕш çулĕсенче Леонид Павлов ЧПУн истори уйрăмне кĕрес текенсем валли йĕркеленĕ экзамен комиссийĕн членĕсен йышĕнче темиçе хутчен те пулнă. Шупашкарти кооперации институтне вĕренме кĕрес текенсем валли усă курссенче лекцисем вуланă. Темиçе çул вăл районта истори учителĕсен пĕрлешĕвне ертсе пынă.



Тĕл пулу, 2015 ç

Аслă Çĕнтерÿ 40 çул тултарнă тĕле парти райкомĕ, районти çутĕç пайĕ Леонид Павлова Ĕçпе çар мухтавĕн музейĕн ĕçне йĕркелеме ыйтаççĕ. Икĕ уйăха яхăн ялсемпе шкулсем тăрăх çÿресе вăл паха материал пухать. Майăн 9-мĕшĕ тĕлне музей хăйĕн алăкне уçать. Унăн пуянлăхĕпе тĕплĕн паллаштарма вăлах аслă классенче вĕренекенсенчен экскурсоводсем хатĕрлет. Çак енĕпе Леонид Павлович паянхи кун та ĕçлет. Музей ĕçченĕсем каланă тăрăх, историк 600 ытла экспонат парнеленĕ.

Л. Павлов «Тăван Ен» хаçатпа 1946 çултанпа çыхăну тытать. Юлашки 30 çулта унăн страницисенче вăл çырнă 500 ытла статья пичетленнĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Республикин хисеплĕ таврапĕлÿçи район историне çупкăмăн-çупкăмăн пухас ĕçе пысăк тÿпе хывать. Çакăншăн Хисеп тата Тав хучĕсене те сахал мар тивĕçнĕ. 80 çул тултарнă аслă категориллĕ учитель, саппасри капитан тăван ялĕнчех пурăнать.

# Атăлъялăн хастар çыравçи

**«Тăван Ен» хаçатпа тачă çыхăну тытакан штатра тăман хастар корреспондентсенчен пĕри – Николай Васильевич Смирнов. Вăл 2014 çулта кăна 46 статья пичетлесе кăларчĕ. 2015 çулта та тухăçлă ĕçлерĕ. Паян, калемçĕсен професси уявĕ умĕн, вулакана унăн ĕçĕ-хĕлĕпе тата пултарулăхĕпе паллаштарасшăн.**


Н. Смирнов

Николай Васильевич Смирнов 1966 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Вăрман-Çĕктер ял тăрăхне кĕрекен Атăлъялта çуралнă. Ăна кукамăшĕпе амăшĕ пăхса çитĕнтернĕ. 1973-1981 çулсенче Кипечкассинчи 8 çул вĕренмелли шкулта ăс пухнă. 1981 çулта Сĕнтĕрвăрри хулинчи училищĕне вĕренсе пĕтерсе тракторист-машинист удостоверинине алла илсе çара кайиччен выранти хуçалăхра трактористра вăй хурать.

Николай Смирнов 1984-1986 çулсенче Германири Совет çарĕсен ушкăнĕнче службăра тăрать. Унта вăл артиллерист, аслă вычислитель, минометчик пулнă, çартан таврăнса выранти хуçалăхра механизатор-мелиораторта вăй хурать. Çамрăкăн малалла вĕренес туртăмĕ те вăйлă пулнă. Вăл 1987 çулта Мари республикинчи Йошкар-Ола хулинчи М. Горький ячĕллĕ политехника институтне вĕренме кĕрсе совхоз стипендиачĕ пулса тăрать. Çултален студентсен отрячĕн йышĕнче Мари республикинчи Илеть юханшывĕ урлă кĕпер хывнă çĕрте тăрăшать. 1992 çулта маларах асăннă институтран вĕренсе тухса аслă пĕлÿллĕ инженер-гидротехнике çитет. Хуçалăх стипендиачĕ пулнă май ĕçлеме тăван яла таврăнать. 1992-1995 çулсенче «Атăл» хуçалăхра трактористсен бригадирĕн пулăшуçинче (юсав мастерскойĕн ертÿçи) ĕçлет, каярахпа мелиораторсен бригадирĕнче тăрать. Тăван хуçалăхри пахча çимĕç лаптăкĕсене шăварса тăрас енĕпе пысăк тăрăшулăх кăтартать.

1990-1993 çулсенчи улшăнусем хыççăн çĕршыври ял хуçалăхĕ йывăрлăха кĕрсе ÿкет. Çавна май Николайăн та ĕç вырăнне улăштарма лекет. 1996-2002 çулсенче Вăрманкассинчи «Березовая роща» кану çурчĕн котельнăйĕнче операторта тимлет вăл. 2002 çултанпа Шупашкарти сĕт-çу комбинатĕнче хурал тытăмĕнче вăй хурать. Кунта вара алла калем тытма кирек хăçан та вăхăт тупăнать.

Николай Смирнов 2010 çултанпа «Тăван Ен» хаçатпа тачă çыхăнура. Шăпах çав вăхăтра Атăлъялта вăрçăран таврăнман салтаксене асăнса палăк уçаççĕ. Çавăн чухне çырас туртăм çуралать те: хастар автор алла ручка тытса çак пулăм пирки район хаçачĕ урлă пĕлтерме васкать. Николайăн амăшĕ — Анна Федоровна Смирнова – иртнĕ ĕмĕрĕн 70-80-мĕш çулĕсенче «Ленинец» ятпа тухса тăракан район хаçачĕн чи активлă ялкорĕ пулнă. Вăл 20 çул ытла рабочисем, совхозра вăй хуракансем, шкул ачисем тата Атăльялти сумлă çынсем çинчен çырса тăнă, вырăнта пулса иртекен обществăлла мероприятисене хастар çутатнă. Хуçалăхри бригадăра стена хаçачĕ кăларма сăн ÿкерчĕксем тунă. Ăста купăсçă пулнă май çамрăксемпе клубран-клуба çÿресе сахал мар концерт лартнă.

Николай Васильевич ку таранччен тĕрлĕ темăпа темиçе çĕр статья пичетлесе кăларчĕ. Унăн материалĕсем


Н. Смирновăн амăшĕ те, Анна Федоровна, штатра тăман автор пулнă

такăнмасăр вуланаççĕ. Вăл ытларах Вăрман-Çĕктер тăрăхĕнче вырнаçнă ялсенче пулса иртекен мероприятисене сăнласа пама кăмăллать. Çак ялсем хăйсен авалăхĕпе, чăваш халăх йăли-йĕркисене пăхăнса уявсем ирттерес тĕлĕшпе тухăçлă ĕçлеççĕ. Çак мероприятисене хатĕрленес ĕçе хай хутшăнни, вĕсем çинчен çиййĕнчех район хаçатĕнче статьясем пичетлесе кăларни Николай Смирновăн «оперативлă» ĕçне кăтартать. Калем ăсти хăйĕн материалĕсене сăн ÿкерчĕксемпе те пуянлатать. Çакă ун статйисен пĕлтерĕшне татах та ÿстерет. «Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕн тĕкĕрĕ» тесе калас килет çак публицист пирки. Мĕншĕн тесен вăл тимленипех ял тăрăхĕнчи мероприятисем çинчен район çыннисем çиййĕнчех пĕлеççĕ.

Николай Смирнов çыравçă ĕçне хастар туса пынипе пĕрлех ял хушшинче обществăлла ĕçрен те аякра юлмасть. 2010 çултанпа – Вăрман-Çĕктер ял тăрăх депутачĕ. Вăл малашне те халăхпа çыхăну тытса ырă пулăмсем çинчен пĕлтерсех тăрасса шанатпăр.

# Хаçатăн калем ăстисем

**Паянхи тĕрленчĕкре Антонина Захаровна Ефимова çинчен çырса кăтартасшăн. Унăн пĕрремĕш статйи 50 çул каялла пичетленнĕ.**

Антонина Ефимова 1949 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче ун чухне Ишлей районне кĕрекен Шинер Тăрăн ялĕнче çуралнă. Шкул çулне çитсен Тăрăнти тулли мар вăтам шкула ăс пухма çÿреме тытăннă. Ăна ăнăçлă вĕренсе пĕтерсен Ишек шкулне вĕренме кĕнĕ те 1966 çулта алла аттестат илнĕ. Вăл шкул саккинченех сăвăсем вулама, сочинени çырма килĕштернĕ, юрă-ташăпа туслă пулнă. Пиллĕкмĕш класранах вĕрентекен пулма ĕмĕтленнĕ, анчах амăшĕ çав тери хирĕç пулнă, хĕрачана ялтах ĕçлесе пиçĕхтересшĕн тăрăшнă.

Пĕлÿшĕн çунакан пике хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлама май тупатех. Телее, ял çумĕнчех кирпĕчрен купаласа ĕне тата пăру витисем хăпартма тытăнаççĕ. Антонина унта 2 уйăх патнелле вăй хурса 50 тенкĕ ĕçлесе илет. Тепĕр 30 тенкĕ амăшĕн юлташĕсенченех кивçен илсе Инçетри Вăтам Азие çул тытать. Унта чиперех çитсе ĕçе вырнаçать. Ку тăрăхра вырăс чĕлхине вĕрентекенсем çав тери кирлĕ пулнă. Вăтам пĕлÿллĕ кăна пулин те аслисем пулăшнипе, хăй тăрăшнипе казах, узбек, каракалпак ачисене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентме тытăнать. Çулталăкран вăл Т.Г. Шевченко ячĕллĕ Каракалпак патшалăх педагогика институчĕн филологи факультечĕн вырăс чĕлхипе литературин уйрăмне куçăмсăр майпа вĕренме кĕрсе 1972 çулта алла диплом илет.

1969 çулта Каракалпакра çĕнĕрен районсем йĕркеленеççĕ. Антонина Захаровнăна ВЛКСМ райкомĕн иккĕмĕш секретарьне суйлаççĕ. Çак ĕçре вăл 3 çул вăй хурать, В.И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа кăларнă медале тивĕçет.



А. Ефимова

Чăваш хĕрне тăван çĕршывах каялла туртать. Антонина Чăваш Ене каялла таврăнса 1972 çулта Толик Хураски шкулĕнче шкул директорĕн класс тулашĕнчи организаторла-массăллă ĕçĕсене туса пыракан çумĕнче ĕçлеме тытăнать. 1976 çулта пурнăç кустăрми ăна Тăрăнти 8 çул вĕренмелли шкула илсе çитерет. Паянхи кун та вăл çак шкулта ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. Малтан вăл директор ĕçĕсене пурнăçласа пынă, каярах директор çумĕн тивĕçĕсене, халĕ – вĕрентекен.

Тăрăнти шкулта ĕçлеме тытăнсанах Антонина Захаровна обществăлла ĕçе активлă хутшăнать. Ял совет депутачĕ пулнă май хăй вăхăтĕнче вăл Кучак Тăрăн тата Анаткас ялĕсенче шыв пăрăхĕсем хурассипе сахал мар вăй хурать. Анаткас Тăрăн, Чиркÿллĕ Тăрăн ялĕсенче пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе сахал мар тăрăшулăх кăтартать. Вăрманкас Тăрăн ялĕнче çĕнĕ шкул çурчĕ хута кайсан унпа юнашар Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕршыва хÿтĕлесе пуç хунă ентешĕсене асăнса палăк лартас енĕпе те пуçарулăх кăтартать. Паянхи кун та Антонина Ефимова обществăлла ĕçе хастар, вăл – Тăрăн енчи Хĕрарăмсен канашĕн ертÿçи.

Антонина Ефимован тепĕр ырă тĕслĕхне асăнмасăр иртсе кайма май çук. Вăл чирлĕ çынсене пулăшас тĕллевпе пĕтĕмпе 27 хут юн панă. Ăна çакăншăн I, II, III степеньлĕ «Донор СССР» значоксене парса чысланă.

Антонина 1977 çулта Кучак Тăрăн каччипе Михаил Ефимовпа çемье çавăрнă, пĕр хĕр ÿстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Шел, ун мăшăрĕ 30 çул пĕрле пурăннă хыççăн çут тĕнчерен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă.

Хаçатпа çыхăну тытас туртăм та Антонинăн шкул саккинченех пуçланнă. Унăн пĕрремĕш заметки 1965-мĕш çулхи майăн 9-мĕшĕнче «Ленинец» хаçатра пичетленнĕ. Антонина Захаровна темисем пĕр енлĕ кăна мар. Вăл кивĕ сăн ÿкерчĕксемпе усă курса ял-йыш, пускил çинчен çырса кăтартма кăмăллать, çутçанталăкри пулăмсене те манăçа хăвармасть. Ачасемпе ĕçленĕ май воспитанипе çыхăннă ыйтусем те уншăн ют мар. Лайăх, кăмăллă, ĕçчен çынсем çинчен каласа пама тăрăшать. Вĕсен йышĕнче механизатор, доярка, рабочи, çĕр ĕçченĕ, учитель, выльăх тухтăрĕ, медицина ĕçченĕ, паллах, ĕçпе вăрçă ветеранĕсем. Вăл шкулта ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет пулин те яланах «Тăван Ен» хаçата чăвашла статьясем çырать. Ку вара Антонина Ефимова тăван чĕлхене хисепленине пĕлтерет.

Антонина Ефимова Ĕç ветеранĕ, «Тăван Ен» хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ. Тăрăн тăрăхĕнчи ят-сумлă хĕрарăмсенчен пĕри. Унăн килти архивĕнче мухтав тата хисеп хучĕсем чылай упранаççĕ.

# Чаканар ялĕнчи çыравçă

**Сăмахăм халĕ Чаканар ялĕнче пурăнакан 75 çулхи Анатолий Александрович Лепин пенсионер пирки пырать. Вăл 2011 çултан «Тăван Ен» хаçата обществăлла майпа хастар çырса тăракансенчен пĕри.**

Анатолий Александрович 1941 çулхи июнь уйăхĕн 12-мĕшĕнче Ишлей районне кĕрекен Чаканар ялĕнче колхозник çемйинче çуралнă. Унăн ачалăхĕ вăрçă тата ун хыççăнхи йывăр çулсенче иртнĕ. Ашшĕпе амăшĕ ялти ятлă, сумлă çынсен йышĕнче шутланнă. Ашшĕ, Александр Лепин, вĕреннĕ çын пулнă, 1917 çулта Ишекри чиркÿ-прихут шкулне вĕренсе пĕтернĕ. Аталанса пынă май, Мăнал (Янгильдино) волоç кантурĕнче писарь пулса ĕçленĕ. Каярахпа ăна Мăнал волисполкомĕн секретарĕ пулма суйланă. Çак ĕçре вăл 1927 çулччен Шупашкар районĕ йĕркелиниччен, ĕçленĕ. Вăл вăрçă участникĕ, ăна Ленинграда хÿтелĕсе çапăçнăшăн «За отвагу», «За боевые заслуги» медальсемпе наградăланă. Амăшĕ – Феодосия 1905 çулта Шоркка ялĕнче кун çути курнă. Вăл çав вăхăтсенче аталаннă

хĕрарăм пулнă, 1936 çулта Чулхулара колхозник-ударниксен съездне делегат пулса хутшăннă, трибуна çинчен тухса та калаçнă. Унтан Чăваш Республикин делегачĕсемпе пĕрле ВЦИК председателĕ М.И. Калинин патĕнче приемра пулнă.

Анатолий Лепин ачаллах (6 çултан пуçласа) ашшĕ амăшне хуçалăхри ĕçсемпе пулăшнă. Тырă вырнă, çĕрулми пуçтарнă, лаша пăхнă. Çуллахи каникулта колхоз ферминче вăй хунă. Хĕл кунĕсенче ашшĕ амăшне чăпта çапма пулăшнă.

Анатолий вăрçă çулĕсенче йывăр условисенче ӳснине пула час-часах чирленĕ. Апла пулин те вăл хăйĕн сывлăхне çирĕплетес тĕлĕшпе сахал мар тăрăшнă. Шкулта вĕреннĕ чухне ялти ачасемпе çуллахи вăхăтра волейбол вылянă, хĕлле йĕлтĕрпе ярăннă. Сывлăха çирĕплетсе пынă май, шкулти тата районти спорт соревнованийĕсене активлă хутшăннă. Вăл 1958 çулта Ишекри вăтам шкул командине кĕнĕскер, районти соревнованинче диск, граната ывăтас тата сикес тĕлĕшпе район чемпионĕ пулса тăнă. Шкулта яланах чи активлă комсомолец-общественник, стена хаçатăн редколлегийĕн членĕ пулнă.

1959 çулта Анатолий Александрович Чăваш ял хуçалăх институчĕн зоотехник уйрăмне вĕренме кĕрет. Студент çулĕсенче те спорта пăрахмасть. Ял хуçалăх институтне вĕренсе пĕтерсен тăван яла, Чаканара, таврăнать. Унта пулă питомникĕн директорĕ пулса ĕçлет. Арçын тивĕçне пурнăçласа 1965-1966 çулсенче çар службинче тăрать. Çартан таврăнсан Шупашкар районĕнчи «Герой» колхозра тĕп зоотехник ĕçне кӳлĕнет.

1970 çулта Анатолий Александровичăн пурнăçĕнче пысăк улшăну пулса иртет. 1970 çулхи январь уйăхĕнче хăйĕн ĕçри малашлăхне Шупашкарти «Чувашкабель» заводпа çыхăнтарать. Çакăнта мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччченех вăй хурать. Ĕç картлашкипе хăпарса мастертан пуçласа кадрсен директорĕн çумĕ таранах ӳссе пырать.



А. Лепин

2011 çултанпа вăл «Тăван Ен» хаçатпа çыхăну тытма пуçлать. Хăйĕн материалĕсенче тăван Чаканар тата çывăхри ялсенче пурăнакан ятлă-сумлă çынсем çинчен, иртнĕ вăрçа хутшăннисем çинчен каласа парать. Ытларах аваллăхри пулăмсем çинчен тата вăл вăхăтри çынсем çинчен аса илӳсемпе паллаштарать. Çакăн пек материалсен шутне 2013 çулта пичетленнĕ «Кăрăш йăхĕ», 2014-мĕшĕнче «О реке Ошнауши» материалсем кĕреççĕ. Ун статйисем анлă содержаниллĕ, пысăк калапăшлă, çăмăл вуланаççĕ. 2017 çул пуçламăшĕнче «Мятеж в Янгильдино» историллĕ очерк пичетленсе район хаçатне татах та пуянлатрĕ, вулакансене тĕлĕнтерчĕ те, савăнтарчĕ те.



# Автор çинчен



Ф. Константинов

**Кĕнеке авторĕ Фадей Константинович Константинов 1929-мĕш çулхи август уйăхĕн пĕрремĕшĕнче хальхи Сарапакасси ял тăрăхне кĕрекен Сарпак ялĕнче çут тĕнчене килнĕ. Çав çулах унăн амăшĕ яланлăха пурăнма Кипеккасси ялне куçса кайнă. Фадей мĕн çуралнăранпах ашшĕсĕр ӳснĕ. Вăл Ишекри вăтам шкула, Чăваш совпартшкулне, Чăваш ял хуçалăх институчĕн агрономи факультетне вĕренсе пĕтернĕ. 1949-мĕш çултанпа район хаçачĕпе çыхăну тытать.**

Ĕçе вăл 12 çултанпах кӳлĕннĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи тата каярахри çулсенче тăван колхоза ял хуçалăх ĕçĕсене туса ирттерме пулăшнă. 1947-мĕш çулта Ишлей районĕнчи Кипеккасси ялĕнчи «Гвардия» колхозра ĕçлеме тытăннă. 1948-мĕш çулта ăна колхозри комсомолецсем ертӳçĕ пулма суйлаççĕ.

Фадей Константинович Константинов 1950-1960 çулсенче – культура ĕçченĕ. Малтанхи 7 çул хушшинче Ишекри клуб, каярахпа культура çурчĕн ертӳçи. Çак çулсенче пуçланать те унăн обществăлла ĕçре пиçĕхесси. Вăрçă хыççăнхи çулсенче культурăллă-массăллă ĕçе аталантарса кирлĕ шая хăпартас енĕпе тимлĕх кăтартса ĕçлет. Ăна Ишекри «Сталинская гвардия» колхозри комсомолецсем темиçе çул хушши комсомол комитечĕн секретарĕ пулма суйлаççĕ. Ун чухне Фадей Константинов ертсе пыракан комсомол организацийĕ Ишлей районĕнче кăна мар, республика шайĕнче те малтисен ретĕнче пулнă. Тен, çавна пулах Ф. Константинов комсомолец республикăри комсомол организацийĕн XIX, XX, XXI конференцийĕсене делегат пулса хутшăннă.

Çав вăхăтрах вăл тепĕр обществăлла ĕçе кӳлĕнет. Республикăра тухса тăракан «Çамрăк коммунист», «Коммунизм ялавĕ», хаçатсемпе тата «Капкăн» журналпа тачă çыхăну тытать, статья хыççăн статья пичетлесе кăларать, Ишлей район хаçачĕн активлă штатра тăман корреспонденчĕ пулса тăрать. 1957-мĕш çулта республикăри рабочисемпе хресченсен ялти корреспондентсен съездне делегат пулса хутшăнать. Унта ăна республикăри пичет ĕçне активлă хутшăннăшăн Чăваш АССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе чыслаççĕ. Активлă ялкор 1958-мĕш çултах СССР журналистсен членĕ пулса тăнă.

1960-1962-мĕш çулсенче Ф. Константинов КПСС райкомĕн бюровĕ сĕннипе Чăваш партшкулĕнче вĕренсе пĕлӳ илет. 1962-мĕш çулта кĕçĕн агроном-организатора Ишекри «Сла-

ва» колхозăн ял хуçалăх специалисчĕ пулма çирĕплетеççĕ, колхоз ертӳçин çумĕ пулма шанаççĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче «Слава» колхоз обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес, уй-хирте туса илекен продукцин калăпăшне нумайлатас, строительство ĕçĕсене анлăн туса пырас тĕлĕшпе ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăвать, малта пыракансен шутне кĕрет. Паллах, çак ӳсĕмсенче Фадей Константиновăн та тӳпи сахал мар. 1967-мĕш çулта ăна ял хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕшĕн «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе чысласçĕ, «РСФСР ял хуçалăх социализмлă ăмăрту отличникĕ» паллăпа наградăлаççĕ. Икĕ çул хушши 1957-1958 çулсенче вăл «Чăваш Республикин вăйлă тыр-пул хастарĕ» ята тивĕçет.

«Слава» колхозра вăй хунă çулсенче те унран обществăлла ĕç пăрăнса иртмест. Ăна ĕçлеме пуçланă пуçламанах колхозри коммунистсем партбюро секретарьне суйлаççĕ. Ишек ял совет, район совечĕн депутачĕсем пулса унăн сахал мар ĕç туса ирттерме тивет. Колхозра ĕçленĕ çулсенче те хаçатсене час-часах çырса тăрать, пĕр çул облаçри парти конференцине делегат пулса хутшăнать.

Малашнехи çулсенче те Ф. Константинов халăх ĕçĕнче тимлет. Вăл 1969-1980 çулсенче «Слава» совхозри (1969-мĕш çулхи февралĕн 6-мĕшĕнче Ишекри «Слава», Мăн Маркари Ульянов ячĕпе хисепленекен тата Чаканарти «Урожай» колхозсене пĕрлештерсе «Слава» совхоз туса хунă) парти комитечĕн секретарĕ, 1970-1990-мĕш çулсенче – Ишек ял Совет ĕçтавкомĕн председателĕ. Фадей Константинович «Слава» совхозра ĕçленĕ çулсенче ку хуçалăх пахча-çимĕç туса илес енĕпе чылай аталанать, çĕр лаптăкĕ 50 гектартан пуçласа 450 гектара çитет. Пултаруллă ĕçчен тĕрлĕ наградăсемпе грамотăсене тивĕçет, партин облаçри XXXVI конференцине делегат пулса хутшăнать.

Ф. Константинов Ишек ял Совет ĕçтавкомĕн председателĕнче те хăйĕн ĕçне чун чĕререн парăнса ĕçлет. Ахальтен мар пулĕ вăл ертсе пыракан Ишек ял Совечĕ социаллă-экономика аталанăвĕнче районта кăна мар, республикăра та малти вырăнсене йышăннă. Темиçе хутчен те Чăваш Республикин Министрсен Совечĕн Хисеп хучĕсене тивĕçнĕ.

Çав çулсенче те Фадей Константинович хăйĕн тĕп ĕçне пурнăçласа пынипе пĕрлех обществăлла ĕç çинчен те манман. Чылай çул хушши Ишлей райповĕн уполномоченнăйĕн тата ревкомисси председателĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пынă. Хаçата çырса тăрассине те манăçа хăварман.

Тивĕçлĕ канăва тухсан Фадей Константинович çичĕ çул хушши Ишекри краеведени музейĕнче методист пулса ĕçлет, тăван тăрăхăн аваллăхне пĕлсе халăх патне çитерме тăрăшать. Район хаçатне те статья çырса тăрать, кĕнеке кăларма материалсем пухать. Унăн пĕрремĕш статьи 1949 çулта Ишлей районĕнче тухса тăракан «Колхозник хаçачĕ» кăларăмра кун çути курать. Унтанпа вăл 68 çул хушшинче тĕрлĕ изданисенче икĕ пин ытла информаци, статья, тĕрленчĕк, очерк пичетлесе кăларнă. Вăл Шупашкар районĕнчи таврапĕлӳçĕсенчен чи активлисенчен пĕри, республикăри журналистсен юхăмĕн ветеранĕ. Унăн 1958-мĕш çулта «Капкăн» журналта «Арпа пуç» ятпа сатирăллă пьеса пичетленнĕ, каярахпа ăна «Капкăн» библиотекинче те кун çути кăтартнă. Фадей Константинов пилĕк кĕнеке авторĕ. 2000-мĕш çулта Кӳкеçри издательство çуртĕнче «Ишек тăрăхĕнче» ятпа унăн пĕрремĕш кĕнеки, çакăнтах 2003-мĕш çулта иккĕмĕш кĕнеки пичетленет. 2011-мĕш çулта «Кӳкеçпе Ишек тăрăхĕнче» ятпа, 2013-мĕш çулта «Сторона моя Ишакская» ятлă виççĕмĕшпе тăваттăмĕш кĕнекисем пичетленсе тухаççĕ. 2015 çулта Литература çулталăкĕнче, «Тăван Ен» хаçатăн калем ăстисем» ятпа пиллĕкĕмĕш кĕнеки пичетленет. Ку таранччен Фадей Константинов çыравçăн халăх хушшинче 1500 экземпляр кĕнеке сарăлать. Вăл Шупашкар районĕн хаçачĕн чи хастар çыравçисенчен пĕри. 68 çул хушши район хаçачĕпе тачă çыхăну тытать. Вăл ăста çыравçă, пысăк опытлă таврапĕлӳçĕ, Ишек тăрăхĕнче кăна мар, Шупашкар районĕнчи ятлă-сумлă çын.

Чăваш Республикин хисеплĕ таврапĕлӳçи, Шупашкар районĕн Хисеплĕ гражданинĕ, Чăваш халăх академийĕн академикĕ, Ĕç ветеранĕ, Тыл ĕçченĕ, Чăваш писателĕсен пĕрлешĕвĕн членĕ, сакăр медаль, çирĕм тĕрлĕ Мухтав тата Хисеп хучĕсен хуçи.

Фадей Константинович 1956 çулта çемье çавăрнă. Марина Максимовнăпа пилĕк ача ӳстернĕ. Мăшăрĕ вăхăтсăр çĕре кĕнĕренпе тăватă çул ĕнтĕ тăван килĕнче пĕчченех пурăнать.

Ашшĕ патне ачисем килсех çӳреççĕ. Аслă хĕрĕ Светлана Çырмапуç ял тăрăхне кĕрекен Чăрăшкасси ялĕнче, Сергей ывăлĕ тата Дина кĕçĕн хĕрĕ Кӳкеçре пурăнаççĕ. Вăталăх хĕрĕсем Надя Чаканар ялĕнчен, Рена Кăрмăш ялĕнчен тăван яла тăтăшах килсе çӳреççĕ.



**Чăваш республикинчи комсомолецсен XXII конференцийĕнче Ишлей комсомол организацийĕн делегачĕсем. Декабрĕн 1-мĕшĕ, 1955 çул. Фадей Константинов иккĕмĕш ретре сылтăмран иккĕмĕшĕ**

# Пĕтĕмлетсе калани

**Хисеплĕ вулаканăм! «Тăван Ен» хаçата çырăнса илекен тăванăм!**

*Эсир кĕтнĕ кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Çак кĕнекене кăларма материал пухса хатĕрлес тĕлĕшпе тĕрлĕ çăлкуçсемпе, архив материалĕсемпе тата хам аса илнисемпе усă куртăм пулин те, чи кирлĕ материала шыраса тупма çăмăлах пулмарĕ. Çав хушăрах пулăшакансем те тупăнчĕç.*

*Пĕрремĕш пулăшăва район хаçатĕнче редакторта ĕçленĕ В.П. Петровăн тăванĕ, Лидия Анатольевна Григорьева кӳчĕ. Вăл Василий Петровичăн ĕç кĕнекине, çар билетне тата В. Виноградовăн «Анкарти хысĕнчи «Сирень» ятлă кĕнекине шанса панине кура 1959-1962 çулсенче район хаçатĕнче ĕçленĕ В. Петров çинчен анлăн çырса кăтартма пултартăм.*

*Пулăшакансем татах та тупăнчĕç. 1995-2002 çулсенче район хаçачĕн редакторĕ пулнă Ю.П. Листопад та пулăшрĕ. Вăл хăйĕн çинчен каласа паракан материалсемпе тивĕçтернипе пĕрлех ытти редактор çинчен материалсем шырамалли майсене кăтартрĕ. Çапла ман ĕç чылаях çăмăлланчĕ.*

*Юрий Петрович сĕннипе район хаçатĕнче чылай çул ĕçленĕ Г.С. Мальцевăн Олег Мальцев ывăлĕпе, хăй вăхăтĕнче редакторта ĕçленĕ И.М. Михайловăн Зоя Петровна мăшăрĕпе, В.Т. Сорокинăн мăшăрĕпе Полина Алексеевнăпа, куçа-куçăн курса калаçни те питĕ усăллă пулчĕ. Çавăн пекех Б.Б. Чиндыковпа тӳррĕн калаçни те ăнăçу кӳчĕ.*

*«Тăван Ен» хаçачĕ çинчен материалсем шыраса тупма районти учрежденисенче ĕçлекенсем те пулăшрĕç. Вĕсен шутĕнче район администрацийĕн архив ĕçĕсен уйрăмĕн ертӳçи И.Г. Корнилова, районти тĕп библиотекăн краеведени пайĕн заведующийĕ С.В. Иванова.*

*Шыраса тупнă материалсене пичете хатĕрлеме пулăшакансем те тупăнчĕç. Паянхи «Тăван Ен» хаçатăн редактор тивĕçĕсене пурнăçласа пыракан В.А. Вышинская, хаçат корреспонденчĕ В.Ф. Шумилова, хаçат дизайнерĕ М.А. Иванова пухнă материалсене пичете хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттерни, кĕнеке авторне тем пек пулăшу пулчĕ.*

*Хăй вăхăтĕнче район хаçатĕнче фотокорреспондентра ĕçленĕ Г.В. Семенов тата районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçинче нумай çул ĕçленĕ Л.П. Пахомов панă сведенисем те усăллă пулчĕç.*

*Район хаçачĕн юбилейне халалласа «Тăван Ен» – 85 çул халăхпа пĕрле» ятпа пичетленсе тухнă кĕнекене кăларма мана пулăшакансене пысăк тав сăмахĕ калатăп. Ĕçлекенсене ĕçре ăнăçу сунатăп, ветерансене – канлĕ ватлăх пултăр!*

**Кĕнеке авторĕ**
**Фадей Константинов**



# Усă курнă литература, материалсем

«Колхозник çулĕ» – «Тăван Ен» 70 çул. Кӳкеç, 2002 ç.
«Журналисты Чувашии». Чувашское книжное издательство, 2003 г.
«Городские и районные газеты». Чувашское книжное издательство, 2007 г.
«Энциклопедия Чувашской журналистики и печати». г. Чебоксары, Союз журналистов Чувашской Республики
«Энциклопедия Чебоксарского района». Том I, г. Чебоксары, 2014 г.
«Ишекпе Кӳкеç тăрăхĕнче». Кӳкеç, 2011 ç., Ф. Константинов
«Тăван Ен» хаçатăн тĕрлĕ çулсенчи подшивки.



Редакци ĕçченĕсем субботникре










Хаçат – район тĕкĕрĕ



# Тупмалли


Истори пĕр йĕрсĕр иртмест... 4
Кӳкеç типографийĕ – район хаçачĕн тĕрекĕ 15
Вĕсем – хаçат чысĕ, мухтавĕ 20
Пĕрремĕш редакторăн паттăрла вилĕмĕ 21
Граждан вăрçинчен алăсăр таврăнсан та... 22
Вăрçăран таврăннă редактор 23
Партипе комсомол ĕçĕнче пиçĕхнĕ ертӳçĕ 25
Хавхалантаракан редактор 26
Кенаш мучи 27
Çĕннине шыраса 29
Вĕрентекен те, çыравçă та 31
Парти ĕçĕнчен – хаçат ертӳçине 32
Ята улăштарнă редактор 34
«Сассине нихçан та хăпартмастчĕ...» 36
Çыравçă та, полиграфист та 38
Ăста журналист, профессиллĕ репортер 39
«Хыпартан» «Тăван Ен» редакторне 41
Çыравçă та, драматург та... 42
Пĕрремĕш хĕрарăм-редактор 43
Ертӳçи мĕнле – коллективĕ те çапла 45
Енерхи чи çамрăк ялкор, лауреат – паян редактор 48
Хаçат ĕçтешĕсем – район летописçне тăсакансем 49
«Тăван Енпе» – çур ĕмĕр ытла 51
Уншăн пур тема та шăл çемми 53
Çырас туртăм çĕнтернĕ 54
Емĕтне пурнăçланă 56
Çамрăк журналист 57
Кашни номер «пепке» евĕр... 58
Сайт – хаçат пепки 60
Ялкорсем – хаçата пуянлатакансем 61
Унăн ачалăхĕ тертлĕ те нушаллă пулнă 63
Чăвашла та, вырăсла та хастар çыракан маçтăр 64
Сăн ӳкерекен те, çыравçă та 65
Педагог та, общественник та 67
Чăрăшкассинчи хастар общественник 68
Пĕрремĕш хут олимпиада ирттернĕ 70
Атăлъялăн хастар çыравçи 72
Хаçатăн калем ăстисем 74
Чаканар ялĕнчи çыравçă 75
Автор çинчен 77
Пĕтĕмлетсе калани 80
Усă курнă литература, материалсем 81

**Константинов Фадей Константинович**

# «Тăван Ен» – 85 çул халăхпа пĕрле

# «Таван Ен» - 85 лет с народом

На чувашском языке

Подписано в печать 23.05.2017.
Печать офсетная. Гарнитура Тёмен
Уч. печ. лист 5,25. Тираж 200. Заказ № 355.
Отпечатано в ООО «Своя типография»
г.Чебоксары, ул.Текстильщиков, 8.
Тел.: 8-903-345-33-47